М. И. Мадюкова

# *ЫРĂ ВĂРЛĂХ АКАС ТЕРĔМ…*

(Ĕç опытĕнчен)

Меслет кăтартăвĕсем

ШУПАШКАР
2021

УДК [373.5.016:821.512.111](075.3)
ББК 74.268.39(=635.1)-ОЯ721-1
М132

Мадюкова, М.И. Посеем добро в детские души... Из опыта работы / М.И. Мадюкова. – Чебоксары : ООО «Своя типография», 2021. – 134 с.

**Рецензентсем:**

**Г.Л. Никифоров,** Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, Чăваш наци конгресĕн вĕренӳ комитечĕн ертӳçи;

**Н.Н. Осипов –** филологи наукисен кандидачĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн вырăс тата чăваш чĕлхисен кафедрин доценчĕ.

Кĕнекере Раççĕй Федерацийĕн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕн Хисеплĕ ĕçченĕн, Чăваш Республикин Патăрьел районĕн Çĕньялти Г.Н. Айхи ячĕллĕ тĕп шкулĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕн М.И. Мадюковăн тăван литературăпа культурăна вĕрентес ĕçри çĕнĕлĕхĕсемпе çыхăннă уроксемпе класс тата шкул тулашĕнчи мероприятисен анлă планĕсемпе конспекчĕсем, меслет кăтартăвĕсем вырăн тупнă.

© Мадюкова М.И., 2021

# МАЛТАН КАЛАНИ

«Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă – çакна пĕлсе тăрăр, ун пек ĕçе юратăр. Чăн пĕчĕккĕ ĕçе те пит пикенсе, юратса ĕçлĕр. … Юратса тусан, чи пĕчĕкçĕ ĕçе те чаплăлантарса яма, усă паракан тума пулать; ӳркенсе ытахальтен анчах ĕçлесен, чăн пысăк ĕç те пăрахăçа тухать, хисепрен каять. Лăпкă чунпа килĕшсе ĕçленĕ пур ĕç те телейлĕ пулать, ăнса малалла пырать», - тенĕ И.Я. Яковлев Чăваш халăхне панă халалра. Çак сăмахсене аслă патриархăмăр пур професси çыннисене те халалланă, апла пулсан та вăл темшĕн вĕрентекенсене, уйрăмах тăван чĕлхепе культурăн палăруллă енĕсене çамрăк ăрăва вĕрентекенсене çывăх туйăнать. Мĕншĕн тесен кирек хăш халăх та тĕнчене чи малтан тăван чĕлхе урлă тухать, анне чĕлхи пурнăç илемне туйма, çутçанталăк асамлăхне туйма, тăван çĕре юратма, хисеплеме вĕрентет. Çаксене ашшĕ-амăшĕпе пĕрлех шкул çулĕсенче тăван чĕлхепе литературине вĕрентекенĕ те пурнăçласа пырать. Учитель вĕрентӳпе воспитани ĕçне илемлĕ литература хайлавĕсем, унти илемпе сăнарлă шухăшлав, кăмăл-сипетпе сапăрлăх урлă пуянлатса пырать. Çавăнпа та тăван чĕлхепе литератури, тăван ен культурин предмечĕсем çитĕнекен ăрăва тăван халăх, ен, çĕршыв пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтаракан дисциплана пулса тăрать.

Пурнăçран юлас мар тесен тăван чĕлхепе литературине вĕрентес ĕçре-хĕлре те яланах çĕннине шырама, иртнине шĕкĕлчеме тивет. Вĕрентӳçĕ вăл яланах шыравра.

Вĕрентӳ процесĕн чи паллă енĕсенчен пĕри вăл – ачасен пĕлĕвне пур енлĕн аталантарса пырасси. Ку ĕçе пурнăçлама тивĕçлĕ мелсемпе хатĕрсем кирлĕ. Вĕсенчен пĕри вăл – вĕрентекен учебникри вĕрентӳпе меслетлĕх хатĕрĕсене хăйĕн пурнăç опытĕнчен, тăван ял, тăрăх ĕçĕ-хĕлĕн палăруллă енĕсемпе çыхăнтарнă уçă е анлă уроксем йĕркелесси. Тăван чĕлхепе литературине вĕрентнĕ май пултаруллă, мал ĕмĕтлĕ вĕрентекен вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ-хĕлĕнчи пур пулăмпа ене те ĕçе кӳлет. Çавăн пек тусан кăна вĕренекенпе вĕрентекен, шкулпа çемье, педагогпа ашшĕ-амăшĕн çураçуллă хутшăнăвĕ патне килсе тухма пулать. Кун евĕр килĕшĕве тупма учитель пултарулăхĕ, тавракурăмĕ, тĕнчекурăмĕ, унтан ытла хăй ĕçне чунтан юратса пурнăçлани май парать. Программăри кашни урока, темăна май килнĕ таран ачасен асĕнче юлмалли мелсемпе

усă курса ирттермелле. Шăпах çавăн пек йĕркеленĕ уроксемпе класс, шкул тулашĕнчи мероприятисен анлă планĕсемпе конспекчĕсем вырăн тупнă Раççĕй Федерацийĕн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕн Хисеплĕ ĕçченĕ Патăрьел районĕнчи Çĕньялти Г.Н. Айхи ячĕллĕ тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Мария Ильинична Мадюковăн „Ырă вăрлăх акас терем... Ĕç опытĕнчен“ кĕнекене.

Мария Ильинична пурнăçне çамрăк ăрăва вĕрентес ĕçе парнеленĕ. Вăл 40 çул ытла çак пархатарлă ĕçре тăрăшса пысăк опыт пухнă вĕрентекен-тĕпчевçĕ, шыравçă, таврапĕлӳçĕ, ертӳçĕ. Çавăнпа та кĕнекери вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн анлă планĕ-и, уйрăм темăна вĕрентме хатĕрленĕ план-конспект-и, тăван чĕлхепе литературин паллă деятĕлĕсемпе паллаштаракан мероприятисемпе каçсен, тĕлпулусемпе вулавсен сценарийĕсем-и – пурте тăван чĕлхепе литературин, тăван ен культурипе историне паянхи вĕрентĕвен çитĕнĕвесене тĕпе хурса йĕркеленĕ тĕслĕхлĕ хатĕрсем.

Кĕнеке «Ачасене çын пулса çитĕнме пулăшакан предмета – литературăна вĕрентес система» ятлă эссерен уçăлать. Ăна автор районти смотр-конкурс валли хатĕрленĕ пулнă. Унта – ачасемпе уйрăммăн тата вĕсен çитĕнĕвĕсемпе, ӳсĕмне (возраст), пултарулăхне шута илсе ĕçлемелли çул-йĕр пирки сăмах пырать. Çавна май шкул çулĕсенчех вĕренекенсене хăйсен пулас профессине суйласа илме вĕрентесси çине те пысăк тимлĕх уйăрмаллине пусăм тăвать. Кăна М.И. Мадюкова Санкт-Петербург хулинчи 84-мĕш шкулти литература учителĕн Ильин Евгений Николаевичăн ĕç опычĕпе паллаштарнă майăн туса пырать. Е.Н. Ильин педтехнологийĕн системин хăйне евĕрлĕхĕ çакăнта: вăл литература урокне пысăк искусство пек курса вĕрентет, çавăнпа пĕрлех кăмăл-сипет тата илемлĕхпе йĕркелĕх концепцийĕсене тĕпе хурса кашни вĕренекене çын пулса çитĕнес çул çине тăратать. Мария Ильинична та çак педтехнологине тĕпе хурса ĕçлени унăн кĕнекене кĕнĕ ытти урок планĕсемпе коспекчĕсенче яр уççăн курăнать.

Кĕнекене кĕнĕ материалсене тăвата сыпăка уйăрса ушкăнланă. „Уçă урок план-конспекчĕсем“ сыпăкра чăваш сăмахлă культурин анинче паллă йĕр хăварнă авторсемпе – А. Артемьев, И. Яковлев, Ухсай Яккăвĕ, П. Осипов, И. Лисаев, вĕсен хайлавĕсене вĕрентес ĕçри çĕнĕлĕхсемпе çыхăннă уроксен тулли план-конспекчĕсем вырăн тупнă. Çавăнтах „Ача-пăча сăмахлăхĕ“, „Ачасене пăхса ӳстересси“ т.ыт. тема-проблемăсен тишкерĕвĕпе паллашма май пулать. Вĕсенче

пуринче те шкул программи ыйтни çеç мар, новатор учитель пултарулăхĕ тапса тăрать. „Статьясемпе рецензисем“ сыпăка учитель-краевед тăван тăрăхри обществăлла ĕç-хĕлĕн палăруллă саманчĕсемпе çыхăннă материалсем кĕнĕ. Тăван ял шăпи унта пурăнакана халăх кун-çулĕпе тачă çыхăннине ĕнентерсе панă.

„Сценарисемпе, литературăпа музыка композицийĕсем, чăваш чĕлхипе литератури эрнисен планĕсем“ сыпăк та кăсăклă, тĕслĕхлĕ ĕçсемпе пуян. Г. Айхи вулавĕсем, Чăваш чĕлхин кунĕсем, Ваттисене сума суса вĕсен умĕнче пуçа таймалли самантсен сценарийĕсем пурте тăван чĕлхепе литературине вĕрентекенĕ шкул учителĕ кăна мар, ял, тăрăх, район пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне тĕплĕн пĕлсе, курса тăракан чăн-чăн вĕрентекен пулни курăнать. „Тăван çĕре юратса“ ятлă Патăрьел районĕ тăрăх туристсен, краеведсен çул-çӳревне тухмалли маршрут ăнăçлă пулса тухнă опытсенчен чи курăмли. Унта таврапĕлӳпе шкул, вĕрентӳ, воспитани, кăмăл-сипетпе сапăрлăх енĕсем пĕр тĕвве чăмартаннă.

Вĕренĕве пурнăçпа, халăха усăллă ĕçпе çыхăнтарни, воспитанире сăмахпа çеç мар, мĕнпур комплекслă майсемпе усă курни паха пулăм. Пурнăç юхăмĕ класри ĕçрен класс тулашне те тухма хистет. Литературăн шкул тулашĕнчи витĕмлĕ майĕсем нумай. Вĕсенчен чи паллăраххисем - краеведени çул çӳревĕсем, шыравĕсем, тĕпчевĕсем. Краеведени вăл - вырăнти историе, географие тата культурăна тĕпчесе пĕлни тенине пĕлтерет. В. Бианки каланă тăрăх, краевед вăл - чи малтанах тĕпчевçĕ, хăйне евĕр пĕчĕк Колумб. Вăл хăйĕн тăван тавралăхне çав тери юратать, çакă вара ăна тăван енри вăрттăнлăхсене уçса пама пулăшать, ахаль çынсем курман енсенех тупса палăртма май парать.

Краеведени ĕçĕ ачасенче патриотлăх туйăмне аталантарать, вĕсен тавракурăмне сарать, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма ыйтать. Çавăн пекех ачасем çынсен хутшăнăвĕсене тарăнрах ăнкарма пуçлаççĕ, тĕрлĕрен фактсене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхса хăшĕ тĕрĕс пулнине суйласа илме вĕренеççĕ. Çакă литературăри тĕп туртăмсене пăхса тухнă вăхăтра, пĕр-пĕр çыравçă пултарулăхĕ литература аталанăвĕн историйĕнче еплерех вырăн йышăннине кăтартнă чухне çав тери кирлĕ. Писатель пурăннă, çуралса ӳснĕ вырăнсемпе тĕплĕнрех паллашни, вăл ăçта-ăçта çитсе курнине сăнани ачасене пĕр-пĕр хайлава тарăнрах ăнланма пулăшать.

Çавăн пекех ачасем литература произведенийĕ мĕнлерех çыраннине хăйсем шыраса тупнă фактсемпе те çирĕплетме пултараççĕ. Краеведени занятийĕсем ачасене тăван çĕре юратма, унăн илемĕпе пуянлăхне перекетлеме вĕрентеççĕ. Çак занятисем урлах ачасем мĕн пĕчĕкрен сăнама, кĕнекесенчи фактсене хăйсем шыраса тупнисемпе танлаштарса пăхма хăнăхаççĕ. Мария Ильинична маршрута татах та анлăрах тунă, пуянлатнă. Унта тăван районти литературăпа культурăра палăрнă ентешсен сăнарĕсем çеç мар, мĕнпур професси ăстисен çитĕнĕвне шута илни, сума суни пĕлтерĕшлĕ. Юхмапа Пăла тăрăхĕ чăннипех те „хĕсĕр мар“ иккенне черетлĕ хут ĕнентернĕ.

„Поэзи сĕвемĕ“ сыпăкра Мария Мадюкова сăвăç пултарулăхĕ вырăн тупнă. Чун çимĕçĕн кĕнекисем пĕрре мар кун çути курнă вĕрентекен-сăвăçăн. Вĕсенче те тăван тăрăх пурнăçĕ, илемĕ, ĕçĕ-хĕлĕ ўкерĕннĕ. Мария Ильинична шкул программинче этем чун-чĕрине, ăс-хакăлне аталантарасси литература вĕрентĕвĕнчен çав тери нумай килни пирки пусăмласах палăртнине хăйĕн сăввисем урлă çирĕплетсе пырать темелле.

Çапла вара М.И. Мадюкован „Ырă вăрлăх акас терĕм... Ĕç опытĕнчен“ кĕнеке суйласа, тĕшĕлесе хунă ăс-хакăл пуянлăхĕн вăрлăхĕн кунтăкĕ пулса тухнă. Унпа паянтан пултаруллă вĕрентекен хăй çеç мар, тăван чĕлхепе литературине вĕрентекен ытти учитель те усă курма пултарать.

Н. Н. Осипов,
филологи наукисен кандидачĕ,
И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУн
вырăс тата чăваш чĕлхисен кафедрин доценчĕ

## «АЧАСЕНЕ ÇЫН ПУЛСА ÇИТĔНМЕ ПУЛĂШАКАН ПРЕДМЕТА – ЛИТЕРАТУРĂНА ВĔРЕНТЕС СИСТЕМА»

**(«Система преподавания литературы как предмета, формирующего человека»)**

(Эссе на районном смотре-конкурсе «Лучшая модель эффективного внедрения педагогической технологии в общеобразовательный процесс») 2007 год

План:

1. Е.Н. Ильин ăслайĕ: «Ачасене Çын пулса çитĕнме пулăшакан предмета-литературăна вĕрентес система».
   1) Кам вăл Е.Н. Ильин?
   2) Педтехнологи тĕллевĕсемпе уйрăмлăхĕсем.
   3) Ăслайăн тĕп никĕсĕсем.
   4) Тытăм хăйне евĕрлĕхĕ тата пĕлӳлĕх меслечĕсем.
2. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш литературине вĕрентессин патшалăх виçи (стандарчĕ).
3. Литература – пурнăç кĕнеки. (ĕç опытĕнчен).
   1) Литература предмечĕн кашни пĕчĕк пайĕ – ача пурнăçĕнчи пĕр утăм.
   2) Вĕренӳпе кăмăл-сипет проблемисене татса пама пулăшакан уроксем (Элективлă курс).
4. Пĕтĕмлетӳ.
5. Хушса пани.
6. Усă курнă литература.

Ăслай валли эпиграфсем:
«Умножать, а не только уважать
Человека в человеке». *Е.Н. Ильин.*
«Главное назначение литературы я
вижу в том, чтобы она способствовала
сохранению совести в человеке. *Ч. Айтматов.*

Ум сăмах.

Хальхи вăхăтра вĕрентӳ çине çĕнĕлле пăхасси.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул хальхи вăхăтра çĕнĕлĕхпе пуян. Çав çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртнĕ май ачасемпе ĕçлемелли мелсемпе меслетсен тĕсĕсем те чылай урăхрах. Çĕнетнĕ тытăмлă шкулăн чи малтанхи çул-йĕрĕ вăл – ачасемпе уйрăммăн тата вĕсен çитĕнĕвĕсемпе, çулĕсемпе (возраст) пултарулăхне шута илсе ĕçлесси. Çавна май шкул çулĕсенчех вĕренекенсене хăйсен пулас профессине суйласа илме вĕрентесси çине те пысăк тимлĕх уйăрмалла. Анчах професси суйласа илнипе çеç çырлахма çук.

Мĕншĕн тесен Ачан чи малтан Çын пулса çитĕнмелле. Паянхи кăткăс саманапа пăтравлă лару-тăрура çынлăха упраса хăварасси, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен (нравственность) çирĕп пуласси, лартнă тĕллеве пурнăçлас тесе ăнтăласси, обществăра харпăр хăй вырăнне тупасси кашни ачан пурнăç саккунĕ пулмалла. Çак ыйтусене пирĕн общество кăларса тăратать, апла пулсан шкул пĕтерекен кашни ачан вăл ыйтусене татса парас тесе тăрăшмалла.

Тĕнчери малта пыракан шухăшлавçăсемпе аслă педагогсем тахçанах вĕрентӳри тĕрлĕ çул-йĕре палăртнă, ачасене вĕрентсе аталантарас ĕçре хăйсем кĕтнĕ пĕтĕмлетӳсене те тунă. Анчах вĕсен вĕрентĕвĕнче çак аталанури фактсемпе çирĕплетӳсем çук, çавна май педагогика çул-йĕрĕсемпе меслечĕсене те системăламан. К.Д. Ушинский, И.Г. Песталоцци вĕрентӳ идейисен çӳллĕ шайĕ çакна палăртать те.

ХХ ĕмĕр вĕçĕнче мал шухăшлă вĕрентекенсен çĕнĕ технологийĕсем анлăн сарăлчĕç. К.Ушинский, И.Песталоцци, Я.А. Коменский вĕрентĕвĕсем çумне Ш.Амонашвили, Е.Н.Ильин, Б.П.Никитин, В.Ф.Шаталов, Д.Б.Эльконин, С.Н.Лысенкова, В.В.Фирсов тата ытти авторсен педтехнологийĕсемпе ĕçре усă куракансем нумайланчĕç. Педагогика технологийĕсен ушкăнĕсем пурĕ 5, темисем вара тĕрлĕрен – икĕ теçеткерен те иртет.

1. Е.Н. Ильин ăслайĕ: «Ачасене Çын пулса çитĕнме пулăшакан предмета – литературăна вĕрентес система» («Система преподавания литературы как предмета, формирующего человека»).

Кунта унăн пĕр шухăшне илсе кăтартни вырăнлă пулĕ: **«Умножать, а не только уважать человека в человеке».** Унăн системин тĕп шухăшĕсенчен пĕри пулнине туйса илнĕ май çак меслет хальхи вĕренекенсем валли уйрăмах юрăхлă тесе картса калас килет.

1). Кам вăл Е.Н. Ильин?

Ильин Евгений Николаевич Санкт-Петербург хулинчи 84-мĕш шкулти литература учителĕ. Унăн педтехнологийĕн системин хăйне евĕрлĕхĕ çакăнта: вăл литература урокне пысăк искусство пек курса вĕрентет, çавăнпа пĕрлех кăмăл-сипет тата илемлĕхпе йĕркелĕх концепцийĕсене тĕпе хурса кашни вĕренекене Çын пулса çитĕнес çул çине тăратать. Ку концепци çинчен вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 70-90-мĕш çулĕсенчех хăйĕн çак кĕнекисенче çырса кăтартнă: «Урок продолжается» (1973), «Шаги навстречу» (1986), «Путь к ученику» (1998), «Искусство общения» (1982), «Герой нашего урока» (1991) т.ыт.те.

2) Педтехнологи тĕллевĕсемпе уйрăмлăхĕсем.

Хăй ĕçĕнче Е.Н.Ильин çакăн пек тĕллевсем курать:

а) Уйрăм çынна кăмăл-сипет тата кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен воспитани панипе пĕрлех кирлĕ пĕлӳ те илме пулăшасси.

ă) Литература урокĕсене пысăк искусство пек курса вĕрентесси.

Литература урокĕсен виçи (критерийĕ): чун ĕçĕ ăс ĕçĕпе танлаштарсан мĕнле шайра тăрать? Çак шайпа вĕрентекенĕн пултарулăх позицине те виçеççĕ. Воспитани парасси вĕрентессинчен чылай кăткăсрах ĕç, иккĕшне те çыхăнтарса шайлаштарма тата йывăртарах. Çак шайлашăва вăйсăрлатмасăр çыхăнура воспитани ĕçне малти вырăна кăларса тăратасси вара – хăне май искусство. Чылай шкул ачи хăйĕн психологи шайĕнче çапла шутлать: Пушкинпа Чехова вуламасăр пурăнма пулать, хутлав таблици вара пурнăçра кирлех! Çакăн пек ачасен ăс-тăнĕ патне хутлав таблицисĕр пуçне ыттисем те, уйрăмах литература та – кирлине мĕнле çитермелле-ха? Кĕнекерине пурнăçпа çыхăнтарса, вĕсем пĕр-пĕрне пуянлатнине тĕпе хурса, Пурнăçра Çын пулма вĕрентекен теори патне пырса тухма пулать иккен. Е.Ильинпа килĕшсе, литературăри хайлавсемпе усă курса ăна, тĕслĕхрен, çакăн пек курма пулать:

| № | Темăсем | Е.Н.Ильин аспекчĕ тăрăх | Чăваш литературинчи хайлавсем тăрăх |
|---|---|---|---|
| 1 | Икĕ тĕрлĕ ăнкарулăх (Два затмения) | «Слово о полку Игореве» | Ç.Элкер. «Хурапа шурă» |
| 2 | Харпăр хăвна шухăшласа кăлар (Изобретайте себя) | Н.Чернышевский. «Что делать?» | И.Лисаев. «Юрлакан кĕленчесем». |
| 3 | Нумай пурăннă çынпа калаçни (Диалог с долгожителем) | «Премудрый пескарь» | П.Хусанкай. «Тилли юррисем» |
| 4 | Сехете ан чарăр (Не остановите часы) | Достоевский. «Преступление и наказание» | Илпек Микулайĕ. «Хура çăкăр». |
| 5 | Çын хушшинче мĕнле Этем пулмалла? (Как среди людей оставаться Человеком?) | Л.Толстой. «Война и мир». | А.Артемьев. «Симĕс ылтăн». |
| 6 | Хăвна упрамалла е çыншăн йăлтах памалла?(Сохранять себя целым или отдать целиком?) | «Старуха Изергиль» | М.Кипек. «Кайăк тусĕ». |
| 7 | Пурнăça йĕркелемелле е пурнăçра вырнаçмалла? (Строить жизнь или устраиваться в ней?) | Н.Островский. «Как закалялся сталь») | А.Артемьев. «Салампи». |
| 8 | Мĕнле тимсĕр пурăнатпăр эпир? (Как невнимательно мы живем?) | Арбузов. «Жестокие игры». | Ю.Скворцов. «Ултăк». |

Тематикăран çакă курăнать: воспитани задачисем урок пайĕсенче çеç мар, урок тăршшĕпех пурнăçланаççĕ.

3) Ăслайăн никĕсĕсем: - вĕрентӳ предмечĕсен тĕп шăнăрĕ пулса тăракан наука никĕсĕсем ачасенче хальхи пурнăç çыннине кирлĕ ăнланусем çуратаççĕ;

- гуманизаци принципĕ: кĕнекесен кăмăл-сипет потенциалĕ (уйрăм) ăнкарусен уйрăм системине çуратать;

- илемлĕ меслетлĕх (художественность): литература урокĕ ӳнер саккунĕ тăрăх йĕркеленет (илемлĕ литература произведенийĕн анлă тишекрĕвĕ), вырăсла виçĕ «О» саккунĕ:

очаровать книгой (кĕнекепе илĕрт);
окрылить героем (геройпа çунатлантар);
обворожить писателем (писательпе тĕлĕнтер):

- вĕрентӳ процесĕнче шкул ачисен чунĕсенче çынри çакăн пек енсем вăранса аталанаççĕ: патриотизм, пĕлеслĕх (любознательность), кунсерен харпăр хăйне аталантарасси (саморазвитие и самообразование), туйăмлăх – илемлĕхе туясси, кăмăл-сипет туртăмĕ (нравственность), хисеплĕх тата ĕçшĕн хатĕр пуласси:

- ачасем патне урока темăпа çеç мар, çунтаракан (пăлхантаракан) проблемăпа каймалла:

- вĕрентӳре теори задачисемпе хăнăхтарăвĕсенчен ытларах чĕрĕ хутшăнăвăн кăмăл-сипет категорийĕсем пĕлтерĕшлĕрнх:

- воспитани ĕçĕнче учителĕн, класс руководителĕн, шкул ертӳçин сăмахĕ, тыткаларăшĕ, вĕсен кăмăл-сипет сăн-сăпачĕ тата ĕçри пултарулăхĕ ачасен çĕр-шывăн чи лайăх гражданĕсем пулса çитĕнес ыйтăвĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ:

- кашни уйрăм ача патне çакăн пек формулăпа пымалла: юрат + ăнлан + йышăн + пăшăрхан+ пулăш;

- демократилĕх (уççăнлăх): учителĕн ачара хăйпе пĕр шайри çынна курмалла;

- учитель – предмета вĕрентекен, художник (ӳнерçĕ), врач (сиплевçĕ).

Педтехнологин содержани уйрăмлăхĕсем: литература курсĕн шкул программинче кашни произведенийĕ Кăмăл-сипет тĕлĕшпе нумай проблема кăларса тăратать. Е.Н.Ильин вăл ыйтусене урокăн тĕп шăнăрĕ туса, ачасен умне çапла лартать:

а) паянхи ачашăн çав ыйту кирлĕ, пĕлтерĕшлĕ пултăр;

ă) ыйтăва пĕтĕм шкул ачи валли мар,уйрăм çак класс е уйрăм çак ача валли кăларса тăратать;

б) çав ыйту çине хурав тупас тесен ачан произведенине лайăх пĕлмелле, ăна тишкерсе хак памалла, хушма литература вуламалла, вăл е ку хайлава çырнин историйĕпе тата автор биографийĕпе паллашмалла.

4)Тытăм хăйне евĕрлĕхĕ тата пĕлӳлĕх меслечĕсем.

Литература предметне вĕрентмелли формула çапла курăнать: учитель опычĕ – илемлĕ литература произведенийĕн тишкерĕвĕ – кĕнеке.

Проблемăллă ситуаци валли педагог çакăн пек структура сĕнет: деталь – ыйту – проблема. Унпа кашни учитель усă курма пултарать. Ума кăларса тăратнă проблема çине ответ тупас тесен ушкăнĕпех (класĕпех) шырава тытăнас пулать, пĕр-пĕрин шухăшĕсене, туйăмĕсене пусармасăр сӳтсе явмалла, тавлашу хускатмалла - çакна пĕтĕмпех учителĕн пуçарса ертсе пыма пĕлмелле.

Е.Н. Ильин урокĕсене ытларах чухне çакăн пек схемăласа кăтартма пулать:

| | |
|---|---|
| УРОК ТĔЛЛЕВĔ | -деталь (çут çанталăк ытларах чух вак-тĕвексемпе тĕлĕнтерет); |
| | -учитель – ыйту; |
| | -ответ (пултарулăх меслечĕ-уйрăммăн ĕçлени); |
| | - монолог; |
| | - килти ĕç; |
| | - ачасен ыйтăвĕсем. |

Литература урокĕ вăл:

- çынна ӳссе çитĕнтерекен процесс: урок- ĕç çеç мар, хутшăну: урок – вĕренӳ занятийĕ çеç мар, искусство; урок – расписанири сехет шучĕ çеç мар, пурнăç;

- хăйне майлă спектакль (режиссерĕсем – писатель тата учитель);

- аргументсемпе фактсем мар, çĕнĕлĕх;

- учительпе вĕренекен хушшинчи пултарулăх, танлăх, хутшăну.

Кашни шкул ачи икĕ программăпа вĕренет. Пĕр программине шкул сĕнет, теприне вара, ĕнентерӳллĕреххине, такам та сĕнме пултарать – кӳршĕсем, урамри юлташсем, тепĕр чух тĕрĕс çултан пăраннă ашшĕ те. Учителĕн вара икĕ программипе те ĕлкĕрмелле, шута илмелле.

Е.Н.Ильин ăслайĕн вĕрентĕвĕ пирки çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: аслă педагог хăй умне лартнă тĕллевсем кашни ачана хăй вăйне шанма хавхалантараççĕ, унăн харпăрлăхĕн чи лайăх енĕсене вăратаççĕ, гуманизмпа гражданлăхăн чи çӳллĕ тӳпине çитес тесе ăнтăлма хистеççĕ.

2. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш литератури вĕрентессин патшалăх виçи (стандарчĕ).

Пирĕн çĕр-шывра пĕр парти идеологийĕ пуç пулса тăнă вăхăтра ырă тĕслĕх вырăнне çӳренĕ сăнарсем паян чылай шупкалчĕç е хăйсен пĕлтерĕшне пачах çухатрĕç. Вĕрентӳ тĕллевĕсем те улшăнчĕç. Ачасен ăс-тăнĕпе шăхăш-кăмăлне гуманизм майлă аталантарас ĕçре шкулти предметсен пĕлтерĕшĕ пĕр пек мар. Тĕп вырăна этемлĕх культурине вĕрентессипе çыхăннă предметсем тухса

тăраççĕ. Вĕсен шутĕнче сăмахлăх – литература пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк.

Шкулта илемлĕ литература вĕрентессин чи тĕпрех тĕллевĕсенчен пĕри – чи паллă,пысăк пĕлтерĕшлĕ илемлĕ хайлавсемпе паллаштарасси, сăмах илемне туйма, хаклама хăнăхтарасси.

Тăван литературăна ăса хывни илемлĕхе туйма çеç мар, çамрăксен туйăмĕсене çынлăх шайне çĕклеме пулăшмалла.

Илемлĕ литература тăван халăхăн чун пуянлăхне, ĕмĕт-шухăшне, философине, психологине вăл е ку хайлавра ӳкерсе кăтартнă сăнарсем урлă уçса парать. Тăван халăхăн чун-чĕре пуянлăхне, чĕлхине, культурине халăхăмăр утса тухнă çул-йĕре тĕплĕн пĕлмесĕр, ăна тарăн ăнланса ăша хывмасăр çамрăк çын ытти халăх культурине те ăнланаймасть, пур енлĕ аталану шайне çĕкленеймест. Тăван литературăна мĕн кĕçĕнрен вĕрентни тивĕçлĕ наци туйăмĕпе мăнаçлăхне аталанма та май парать, çав туйăма килес ăрусем патне çитерме çын чунĕнче никĕс хывать.

Çут çанталăк этеме нумай туйăм парнеленĕ – юратупа курайманлăх, хаярлăхпа ачашлăх, паттăрлăхпа хăравçăлăх... Этем чунĕнче хăшĕ вăй илесси тĕрлĕ сăлтавсенчен, çын мĕнле лару-тăрура ӳснинчен килет.

Çынна пархатарлă туйăмсем кӳрекен çăлкуç вйл – искусство (ӳнер). Искусствăн  уйрăлми пайĕ вăл – литература.Çын пурнăçĕн тĕллевĕ - ĕненĕвĕ, чун хавалĕ, юратăвĕ, курайманлăхĕ - çак ыйтусене пĕтĕмпех литература сăнарлă сăмах мелĕпе татса парать. Ӳссе çитĕнекен ăрăва кирлĕ пек, таса чунлă çитĕнтерес ĕçре литература яваплăхĕ калама çук пысăк. Ачан кăмăл-сипетне, хăнăхăвне, тыткаларăшне йĕркелесси халĕ ытларах шкул çине тиенет. Ача-пăча илемлĕ литература хайлавĕсемпе паллашса, вĕсенчи сăнарсен тупсăмне тупма хăнăхса хăйĕн ăс-хакăлне, чун хавалне, чĕре сисĕмне аталантарать. Сăмах ăсталăхĕ, сăмах асамĕ çынна макăртма та, савăнтарма та, тарăн шухăша путарма та пултарать.

Чăваш литературинче çутă ятсем – поэт-писательсем сахал мар. Вĕсен хайлавĕсем те çителĕклех. Тĕрлĕ çулсенче çырнă вĕсене. Хăшĕ-пĕри вуланмасăр çӳлĕк çинче тусан пухса выртаканни те пур. Хăшĕ-пĕри вара ĕмĕрсем хушши чăваш чунне канăç памасть: савăнтарать те, хурлантарать те, тавлаштарать те.

«Эсĕ «Нарспи» поэмăна вуланă-и?» Çапла ят панă Анатолий Кипеч хăйĕн тин çеç тухнă кĕнекине. Ум сăмахĕнче вара çак ыйту çине хуравланин пĕр сыпăкĕ уйрăмах кăсăк: «Эсĕ  «Нарспи» поэмăна вуланă-и?» - тесе ыйтсан, вуламан текен çук та пуль. Эпĕ ăна вуннăра чухнех вуланă текен те тупăнĕ. Тепри, тен, каярах. Анчах

пĕрре вуланипех çырлахни тĕрĕсех-ши? Çук пулĕ... «Нарспийĕ» çавах-ха, К.В. Иванов 100 çул каялла çырса хăварниех, вулаканĕ вара пĕр маях улшăнса пырать. Çакă вăл пĕр çын виçипе пăхсан та çаплах. Вăхăт факторĕ текенни хăй ĕçне тăватех,паллах. Калăпăр, вăтăрти çынна вуннăрипе танлаштарма çук. Вĕсен ăс-тăнĕпе тавракурăмĕ пачах расна. Асли çут çанталăкпа обществăри пулăмсене, пурнăç йĕркине тарăнрах, тĕрĕсрех ăнланать, çын мĕн тума пултарнине те аванах чухлать. Ма тесен ăна пурнăç тĕрĕслевĕ самаях турткаласа-пăркаласа, хĕстерсе пăхма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Вăтăрти вулакан «Нарспие» вуннăри пек туйăм шайĕнче кăна йышăнмасть, тарăн шухăша кайса, хăй вăхăтĕнчи пурнăçа шута илсе тишкерет, поэмăра пулса иртнĕ ĕçсене пĕлӳ çӳпçипе пурнăç опычĕ çине таянса хак парать, пĕр йышшине – йышăнать, уншăн савăнать, теприне – сивлет, чĕре патне илеймест. Литературăн тĕп тĕллевĕ шăпах çакăнта ĕнтĕ – вулакан туйăмне хускатса ырă шухăшсем патне çитересси.

Çак тĕллеве пурнăçласси – пĕр урокра, пĕр çулта пулакан ĕç мар. Çулран çула, класран класа ӳсекен ачасен ăс-тăн шайне шута илсе, Патшалăх стандартне, литература программине тĕпе хурса ĕçлемелле.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш литературине вĕрентессин патшалăх виçинче ку «картлашка» çапла йĕркеленнĕ.

| | | | 10-11 классем |
|---|---|---|---|
| | | 8-9 классем | Тăтăш сыпăнуллă курс (система).Тишкерӳ |
| | 5-7 классем | Сăмахлăх аталанăвĕн тапхăрĕсем Тавлашу | |
| Литература урокĕсене йĕркелени | Уйрăм темăсем Калаçу | | |
| *Ăсталăха аталантарасси* | *Сăвă, тĕрленчĕк, кĕске калав* | *Творчество сочиненийĕ* | *Очерк, статья,тĕпчев ĕçĕ* |
| *Массăллă информаци хатĕрĕсемпе усă курасси* | *«Тантăш» хаçат* | *«Самант» журнал* | *«Ялав» журнал «Тăван Атăл» журнал «Халăх шкулĕ» журнал* |
| *Жанр тĕрлĕ енлĕхĕ* | *Сăвă, юптару, калав, пьеса* | *Калав,повесть,поэма,пьеса* | *Повесть, роман, эпопея, драма* |
| *Мĕн пĕлмелле?* | *Çыравçă ячĕ, хайлав сюжечĕ,сăнарсем, жанр тĕсĕ* | *Хайлав теми, жанрĕ,çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ, аталану тапхăрĕ, илемлĕх* | *Литература речĕ,хайлав пафосĕ,сăнарсене танлаштарасси,çыравçăн хăйне евĕрлĕхĕ,кашни* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | *мелĕсем* | *тапхăрти çыравçăн уйрăмлăхĕ* |
| *Мĕн пултармалла?* | *Çыхăнуллă калаçу, пăхмасăр калама, план тума, сăнарсене уйăрма, пултарулăх ĕçĕ* | *Хайлавăн тĕп шухăшĕ,илемлĕх мелĕсем,тулли хуравсем,хайлава хак пама, хаçат-журнала тишкерме* | *Произведение тишкерӳ тума, сăнарлă чĕлхе, доклад тума, реферат çырма, тĕпчев ĕçĕ çырма* |

4. Пĕтĕмлетӳ.

Кашни вĕренекен хăйне тата пире, вĕрентекенсене, урок урлă йышăнать. Урокра пĕлĕвĕн пур элеменчĕсем те пулсан (литература, пурнăç опычĕ, кăмăл-сипет норми), АЧАРАН ÇЫН пулса çитĕнтерес шанчăк пысăкрах.

«Урок пирĕнтен çӳлте!» («Урок выше нас!») – тенĕ Е.Н.Ильин лайăх урок хыççăн. Унăн урокĕсем пурте лайăх та сĕтеклĕ пулни каламасăрах паллă.

Урок хăçан лайăх пулать? Хăçан та хăçан хутшăну лайăх, учитель веçех «ачасенче». Хутшăну учителĕн ăш-чиккинчи тата творчествинчи пултарулăхĕпе профессилле хăйне евĕрлĕхне кăтартса парать. Çавна май ачасен вĕренĕвне савăнăçлă тăвать, пĕлӳлĕхпе воспитани задачисене пĕрлештерет. Вĕренӳри йывăрлăхсене программăри уроксен шутне чакарнипе мар, учитель хутшăнăвĕпе çĕнтерме пулать. Çак хутшăнусен никĕсĕнче – ăш-пиллĕх,ыр сунăм,ансатлăх,пĕрне-пĕри ăнланни,интереслентерни.

Творчествăлла хутшăнусен принципĕ уçă: урокра пурин те ĕçлемелле – вара çитĕнӳ пулатех!

Кун пек уроксенчен никам та тармасть, мĕншĕн тесен литература вăл педагогикăн чи кирлĕ проблемине – вĕренекен ачана мар, ăнкаруллă вулавçăна, пултаруллă маçтăра, пурне те пĕлме ăнтăлакан ÇЫННА çитĕнтерес задачăсен комплексне пурнăçлакан предмет.

Усă курнă литература:

1.Ильин Е.Н. Герой нашего урока.-М.,1991.
2.Ильин Е.Н. Путь к ученику. – М., 1988.
3.Ильин Е.Н. Шаги навстречу. – М., 1986.
4.Занков Л.В. Избранные педагогические труды. – М., «Педагогика»,1990.
5.Шаталов В.Ф. Точка опоры. – М., «Педагогика»,1987.
6.Коллектив авторов. Будь человеком, человек! – Чебоксары, 2005.
7.Кипеч А.И. Эсĕ «Нарспи» поэмăна вуланă-и? - Шупашкар,2006.

# УҪӐ УРОК ПЛАН – КОНСПЕКЧӖСЕМ

## А.С.АРТЕМЬЕВ ПУРНӐҪӖПЕ ПУЛТАРУЛӐХНЕ ШКУЛТА ВӖРЕНТЕССИ. ЛИТЕРАТУРА ТӖПЕЛӖ (7 КЛАСС)

### А. АРТЕМЬЕВ. «ХУНАВЛАХ ХӐРНИСЕМ»

*Тӗллевсем:* 1) А. Артемьев чӑваш халӑх писателӗн пурнӑҫӗпе, пултарулӑхӗпе паллаштарасси; унӑн нумай енлӗ таланчӗпе хавхаланма вӗрентесси.

2) Роман сыпӑкӗнчи сӑнарсен историллӗ чӑнлӑхӗ; вӗсем ачасене кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен воспитани панине палӑртасси.

3) Вӗренекенсен пултарулӑх ҫӑлкуҫӗсене тупса палӑртасси, вӗсене малалла аталантарма пулӑшасси, пурнӑҫра харпӑр хӑй вырӑнне тупма ҫул хывма пулӑшасси.

**Урок юхӑмӗ.**

1. А. Артемьев ҫинчен каласа парасси:

- писатель ҫуралнӑ тӑрӑх; ачалӑхӗ;
- А. Артемьев – сӑвӑҫ, куҫаруҫӑ, фронтовик, калавҫӑ, поэт-юрӑҫ. (*«Ҫуралнӑ ҫӗр-шыв» юрӑ янӑрать*).

2. «Хунавлах хӑрнисем» роман сыпӑкне илемлӗ вуласа тухасси.

Словарь ӗҫӗ: Чӗмпӗр, Сӗве, бунтовщик, разбойник, музыкҫӑ, чӗкеҫ шатри, Пӑва уесӗ, аршӑн тӑршшӗ, хром атӑ, надзиратель, шантарсем, трибун.

3.«Сӑнарсемпе паллашатпӑр» (сыпӑкра асӑннӑ геройсен портречӗсене доска ҫине ҫакнӑ май вӗсемпе паллашни):

- И. Яковлев – педагог, просветитель, пӗрремӗш букварь ҫыракан;
- К.В. Иванов – поэт-классик; Н. Шупуҫҫынни – поэт;
- Мартинов (Максимов-Кошкинский) – артист, драматург, режиссер; П.В. Пазухин – юрӑҫ-композитор.

4. «Сӑнар ҫинчен – тӗплӗнрех».

Петр Пазухин пирӗншӗн уйрӑмах ҫывӑх. Мӗншӗн тесен вӑл пирӗн районти Анат Чакӑ ялӗнче 1888 ҫулта ҫуралнӑ. 1903-1909 ҫҫ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ, К. Ивановпа туслӑ пулнӑ. Шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Элӗкри икӗ куслӑ училищӗре вӑй хунӑ. Тури чӑвашсен юрри-кӗввине, сӑвви-такмакне, калаҫӑвне ҫырса илнӗ, ялта хор йӗркеленӗ. 1912 ҫулта Чӗмпӗрте Пазухинӑн «Чӑваш халӑх юррисен тексчӗсем» ятлӑ кӗнеки ҫапӑнса тухать. 1914 ҫулта ӑна тӗнче вӑрҫине илеҫҫӗ, 1917 ҫулта йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн вилсе каять. (*магнитофонпа ҫав кӗнекери пӗр кӗвӗ янӑрать).*

5. Сыпӑк тӑрӑх ӗҫлесси.1) Кӗнекери ыйтусем ҫине ответлесси:

- Вуланине лайӑх ас тӑватӑр-и ? (145 стр.)

- Хайлава мĕнле ăнланатăр ? (146 стр.)

(«Вĕренекенсем: И. Яковлева хисеплени хăш йĕркесенче курăнать ? Тупса вулăр» *ыйту хыççăн вĕренекенсем кĕнекери çак ыйтăва хуравлама пултаракан эпизода выляса параççĕ).*

2) 6-мĕш ыйту хыççăн И. Яковлевăн «Халалĕ» тăрăх калаçу ирттересси.

3) «Сăнарлă сăмаха» туйма вĕренĕр.

4) Текстри илелĕх мелĕсем:

хĕвелпе пĕрле вăранчĕ (*олицетворени*);

шыв сыпнă çулçăсем *(олицетворени);*

йăрăс тирексем, лапсака хурама *(эпитет );*

килчĕ ырă çуркунне *(олицетворени);*

ырă туйăм капланса çĕкленчĕ *(олицетворени);*

автан киккирикĕ пек *(танлаштару);*

селĕп çын евĕр *(танлаштару );*

икĕ вăйлă çунат пек *(танлаштару );*

салтакла патвар утакан *(танлаштару);*

капан пек тĕреклĕ *(анлаштару );*

хурлăх куççулĕ ялкăшать *(метафора );*

сăвăç хавхаланăвĕ ялкăшса çунса тăрать *(метафора).*

Текстри фразеологизмсем: ăс илĕр; шыв сыпнă пек.

чĕлхене амантма пулать; сăмахшăн кивçене кайман;

сывлăх сунчĕ; ларма-тăма вырăн тупаймастăп;

сывлами пулса итлет; кăмăлĕ тулнă директор;

пĕр сăмахне сиктерми; шак хытса ларчĕç;

6. Вĕренекенсем хушшинче сăвă-калав çыракансем пур. Вĕсен çĕнĕ хайла вĕсемпе паллашасси.

- Хайлавсенчи хăш-пĕр асăрхаттарусем тата пысăк хавхалантару.

7. Урока пĕтĕмлетни.

1) Чăваш халăх писателĕ А. Артемьев – ăста çыравçă; вăл – халăх юратакан, тĕрлĕ темăпа çыракан поэт та, писатель те, куçаруçă та.

2) Роман сыпăкĕнчи сăнарсенчен тĕслĕх илмелле; И. Яковлев калашле «хăюллă пулмалла, лайăх вĕренсе ăс илмелле»; халăхшăн И.Яковлев пек, К. Иванов пек, П. Пазухин пек, тата ытти сăнарсем пек тăрăшмалла; ырă ĕç туса ырă ят çеç хăвармалла.

3) Кашни ачан хăйĕн пултарулăхĕн шайне пĕлмелле; çав пултарулăха аталантарса пурнăç çулне тĕрĕс суйламалла; Яковлев шанчăкне – «...чăваш хушшинчен пысăк ученăйсем, ăслă кĕнекеçĕсем...» тухĕç.

Çул уçнă...» - тенине тӳрре кăлармалла.

IX. Урок вĕçĕ. Оценкăсем лартни.

## А.С.АРТЕМЬЕВĂН «САЛАМПИ» ПОВЕÇĔ ТĂРĂХ ИРТТЕРНĔ ПĔТĔМЛЕТЎ ТЕЛЕПЕРЕДАЧА - УРОК.

## «ÇУТАЛСА ТĂРАКАН ПУЛТАРУЛĂХ»

Чăваш литератури (11 класс)

Урок тĕллевĕсем: 1) Чăваш халăх писателĕ А.Артемьев чăваш литратуринче сумлă вырăн йышăннине кăтартасси, ун пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетни.

2) А. Артемьевăн нумай енлĕ талантне кăтартнă май унăн пултарулăхĕпе иксĕлми вăй-халне палăртасси.

3) Писателĕн пархатарлă пурнăçĕ кашни ачана хăйĕн тĕллевне пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшма хавхалантартăр.

Усă курмалли хатĕрсем: учебниксем; альбом-раскладушка;

А. Артемьев кĕнекисем; магнитофон; ўкерчĕксем; палăк макечĕ.

*Урок эпиграфĕ:*

***«ÇЎЛ ТЎПЕРЕ ÇĂЛТĂР ВЫЛЯТЬ...»*** *(А. Артемьев)*

**Урок юхăмĕ:**

1.Урок пуçламăшĕ. <u>Ертсе пыракан.</u> Ырă кун пултăр, хисеплĕ юлташсем, телестудири хăнасем тата передачăна хутшăнакансем! Эфирта литература кăларăмне пуçлатпăр. Хамăр калаçура паян А.С.Артемьев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен вĕреннине пĕтĕмлетĕпĕр.

Передачăна ертсе пыраканĕ – Мария Мадюкова.

Передачăна хутшăнакансем – 11 класра вĕренекенсем.

Телевидени корреспонденчĕ – Екатерина Квасова тата «артистсем».

2. Чи малтанах «А. Артемьева пĕлетпĕр-и эпир?» ятлă пĕчĕк тĕрĕслев ирттерĕпĕр (ТЕСТ ыйтăвĕсем)

1) А. Артемьев ăçта çуралнă?

а) Тутар республики, Кăнна Кушки. ă) Вăрмар районĕ, Кавал

б) Элĕк районĕ, Тури Выла

2) Хăшĕ А.Артемьевăн хайлавĕ мар? а)«Улма йывăç авăнать»

ă) «Çунатлă çуралнисем». б) «Çунатлисем те çĕр çинчех»

3) Хăшĕ А.Артемьев хайлавĕнчи сăнар мар?

а) Анатолий Алмазов. ă) Валентин Актаев. б) Иван Юманов

4)А.Артемьев хăш журнал редакцийĕнче ĕçлемен?

а) «Халăх шкулĕ». ă) «Ялав. б) «Тăван Атăл»

5) А. Артемьевăн хăш орденĕ çук?

а) Ленин орденĕ. ă) «Хисеп палли» орден

б) «Халăхсен туслăхĕ» орден

6) Хăш произведение А.Артемьев çырнă?

а) «Çăкăр хакĕ». ă) «Хура çăкăр». б) «Çăкăр чĕлли»

7) Хăш сăнарĕ А.Артемьевăн?

а) Нарспи. ӑ) Салампи. б) Пинерпи

8) Хӑшӗ А. Артемьевӑн пӗрремӗш кӗнеки?

а) «Ахманеевсем». ӑ) «Ан авӑн, шӗшкӗ!». б) «Алтӑр çӑлтӑр»

9) А. Артемьева çак ятсенчен хӑшӗ тивӗçнӗ?

а) Чӑваш халӑх поэчӗ. ӑ) Чӑваш халӑх писателӗ

Б) Чӑваш халӑх артисчӗ

10) Çак сӑмахсенчен хӑшӗ А. Артемьев хушамачӗпе юнашар тӑма пултараймасть? а) писатель. ӑ) поэт. б) драматург

Тӗрӗс ответсем: бббаааӑӑӑб

3.<u>Ертсе пыракан</u>. Калаçӑва пуçличчен эфира илемлӗ юрӑ кӑларса пурне те çуркуннепе саламлатпӑр! Юрӑ сӑмахӗсене А.Артемьев çырнӑ. *(«Ах, пӗлесчӗ» юрӑ янӑрать)*

<u>Ертсе пыракан</u>: А.Артемьев – пирӗн литературӑри сумлӑ çыравçӑсенчен пӗри. Унӑн пурнӑçӗпе ӗçӗ пирӗн литература ӳсӗмӗпе тачӑ çыхӑнса тӑрать.Вӑл çырнӑ хайлавсем халӑх ӑс-тӑнӗпе кӑмӑл пуянлӑхне, илемлӗх туйӑмне ӳстерме пулӑшаççӗ.Унӑн нумай енлӗ таланчӗ çинчен пулӗ паянхи калаçу.

1-мӗш вӗренекен. А.Артемьев 1924 çулхи авӑн уйӑхӗн 14-мӗшӗнче Чӑваш Республикинчи Элӗк районӗнчи Тури Выл ялӗнче çуралнӑ. Акӑ мӗн аса илет А.Артемьев: «4-мӗш класс пӗтернӗ тӗле манӑн сӑвӑ тетрачӗ те пурччӗ ӗнтӗ. 1935 çулта икӗ пысӑк конвертпа вӗсене С.Элкере ярса патӑм. Адресне те пӗлместӗп хам. Ванька Жуков пек: «Шупашкара, Элкер писателе»,- тесе çыртӑм. Мӗнлерех пӑлханса ответ кӗтрӗм! Элкер вун иккӗри ача сӑввисене ырланӑ, писатель пулас тесен «нумай тӳсӗмпе ӗçлемеллине» кӑтартса панӑ».

17 çула çитиччен Саша Артемьев пурӗ 250 яхӑн сӑвӑ, поэма, повесть çырнӑ. Вӗсем хушшинче халь çеç янӑранӑ «Ах, пӗлесчӗ!» юрӑ сӑмахӗсем те пулнӑ.

2-мӗш вӗренекен. *А.Артемьевӑн пӗр сӑввине вулать.*

3-мӗш вӗренекен. Юрӑ пирки сӑмах тапратрӑмӑр пулсан, каласах хӑварӑпӑр: А.Артемьев сӑввисене чӑваш композиторӗсем кӑмӑлласа кӗтсе илеççӗ. Апла пулсан вӑл поэт çеç мар, юрӑç та. Ун сӑввисемпе Г.Хирбю «Юрату юрри», «Юрламасӑр епле чӑттӑр чун», Ф.Лукин «Ӑшӑ çумӑр», Т.Фандеев «Çуралнӑ çӗр-шыв» юрӑсем çырнӑ.

<u>Ертсе пыракан</u>. Итлесе пӑхар-ха унӑн «Юрату юррине». «Салампи» повеçе спектакль пек сцена çине кӑларнӑ хыççӑн «Салампи» юрри пулса тӑчӗ вӑл. *(«Юрату юрри» янӑрать)*

<u>Ертсе пыракан.</u> Пурте юратакан произведенисем хайланӑ пысӑк ӑстасенчен пӗри – чӑваш халӑх писателӗ Александр Спиридонович Артемьев прозаик. Унӑн прози вӑрçӑ хыççӑнхи пурнӑç талпӑнӑвне, ХХ ӗмӗр варринчи самана романтикине, çутӑ пуласлӑха туйтарнипе илӗртӳллӗ.

4-мĕш вĕренекен. Вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă çыравçă салтак «Симĕс ылтăн» повеçе çырса пичетлесе кăларнă хыççăн ăна писатель-психолог тесе хакларĕç. Мĕншĕн тесен вăл психологилле сăнарсемпе конфликтсен ăсти. Произведенири конфликтра ырăпа усал, çутăпа тĕттĕм, ачашлăхпа хаярлăх, юратупа курайманлăх, чиперрипе нĕрсĕрри, киввипе çĕнни кĕрешет. «Симĕс ылтăн», «Саламп», «Алтăр çăлтăр» повеçсем çакна кăтартаççĕ те.

Ертсе пыракан. Илсе пăхар-ха «Симĕс ылтăн» повеçри пĕр сыпăка. *(233 стр. пĕр сыпăка вуласси: «Манăн та пурнăçра Антун евĕрлех ишмелле пулсан...)*

Ыйтусем çине хуравласси:

- Мĕнле ытарлă пĕлтерĕш пур çакăнти сăмахсенче? *(пурнăç - кĕрешӳ)*

- Валентин мĕншĕн хытă асапланать*? (Тĕрĕслĕх çиеле тухасси питĕ хĕнпе килет уншăн.*

*Анчах вăл хăйĕн чыслă ятне тавăрасса шанать. Çавăнпа пĕр хăрамасăр кĕрешĕве тухнă).*

- Çирĕп кăмăллă çын асапĕ-и вăл е чун хăравçăлăхĕ? *(Паллах, çирĕп кăмăллă çын. Хăюллă*

*Антунран ахальтен-им тĕслĕх илет вăл? Ишсе каçмалли юлашки хучĕсем чи йывăррисем пуласса та пĕлет вăл, анчах хăйĕн вăйне шанать).*

Ертсе пыракан. Саманан çирĕп чунлă, паттăр геройĕсем «Саламп» повеçре те пур.

Журналист ыйтусем парать: 1) «Саламп» хайлавра мĕнле темăсем хускатнă?

(Вăрçă хыççăнхи çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăл-сипечĕ, юратăвĕпе туслăхĕ).

2)Тата мĕнле ыйтусем хускатать автор?

- вăрçă хыççăнхи йывăр пурнăç;

- вăрçă нумай ачана тăлăха хăварни;

- çамрăксем те кăмăл-сипет тĕлĕшпе çирĕп те чăтăмлă пулни;

- экологи ыйтăвĕ; - вăрçă кашни çемьене инкек кӳни;

- çамрăксен çутă ĕмĕчĕсене татни т.ыт.те.

3) Кам вăл Саламп*? (Кĕнекерен Саалампие сăнласа паракан вырăна тупса вулаттарасси; 178 стр. – «Саламп – шурă çи виттине вараласран хăранă...»)*

Ертсе пыракан. Çакăн пек идеалла сăнар тухса тăрать те пирĕн ума повеçе вуланă май.

Хăй умне лартнă ыйтусене вулакан умне кăларса писатель нумай шухăшлаттарать. Мĕнле витĕмлĕ пулса тухнă тата «Саламприри» салтак амăшĕн сăнарĕ! Итлесе пăхар-ха ун çинчен калакан сыпăка.

5-мӗш вӗренекен. *(«Салтак амӑшӗ» сыпӑка (кӗскетсе) вулать).*

Эй, салтак амӑшӗ! Темиҫе ҫул аслӑ ҫапӑҫу пынӑ чух ҫӗрлесерен ҫичшер вӑранса пӑшӑрханнӑ аннемӗр! Юнлӑ вӑрҫӑ хирӗнчи ачусене асӑнса ура ҫинчех тӗлӗк курнӑ, савӑк самантра та савӑнаймасӑр салтак-ывӑлусене киле кӗтнӗ аннемӗр! Санӑн чун-чӗрӳ мӗнлерех тарӑн-ши, мӗнлерех пысӑк-ши? Ара ҫитнӗ ачусене вӑрҫа ӑсатнӑ чух калани: «Эсир, ҫамрӑксем, пирӗн тӑпрамӑра килсе таптӑр; сирӗн тӑпрӑра пирӗн, ваттисен, таптамалла ан пултӑрччӗ», - тени сарӑмсӑр сая кайнине пӗлсен тӗнчене шӑнӑҫайми хаяр хыпар сан чӗрӳне мӗнле шӑнӑҫайрӗ-ши?

Эй, салтак амӑшӗ! Ӗҫре ҫуралса ӗҫпе ӗмӗр ӗмӗрлерӗн. Эс пуриншӗн те хӗвел пек ӑшӑ, тараватъ пултӑн. Ҫавӑнпа иккен паттӑр ывӑлусем ҫӗр-шывӑмӑра анне тесе хисеплеҫҫӗ.

Тайма пуҫӑм сана, совет салтакӗн амӑшӗ! *(Палӑк умне пырса чечек хурать).*

Ертсе пыракан. Ҫак сӑмахсенех паянхи кун Чечня вӑрҫинче ҫапӑҫнӑ салтак амӑшӗсене те, унтан ывӑлӗсене цинк тупӑкпа кӗтсе илнӗ хура тутӑрлӑ амӑшӗсене те калас килет.

Тайма пуҫӑмӑр пурне те!

Шел пулин те, ҫӗр-шывра паян та лӑпкӑ мар. Вӑрҫӑ ҫухатусӑр пулмасть. Республикӑра та, районта та Чечня вӑрҫинче пуҫӗсене хунӑ салтаксем пур.

Ҫӗр-шывшӑн пуҫне хунӑ салтаксем ячӗпе, вӗсене асӑнса пӗр минут шӑп тӑма ыйтатӑп!

6-мӗш вӗренекен. «Тӑвӑл умӗн», «Хунавлах хӑрнисем» романсене вуласан А. Артемьева писатель-историк тесе калама май пур. Кунта автор чӑвашсен революцичченхи пултарулӑх интеллигенцийӗн сӑпки вара Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ пулнӑ. Питех те уҫӑмлӑн та чӗррӗн тухса тӑраҫҫӗ Пирӗн ума чӑваш наци культурине ӳстерес тӗлӗшпе паттӑррӑн ӗҫленӗ ҫынсем: паллӑ просветитель Иван Яковлев, унӑн талантлӑ вӗренекенӗсем К.Иванов, Ф.Павлов, Н.Шупуҫҫынни, Петр Пазухин, Чӗмпӗр чӑваш шкулӗпе ҫыхӑннӑ М.Беляевпа Ф.Сергеев революционерсем.

Ертсе пыракан. Акӑ «Тӑвӑл умӗн» роман сыпӑкне итлер-ха (вӗренекен каласа е вуласа парать).

Ыйтусем: 1).Ҫак сыпӑкра историри мӗнле пулӑмсене асӑннӑ?

2).Халӑх историйӗнче палӑрнӑ ҫынсен сӑнарӗсем хӑшӗсем?

3).Пирӗншӗн уйрӑмах хӑш сӑнарӗ ҫывӑх?

7-мӗш вӗренекен. Петр Пазухин пирӗншӗн уйрӑмах ҫывӑх. Мӗншӗн тесен вӑл пирӗн районти Анат Чакӑ ялӗнче 1888 ҫулта ҫуралнӑ. 1903-1909 ҫҫ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ, К. Ивановпа туслӑ пулнӑ. Шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Элӗкри икӗ класлӑ училищӗре вӑй хунӑ. Тури чӑвашсен юрри-кӗввине, сӑвви-

такмак не, калаçăвне çырса илнĕ, ялта хор йĕркеленĕ. 1912 çулта Чĕмпĕрте Пазухи нăн «Чăваш халăх юррисен тексчĕсем» ятлă кĕнеки çапăнса тухать. 1914 çулта ăна тĕнче вăрçине илеççĕ, 1917 çулта йывăр аманнă хыççăн вилсе каять.

*(Кĕнекери вăйă тата туй юррисем янăраççĕ)*

1) Мĕнле историлле вырăнсене çутатса панă?

8-мĕш вĕренекен. А.Артемьев ăслă тишкерўçĕ, критик та. Унăн статйисемпе рецензийĕсем (вĕсенчен ытларахăшĕ «Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ» кĕнекере пичетленнĕ) нумай произведение тĕрĕс хак пама, лайăхрах ăнланма пулăшрĕç.

*(Кĕнекепе паллаштарать).*

9-мĕш вĕренекен. А. Артемьев – ăста куçаруçă та. И.Тургеневăн «Пирвайхи юрату» повеçне, Б.Полевойăн «Чăн-чăн этем çинчен çырнă повеçне», А.Герценăн «Пулни-иртни тата шухăшсем» роман-хроникине, И.Гончаровăн «Обломов», Л.Толстойăн «Вăрçăпа мир» романĕсен сыпăкĕсене куçарнă вăл. Çавăн пекех шкулта вĕреннĕ чухнех Гете, Гейне, Шиллер, Байрон, Пушкин, Лермонтов, Блок, Есенин сăввисене чăвашла куçарнă.

<u>Ертсе пыракан.</u> Халĕ И.Тургеневăн «Первая любовь» романĕн пĕр сыпăкне вырăсла тата чăвашла вулăпăр.

И. Тургенев. «Первая любовь» (89 стр.)

«Но я чувствовал себя до такой степени счастливым, что, как говорится, в ус не дул и в грош не ставил ничьих насмешек и ничьих косых взглядов. Зинаида продолжала оказывать мне предпочтение и не отпускала меня от себя. В одном штрафе мне довелось сидеть с ней рядом, накрывшись одним и тем же шелковым платком, я должен был сказать ей свой секрет. Помню я, как наши обе головы вдруг очутились в душной, полупрзрачной, пахучей мгле, как в этой мгле близко и мягко светились ее глаза и горячо дышали раскрытые губы, и зубы виднелись, и концы ее волос меня щекотали и жгли. Я молчал. Она улыбалась таинственно и лукаво и наконец шепнула мне:»ну что же?», а я только краснел и смеялся, и отворачивался, и едва переводил дух...».

«Пирвайхи юрату» (20 стр. А. Артемьев куçарăвĕ).

Анчах эпĕ хама хам çав тери телейлĕ туйрăм: хăй калашле, хăнк та тумарăм, хамран тăрăхласа кулнине те, хам çине куç хўрипе пăхнине те ним тĕшне хумарăм.Зина мана пĕр май ыттисенчен ытларах кăмăл турĕ, хăй çумĕнчен ямарĕ. Пĕр штрафĕнче мана унпа юнашар пĕр пурçăн тутăрпа пĕркенсе ларма тиврĕ: манăн ăна хамăн вăрттăнлăха пĕлтермеллеччĕ. Ас тăватăп, пирĕн пуçăмăрсем çав пăчă, çурма çутă тĕттĕмре юнашар пулчĕç, çав тĕттĕмре унăн куçĕсем çывăх та ачашшăн çуталчĕç, уçăлса тăракан тути вĕрин сывларĕ, шăлĕсем йăлтăртатрĕç, çўç вĕçĕсем ман питĕме кăтăкласа

çунтарчěç. Эпě сăмах чěнмерěм: хěр вăрттăн та чеен йăлкăшса кулчě, юлашкинчен: «Мěн-ха?»- тесе пăшăлтатрě; эпě хěрелтě кăна, култăм, пуçăма пăртăм, аран сывлăш çавăртăм...

Ертсе пыракан. Пěр сыпăках икě чěлхепе вуларăмăр. Мěн асăрхарăр?

*(Чěлхе янăравлăхне, сăмахсемпе перекетлě усă курнине).*

Ертсе пыракан. Акă эпир сирěнпе телекуравçăсене тата студире ларакан хăнасене чăвашсен паллă çыннипе А. Артемьевпа, унăн пархатарлă кун-çулěпе паллаштарса пěтěмлетрěмěр. Сирěн А.Артемьев хайлавěсене вулас кăмăл çуралчě пулсан, çак кěнекесене сěнетпěр (А. Артемьев кěнекисенчен тата ун çинчен çырнă статьясен выставкипе паллаштарать).

- Пирěн телестудин иртнě кăларăмěнче ӳнерçěсен конкурсě пуласси çинчен пěлтернěччě. Конкурс ячě: «А. Артемьев – вулакансен пултарулăхěнче». Паллашар-ха кунта килнě ěçсемпе:

- пěрисем ӳкерчěк тунă;

- тепри сăвă çырнă *(вуласа парать);*

- теприсем ун юррине вěреннě *(«Çуралнă çěр-шыв» юррине юрласа параççě).*

Ертсе пыракан. Халě тележурналиста сăмах паратпăр*. (Вăл ларакансене ыйтусем парать).*

- Эсир А. Артемьевăн мěнле кěнекисене пěлетěр?

- Пěрремěш кěнеки мěн ятлă?

- А.Артемьевăн мěнле хисеплě ятсем пур?

- Писатель ăçта çуралнă?

- Салтак сукмакě ăна ăçта-ăçта илсе çитернě?

*(Курск Пěкки, Карпат тăвěсем, Çěвел тухăç Пруссии, Кенигсберг, Маньчжури)*

- Унăн пурнăç девизě хăш произведенийěнче палăрать тесе шутлатăр? *(«Ан авăн, шěшкě!»)*

Журналист. Тавах тěрěс хуравсемшěн!

Ертсе пыракан. «Манăн çăлтăр тӳпере!» - тет кашни чăваш. Çав çăлтăрсем хушшинче пěри уйрăмах çуттăн çуталать. Чăваш поэзийěн тӳпинче Иванов-Çеçпěл-Хусанкай çăлтăрěсем çутăрах пулсан, чăваш прозин тӳпинче А. Артемьев çăлтăрě çутăраххисенчен пěри.

Унран, унашкал пултаруллă çынсенчен ěнтě чăвашсен культурипе искусстви чěрě вăй-хал илсе тăрать. Ытларах та калама пулать: пěтěм совет литературин сăн-сăпатне хăйне евěр илемлě тěс хушать. Апла пулсан, хăй пирěнтен ěмěрлěхе уйрăлса кайрě пулсан та, унăн çуталса тăракан пултарулăхě нихçан та тěсне çухатмě, тěксěмленмě.

«Çӳл тӳпере çăлтăр вылять»,- тенě вăл пěр сăввинче. Унăн çăлтăрě яланах вылятăр.

Паянхи передачăна хутшăннă юлташсене пысăк тав! Ман шутпа, вĕсем чи аван паллăна тивĕçлĕ!

Сывă пулăр! Эфирта тепре тĕл пуличчен!

*(Чăваш юрри янăрать. Урок вĕçĕ).*

## «И.Я. ЯКОВЛЕВПА УНĂН ВĔРЕНЕКЕНĔСЕМ А. АРТЕМЬЕВ ХАЙЛАВĔСЕНЧЕ»

Килти вулав урокĕ

Чăваш литератури (11 класс)

Тĕллевсем: 1) Чăваш халăх писателĕн А. Артемьевăн историлле роман çырас ăсталăхĕпе паллашасси.

2) «Хунавлах хăрнисем», «Тăвăл умĕн» романсенче чăваш наци культурине ӳстерес тĕлĕшпе хастаррăн ĕçленĕ çынсен сăнарĕсене витĕмлĕн те ĕнентерӳллĕн кăтартни.

3) Романри пултаруллă генисенчен, талантлă çамрăксенчен тĕслĕх илсе, халăх ĕçĕшĕн, общество ĕçĕшĕн ырми-канми тăрăшас туйăма вăратасси, çав тĕллеве ĕмĕр тăршшĕнче пурнăçлама хавхалантарасси.

Кирлĕ хатĕрсем: А. Артемьев кĕнекисен выставки;

альбомсем (И. Яковлев, К. Иванов т.ыт.те)

магнитофон е проигрыватель;

ӳкерчĕксем; «Халал» (И. Яковлев); портретсем.

**Урок юхăмĕ.**

1. Урок пуçламăшĕ. Учитель сăмахĕ.Урок тĕллевĕ, йĕрки.

II. Тăвăл умĕн», «Хунавлах хăрнисем» романсен кĕске содержанийĕ *(ачасем каласа параççĕ).*

III. «Сăнарсене куç умне кăларса тăрататпăр»

<u>1-мĕш вĕренекен</u> (И.Я. Яковлев сăнарĕ):

Паян – 1908 çулхи çуркунне – ака уйăхĕн юлашки кунĕсенчен пĕри. Ас туса юлăр çак куна, ачасем! Чăваш çынни халлĕхе тĕттĕмха, унăн çутă кунне шанман тăшмансем, пире çул çинче такăнтарма хăтланакансем, нумай-ха. Анчах эсир вĕсене ан пăхăр, хăюллă пулăр, малтан мала çул хывма тăрăшăр. Лайăх вĕренсе ăс илĕр, халăх хушшине кайса çутă сарăр. Пĕтĕм шанчăк сирĕнте - çамрăксенче. Вăхăт çитĕ – чăваш хушшинчен пысăк ученăйсем, ăслă кĕнекеçĕсем, чаплă писательсем тухĕç. Йĕр хывнă ĕнтĕ, çул уçнă. Вăхăт çитĕ.

Эсир халĕ хунавсем кăна-ха, анчах эсир – вĕренсе çутăлма телей тупнă чăвашсем. Ас туса тăрăр! Хăвăрăн тăван халăхăра эсир пулăшса пурăнмалла, вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе кĕтсе тăмалла мар! Ан шанăр! Вĕсене вĕрентсе

çутăлтарас ĕç пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Тăван халăхăрăн çуклăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен ан вăтанăр: эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле... Кĕçĕн тăванăрсем умĕнче эсир хăвăр парăмăра манманшăн халăх кăмăлĕ Сире кирлĕ таран тавăрĕ. Ан манăр çакна, ас туса тăрăр!

2-мĕш вĕренекен. Ырă чăваш тупăнчĕ...

Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне, чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене
Çĕнĕ пурнăç кайрĕ çав!
Пур çĕрте те ялсенче
Хура халăх хушшинче
Хут вĕрентме тытăнчĕç,
Шкулсем нумай уçăлчĕç.
Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте
Аслă чăваш шкулĕнче. *(К.В.Иванов. «Хальхи самана», 1908 çулхи октябрĕн 28-мĕшне)*

3-мĕш вĕренекен. Унта пĕр чăваш Иван,

Мĕскĕн тăлăх-туратран
Вĕренсе ăсла тухса
Хăй вĕрентнĕ-мĕн ăса.

Ял çинче ятне пĕлмен
Ачаран вăл çĕкленсен,
Иван Яккăльчча вара
Пурте пĕлнĕ таврара. *(П.Хусанкай. «Тăван çĕршыв»)*

4-мĕш вĕренекен. (К.В.Иванов сăнарĕ).

Тусăмсем! Эпĕ ĕненетĕп: çакнашкал чаплă юрăсем хайлакан халăх – чăннипех пысăк чунлă халăх! Умра унăн пуласлăхĕ – малашлăхĕ пур! Иван Яковлевич калашле, çакнашкал сăвă-юрăллă халăх нихçан та пĕтме пултараймасть, анчах вăл тĕттĕмре пурăнать. Ăна çутта кăлармалла! Халăх пултарулăхĕн чăн-чăн ахахĕсене ырми-канми пухар, пĕр ахахĕ Те çĕрте выртса ан çухалтăр. Пĕтĕм вăй-хала, чун хавалне, пурнăçăмăра халăх ĕçĕшĕн хурар, тусăмсем! Халăх пире ырăпа асăнĕ!

5-мĕш вĕренекен. Çакă çутă тĕнчере

Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

6-мĕш вĕренекен. Асап килсен, хĕн килсен

Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,

Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур –
Килчĕç хура пĕлĕт пек. *(К.Иванов)*

7-мĕш вĕренекен. Эпĕ мĕн çамрăкран – выртмара-и
Е çурхи урамра, вăйăра,
Е хĕрӳ ĕç çинче, выртмара-и,
Нимере-и е шавлă туйра,
Ваттисем-и яраççĕ ăстайлăн
Ĕмĕрхи халапне-юмахне,
Сар хĕрсем-и юрлаççĕ сăпайлăн
Юрату юррине-сăввине –
Эп пуçтартăм мерченĕн-ахахăн
Йăлтăран сăмахсен шăрçине,
Эп вĕрентĕм сăмахăн-сăмахăн
Шăнкăр-шăнкăр чăваш чĕлхине. *(А. Артемьев)*

8-мĕш вĕренекен. (Ф. Павлов çинчен калать).

Федор Павлов – чăвашсен паллă драматургĕ, фольклорисчĕ, композиторĕ. Сăвăсем те çырнă вăл. Унăн «Ялта» драмипе «Судра» комедийĕ Чăваш литературинче сумлă вырăн йышăнаççĕ.

Халăхран çырса илсе илемлетнĕ Юррисем халăхăн чи юратнă юррисем пулса тăчĕç. Вĕсем хушшинче: «Çырма хĕрне ансассăн», «Йĕс таканлă», «Пирĕн урам анаталла», «Тӳнкки-тӳнкки», «Туй юрри», «Линкка-линкка» тата ыттисем те.

(Пĕр юррине итлемелле: е магнитофонпа, е ачасем юрлаççĕ).

9. Вĕренекенсен ушкăнĕ. («Тăвăл умĕн» кĕнекерен хатĕрленĕ инсценировкăра Тайăр Тимкки сăнарне кăтартаççĕ):

Беляев. Акă пирĕн çамрăк туссем те çитрĕç! Иртĕр малалла, хывăнса ларăр пирĕнпе, шăнтăр пулĕ-ха! (*Тумтирĕсене хывса лараççĕ)*.

Çамрăксем. Сывлăх сунатпăр!

Беляев. Çĕнĕ çул çитрĕ, юлташсем!Кил хуçи пек пулса, сире сăрапа хăналама ирĕк парсамăр. *(Сăра тултарса парать, ура çине тăраççĕ).* Ман сăмахăм кĕске пулать, хаклă тусăмсем, мĕн каламаллине паçăрах калаçса татăлнă ĕнтĕ – халĕ хамăр тупана пурнăçламалли çеç юлать. Çĕнĕ çулта çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн, çĕнĕ çĕнтерӳшĕн, ирĕклĕ чăваш ĕç хресченĕшĕ! (*Сăрине шаккаса ĕçеççĕ).*

Прамун. Тĕрĕс калатăн, Николай Федорович! Чи революциллĕ Вырăс пролетариачĕшĕн, хамăр Сормовăри паттăр рабочисемшĕн!

Беляев. Юлташсем! Поэта сăмах паратăп. Тархасшăн, Тимофей Семеныч! *(Пурте алă çупса яраççĕ).*

Прамун. Сăвă! Сăвă, Тимкка! (*Хура пиншак, хура кĕпе, тĕпленĕ çăматă тăхăннă Тимкка маларах тухса хăй çырнă сăввине вулать).*

Шухăш.

Хирте, суха хыçĕнче
Эпĕ нумай çӳрерĕм,
Çĕрĕн йывăр ĕçĕнче
Нихçан ырлăх курмарăм.
Пирĕн йывăр ĕçлени
Мĕншĕн ахаль çухалать?
Пирĕн мĕн пур тар тăкни
Харам пырта саланать.
Йĕри-тавра куççулли,
Йĕри-тавра йынăшни...
Вĕçĕмсĕ тĕнче тулли
Вăйсăр халăх юн тăкни.
Мĕншĕн, мĕскĕн халăхсем,
Эпир çапла тӳсетпĕр?
Çитĕ пире тертленме!
Пурте пĕрле пухăнар,
Тĕрлĕ харам пырсене
Ĕнсе çинчен пăрахар!

Беляев. Мĕнле тĕрĕс калать! Мĕнле çыпăçăллă калать!

Прамун. Ну, тусăмсем, саланар! Ыран сире çĕнĕ задани пулать. Васильев, эсĕ Апаша листовкăсемпе каятăн, унта митинг пулать. Эсĕ, Беляев, Патăрьелне кайса Семенов килсе панă чăвашла листовкăсене салатăн. Пурте. Каяр! (*Тухса каяççĕ).*

10-мĕш тата 11-мĕш вĕр-сем. (*И.Е. Тăхти сăнарне кăтартаççĕ).*

- Акă хĕрарăм кĕпи. Специалистсем калан' тăрăх, вăл авалхи римлянкăсен туники евĕрлех иккн. Кĕпе умне асăрха-ха: кăкăрăн сулахай енне тĕрлемен, апла пулсан вăл хĕр кĕпи. Сылтăм енне хĕвел хурми туса хунă. Хĕвел – пурнăç символĕ. «Кĕскĕ» теççĕ çак асамлă тĕрре. Хĕр арăмăн икĕ кĕскĕ пулать, хĕрсен чĕри тĕлĕнче - таса.

- Мĕншĕн апла хăрах тĕрĕ кăна?

- Ара, хăраххине, ун чĕрине никам та йышăнманнине пĕлтерет вăл. Анчах çак ирĕклĕ чĕре пуриншĕн те уçă мар иккен, çавăнпа хĕрсем сулахай кăкăр урлă кĕмĕл тевет çакнă.

- Эсĕ кашни тĕрĕре пĕр-пĕр символ тупма хатĕр иккен, Илья Ефимович?

- Мĕнле – эпĕ? Манран килмест ку, иптеш Пазухин. Акă кур-ха, сана тепĕр тĕлĕнтермĕш кăтартам. «Таш тутри» теççĕ çакна. Хăйне хисеплекен чăваш хĕрĕ ташă картине нихçан та çак тутăрсăр тухман. Темшĕн-çке, тĕррине «ухмах тĕрĕ» тенĕ. Ытарлă калан' пулас. Ăна

пур çын та ӳкерме пултараймасть. Пĕлетĕн-и, иптешĕм, чăваш тĕрринче 26 тĕслĕ çĕвĕ.

- Эсĕ чĕрĕ энциклопеди пекех, Илья Ефимыч! Сан пеккисем нумайрах пулсанччĕ пирĕн!

12-мĕш вĕренекен. Мĕн тери çивĕч куç, мĕн тери ăста алă, мĕн тери пысăк туйăм кирлĕ çакна тума! Ку вĕт – музыка, сăмахпа каласа пама çук илемлĕ кĕвĕ! Кашни тĕррине сĕрме купăспа калама пулать. Çакнашкал ăста чăваш тĕррисене ĕнтĕ ют патшалăхсенчи музейсенче кăтартаççĕ. Чăнах та, талантлă халăх эпир!

*(Сĕрме купăс сасси илтĕнет).*

Учитель сăмахĕ: 1997 çулта ентешĕмĕрпе – Геннадий Айхи поэтпа пĕрле Америкăри Кентукки университечĕн профессорĕ Джерри Янечек килнĕччĕ. Пирĕн шкул музейĕнчи сурпансене курсан чăнах та питĕ тĕлĕнчĕ. Ăна тĕрлесе çеç мар, пир вырăнĕ çинче тĕртсе тунине пĕлсен – пушшех те! Чăтаймарĕ, асăнмалăх парнелеме йытрĕ. Пур кăмăлтан парнелерĕмĕр. Ан тив, курса тĕлĕнччĕр чăваш хĕрарăмĕн ăсталăхне ют çĕр-шывсенче те! Килне çитсен хăна çыру çырса тав турĕ, кĕнеке ярса пачĕ.

*(Çырăвне, парнене кăтартать).*

13- мĕш вĕренекен. - «Хунавлах хăрнисем», «Тăвăл умĕн» рамансенчи Петр Пазухин сăнарĕ Пирĕншĕн уйрăмах çывăх, мĕншĕн тесен вăл 1898 çулта Патăрьел районĕнчи Анат Чакă ялĕнче çуралнă. 1909 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çултах учительте ĕçлеме пуçланă. Етĕрне, Чикме уесĕсенче, Элĕкре, Муркашра ĕçленĕ вăл. 1912 ç. Чĕмпĕрте П.Пазухинăн «Чăваш халăх юррисен тексчĕсем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă. 1914 ç. ăна пĕрремĕш тĕнче вăрçине илеççĕ, 1917 ç. йывăр аманнă хыççăн вилсе каять.

14-мĕш вĕренекен. *(П. Пазухин сăнарĕ).*

- Мăнтарăн çыннисем! Вĕсем хăйсем пекех чăваш çыннисем хитре çи-пуçпа çӳренинчен, вăл тăван чĕлхепе чипер калаçнинчен тĕлĕнеççĕ. «Нивушлĕ хамăр пек чăвашах пулчĕ вара ку? - теççĕ. Çавна курса чун ыратать. Хăйсене хăйсемех мĕскĕне хума хăнăхнă çавнашкал хавшак чунлă этемсен халне-хавалне, мăн кăмăллăхне хускатма, çĕклеме пĕтĕм чĕререн тăрăшмалла! Унсăрăн пĕтĕм халăх тепĕр хут çуралса çĕкленессе шанма çук! Тĕрĕс калатчĕ Иван Яковлевич! Тĕрĕс калатчĕ Кĕçтук та! Хамăр çуралнă çĕр-шыва, ĕçчен те сăпайлă халăхăмăра, унăн пултарулăхне юратман, шанман пулсан, эпĕ Чĕмпĕртен çакăнта – «тĕттĕм упа шăтăкне» килсе кĕмен пулăттăм. Эпĕ тăван музыкăна ĕмĕрлĕхех юратрăм, ăна тĕпчесе вĕренме, халăх юррисене пухма тусăмсен умĕнче тупа турăм. Çак ĕç ман пурнăçăмри тĕп тĕллев пулса тăчĕ. Эпĕ шкулта ачасене вĕрентнĕ хушăрах ялтан яла çӳресе юрă ăстисене шыратăп. Пыл

хурчĕ кашни чечекрен пĕрер пĕчĕк тумлам та пулин шерпет илнĕ евĕр, эпĕ кашни юрăçран пĕрер юрă çырса илсен те хама телейлĕ çын пек туятăп. Çак ĕç мана ывăнтарма е тĕрлĕ кӳренӳ çеç кӳме мар, савăнăç, хаваслану, вăй-хал парать.

*(«Образцы мотивов чувашских песен» кĕнекерен П. Пазухин çырса илнĕ кĕвĕ янăрать).*

15-мĕш вĕренекен. Романра историлле сăнарсем татах та пур. Сăмахран, Николай Васильевич Васильев (Шупуççынни): унăн «Хитре Чĕкеç» поэми çак тапхăрта çуралнă.

Чăваш театрне пуçарса яраканĕн, чăвашсен пĕрремĕш артисчĕн тата режиссерĕн Иоаким Максимов – Кошкинскин те пултарулăх çăлкуçĕ Чĕмпĕр чăваш шкулĕ пулнă.

Илле Тăхти, Федор Николаевич Николаев – Сергеев, Иван Космовский тата ыттисен сăнарĕсем произведенире ытла та чĕррĕн куç умне тухса тăраççĕ.

(*Ачасем Ф.Павловăн «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» юрра юрлаççĕ*).

IV. Учитель сăмахĕ. – «И.Я.Яковлев вĕренекенĕ – пирĕн ялтан».

- Пирĕн ялтан та Чĕмпĕрти И.Яковлев шкулĕнче вĕреннĕ çын пулнă. Вăл – Клавдия Федоровна Федорова, 1890 çулта Каншел ялĕнче çуралнă. 1920 ç. Çĕньяла качча килнĕ.

Ашшĕ чиркӳ ямшăкĕ пулнă пирки час-часах тĕрлĕ çĕртен килекенсемпе тĕл пулнă. Пĕррехинче Чĕмпĕртен пысăк çынсем килнĕ (камне ас тумасть – тен, Иван Яковлевич хăех пулнă). Ашшĕпе калаçнă хыççăн Клавдине Чĕмпĕре вĕренме яма сĕннĕ. Çапла вăл 1911-1914 ç.ç. унта вĕренни çинчен ăшă кăмăлпа аса илетчĕ. Уйрăмах Иван Яковлевич мăшăрне – Екатерина Алексеевнăна питĕ юратнă вĕсем. Хĕр ачасене вĕрентекен учительница кĕпе çĕлеме вĕрентнĕ, çӳçĕсене çивĕтлесе янă, тăлăх ачасене хăй ачисен тумтирне те панă.

Шел пулин те, ку шкула пĕтернине çирĕплетекен документ упранса юлман. (Е ăна пама та вăхăт пулман, мĕншĕн тесен пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнă). Клавдия Федоровна 30 çула яхăн учительте ĕçленĕ, мĕн ватăличчен пурăннă – 93 çула çитсе вилнĕ. «Юратса ĕçлеттĕм ĕçĕме», - тетчĕ вăл яланах хăйĕн аса илĕвĕсенче.

V. «А. Артемьев кĕнекисене хак паратпăр».

1) Вĕренекенсем романсем тăрăх тунă ӳкерчĕксене пăхса тухни.

2) ТЕСТ ыйтăвĕсене хуравласси.

1. Хăш хайлав А.Артемьевăн?

1. «Ылтăн вăчăра».

2. «Симĕс ылтăн».

3. «Ылтăн йăлмак»

2. Хăш сăнар А.Артемьев хайлавĕнчен?

1. Варсун.

2. Самсун.
3. Симун
3. Хăш хайлав А.Артемьевăн мар?
1. «Çунатлă çуралнисем». 2. «Хунавлах хăрнисем»
3. «Пулас кинсем»
4. Çаксенчен кам Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ?
1. Иван Юркин. 2. Владимир Ухли. 3. Стихван Шавли
5. Кам Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренмен?
1. Раиса Сарпи. 2. Ваçça Аниççи. 3. Трубина Мархви
6. И.Яковлев çинчен кам «Кушкă ачи» повесть çырнă?
1. Юхма Мишши.2. Илле Тăхти. 3. Тихăн Петĕркки
7. Чăваш писателĕсенчен кам И.Яковлевпа пĕр ялта çуралнă?
1. Александр Алка. 2. Василий Алакĕр. 3. Василий Алентей
8. Петр Пазухин кампа туслă пулнă?
1. Василий Краснов-Асли. 2. Н. Шупуççынни. 3. Исаев Мĕтри
9. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ мĕнле юхан шыв хĕрринче вырнаçнă?
1. Атăл. 2. Çавал. 3. Сăр
10. А. Артемьев кам мар?
1. Поэт-лирик. 2. Писатель-прозаик. 3. Писатель-драматург
*(Тĕрĕс хуравсем: 2131131223)*

*4)* А. Артемьев романĕсенчи çунатлă шухăшсем, ытарлă сăмах çаврăнăшĕсем, витĕмлĕ каларăшсем *(ачасем шыраса тупаççĕ).*

- кĕсьере ман ним те чăнкăртатмасть, выç хырăмра кăна тем пăкăртатать;
- ăратлă автан пуласси çăмартара чухнех авăтнă тет;
- ӳркенмен ăста пулнă, вăтанман юмăç пулнă;
- çуркуннехи ыйхă – кĕркуннехи хуйх;
- хӳмелли – хӳмеллине, çатанли - çатанлине шырать;
- çынĕ муллансан – чунĕ чулланать;
- ылтăн хăй кăвакармасан та нумай çынна кăвакартать;
- укçа улача мар, килте тĕртсе тăваймăн;
- хупах енне çаврăнсан ыр хуçа та хуçăлать;
- сайра килен хăнана сăмахпа сăйламаççĕ;
- юмахĕ юмах та чăнни те чăнах;
- тăлăхăн хырăмĕ пысăк;
- хур шăмми тытыкан хур пулман теççĕ;
- хĕрарăма хутла вĕрентни хăйăртан вĕрен явни;
- пĕр пус укçана хаклама пĕлмен çын хăй те çур пуса тăмасть;
- эрехе савакан çын хăйне савмасть;
- укçа – тĕнче хăлăпĕ;
- ырлăха – перекет, хамăра – хал-хавал;
- черкке пысăк – чĕре пăсăк т.ыт.те.

VI. Учитель сӑмахӗ: Ҫак ҫунатлӑ сӑмахсене вуланӑ хыҫҫӑн романти пӗр сыпӑка тӗплӗнрех тишкерес шухӑш ҫуралчӗ. Ачасем, эсир те манпа килӗшетӗр пуль тетӗп.

1) ТЕКСТПА ЕҪЛЕССИ. (Романӑн пӗр сыпӑкне илсе тимлӗ вуласа тухасси).

Малтанхи кунсенче Кӗҫтука хӑйӗн пӗчӗк пӳлӗмӗнче выртма питӗ кичем пулчӗ.

Пӗртен-пӗр чӳрече кил картинелле тухать. Кантӑк витӗр пӑхсан та, чи малтанах умри шурӑ чул хӳме тӗрме хӳми евӗр курӑнса каять. Ун урлӑ аякри ту тӑррисем, хуралса ларакан вӑрмансем, ҫаралса юлнӑ хирсем курӑнаҫҫӗ,- вӗсем Кӗҫтукӑн тунсӑхне пушшех ӳстереҫҫӗ, ахаль те тӑвӑр пӳлӗме пушшех тӑвӑрлаҫҫӗ. Хутран-ситрен Чӗмпӗртен Ёпхӳ еннелле пуйӑс кӗрлесе, хурлӑхлӑн кӑшкӑртса иртни илтӗнет, ҫав сас Кӗҫтука таҫта аякка чӗннӗн туйӑнать.

Татти-сыпписӗр ҫумӑрлӑ кунсенче ҫут ҫанталӑк тӗксӗмленсе, салхулланса килет, чирлӗ ҫынна ҫак пӳлӗмре кӑна мар, пӗтӗм тӗнчере хӑй пӗр-пӗччен тӑрса юлнӑ пекех туйӑнать.Ун пек чух пурнӑҫ пачах пӗтменнине тӗрлӗ вак-тӗвек япала ас тутарать:кӑмака хыҫӗнчи ӑшӑра шӑрчӑк юрлать, хапха ҫумӗнчи вӑрӑм шӑчӑ ҫинче, шӑнкӑрч йӑвинче, хуҫа пулса юлнӑ ҫерҫи хӑюллӑн чӗвӗлтетет тата юнашар пысӑк пӳлӗмре, минутсерен ӗмӗр иртсех пынине систерсе, пысӑк сехет шаккать...

Ах, кичем-ҫке! Тем пекех ялт! сиксе тӑрса, урама, хире чупса тухасчӗ, Силпи улӑхне ҫитсе курасчӗ! Пуйӑс ҫине ларса, аякка-аякка каясчӗ! Анчах йывӑр амак ниҫта та ямасть. Кунӗпе маччаналла е эрешлӗ тимӗр кравать пуҫӗ ҫине пӑхса вырт. Кӗҫтука вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн хӑйӗн пӳлӗмӗ ҫава шӑтӑкӗ пек, кравачӗ тупӑк пек туйӑнать. «Тен, ҫакӑн пек тертлӗ-асаплӗ вырӑнпа выртнӑ чух Гейне хӑй кравачне тупӑкпа танлаштарнӑ пуль? - шухӑшлать поэт. – Чӑн, чирлӗ выртан ҫынна ылтӑн кравать те килӗшес ҫук».

Хӗл ҫаплах лармасть-ха, ҫанталӑк ӑшӑ тӑрать. Малтанхи юр ӳкнӗренпе икӗ эрне ҫитрӗ – хура кӗр вӑхӑчӗ те иртрӗ, пӗтӗм вилӗмсӗр ҫут ҫанталӑкӑн хӑйӗн саккунӗсем, унӑн тӗлӗнтермӗшӗсем те сахал мар. Кӗҫтук амӑшӗ каланӑ тӑрӑх, чӳрече умӗнче саркаланса ларакан улмуҫҫи хура кӗркунне сасартӑк... ҫеҫке ҫурнӑ! Ҫуркуннехи пек шап-шурӑ ҫеҫке!

«Эй, ман сывлӑхӑм та, ман маттурлӑхӑм та тепӗр хут ҫапла таврӑнсанччӗ!– ӑмсанса шухӑшларӗ Кӗҫтентин. - Ҫапах та кӗрхи ҫеҫкен ӗмӗрӗ нумая пырӗ-ши?..»

2) ТЕКСТ ТИШКЕРӖВӖН ЙӖРКИ.

*- Текста ят парасси (Тӗрлӗ ят парса пӗр шухӑш патне пырса тухмалла).*

- Хӑш йӗркесенче текст ячӗ палӑрать?

- Хăш йĕркесенче текстăн тĕп шухăшĕ пытаннă*?(Кĕрхи çеçке нумая пырĕ-ши»)*

- Мĕншĕн кĕрхи çеçке савăнăç кӳмест? (Япала ячĕсене паллă ячĕсемпе пĕрле çыраççĕ: чул хӳме – тĕрме хӳми – тăвăр пӳлĕм – пуйăс сасси – эрешлĕ Тимĕр кравать пуçĕ - çăва шăтăкĕ – тупăк – хура кĕр – улмуççи çеçки).

Пĕтĕмлетӳ: Урама тухма пултарайман, çут çанталăк илемне чӳрече витĕр çеç сăнама пултаракан чирлĕ çыншăн çеçке савăнăç пулма пултараймасть.Çитменнине, çеçке çурăлнине те амăшĕ каланă тăрăх çеç пĕлет.

- Схема (кластер) ӳкерсе ăна «калаçтаратпăр».

- Текст тĕсне, стильне палăртатпăр. *(Калав, илемлĕ литература стилĕ).*

- Текста микротемăсем çине пайласси.

- Текстри япала ячĕсемпе паллă ячĕсем (схемăра).

Пĕтĕмлетӳ: текстри япала ятне ăнлантаракан паллă ячĕсем пурнăç паллине кăтартмаççĕ, апла пулсан чирлĕ çынна савăнтараканни нимĕн те çук - çеçке те савăнтармасть.

- Текстри риторикăлла ыйтусемпе предложенисем чун-чĕрери туйăма сисме-курма вĕрентни: * ах, кичем-çке!

* Силпи улăхне çитсе курасчĕ!.. / * ... аякка-аякка ларса каясчĕ!

* ... тепĕр хут çапла таврăнсанччĕ!..

- Текстри илемлĕх мелĕсене тупасси (танлаштару, эпитет, метафора т.ыт.те).

- Текст мĕнле шухăш-туйăм çуратать*? (Юлашки ыйту çине хурав пани)*

VII. УРОКА ПĔТĔМЛЕТНИ.

<u>Учитель сăмахĕ.</u> Çак урокра хамăрах курса ĕнентĕмĕр: А.С.Артемьев революцичченхи самана çинчен çырнă икĕ томлă историлле романра ĕç халăхĕн социалла кĕрешĕвне, «патша тĕрминчи» талантсен синкерлĕ шăпине анлăн кăтартнă, чăваш наци культури шайне ӳстерес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçленĕ çынсен–И.Я. Яковлевăн,К.В. Ивановăн, Н.В. Шупуççыннин, Ф.П. Павловăн, П. Пазухинăн, Илле Тăхтин тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе çыхăннă ытти сăнарсене те витĕмлĕн кăтартса панă.

Романра халăх историйĕ те, культури те, искусствин тĕрлĕ тĕсĕсем те яр уççăн курăнаççĕ. И.Яковлевăн «Халал» сăмахĕсемпе вырăнлă усă курнă. Историллĕ фактсем те литература композицийĕпе сюжетĕнче çыпăçуллă вырнаçнă.

Писатель чĕлхи таса, пуян, сĕткенлĕ. Вăл «Чăваш халăх писателĕ» ята чăннипех тивĕçлĕ.

Пирĕн вара романри пултаруллă генисенчен, талантлă çамрăксенчен тĕслĕх илсе, халăх ĕçĕшĕн, общество ĕçĕшĕн ырми-

канми тăрăшма вĕренесчĕ, Турă панă пултарулăха сая ярас марччĕ, кирлĕ тĕллевпе усă курасчĕ.

VIII. КИЛЕ ПАНĂ ĔÇ.Тишкернĕ текст тăрăх рецензи сочинени çырса килмелле.

IX. УРОКА ВĔÇЛЕНИ. Оценкăсем лартни.

*(Илемлĕ чăваш кĕвви янăрать).*

<u>Хушса пани.</u>

*Рецензи сочинени (тĕслĕх)*

*Йывăр амак тыткăнĕнче*

*Пирĕн умра текст. Эпĕ ăна «Йывăр амак тыткăнĕнче» тесе ят патăм, мĕншĕн тесен унта чĕрĕлейми чирленĕ çын (К.Иванов) пĕччен асапланса кунпа çĕре ирттерни çинчен çырса панă.*

*Текста калав теме пулать, ăна илемлĕ литература стилĕпе çырнă.*

*Текстăн тĕп шухăшĕ: чирлĕ çын йывăр амака çĕнтерес ĕмĕтпе пурăнни, анчах çав ĕмĕт пурнăçланаймассине пĕлсе пурăнма пушшех те йывăр пулни. Ку шухăша çак сăмахсем палăртаççĕ: «пуйăс сасси аякка чĕннĕн туйăнать», «Силпи улăхне çитсе курасчĕ», «вилĕмсĕр çут çанталăкăн хăйĕн саккунĕсем», ман сывлăхăм та, ман маттурлăхăм та тепĕр хут çапла таврăнсанччĕ».*

*Текста çакăн пек микротемăсем çине пайлама пулать:*

1).Пĕчĕк пӳлĕм; 2)Чӳрече витĕр пăхсан. 3) Пуйăс асси. 4).Ĕмĕт.5).Пурнăç паллисем. 6).Кĕрхи çанталăк. 7).Çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕ. 8)Кĕрхи çеçке ĕмĕрĕ.

*Кашни япала – сăнар тетпĕр пулсан, Кĕçтукăн чирне, ун асапне кăтартакан сăмахсен вăчăрине йĕрлĕпĕр: пĕчĕк пӳлĕм – пĕртен-пĕр чӳрече – чул хӳме – тăвăр пӳлĕм – пуйăс сасси – салху çут çанталăк – йывăр амак ç çăва шăтăкĕ – тупăк – хура кĕр. Анчах, тепĕр енчен, Кĕçтука пурнăç паллине пĕлтерекен сăмахсем (сăнарсем) те пур: ту тăррисем (анчах вĕсем «аякра»), вăрмансем («хуралса ларнă»), хирсем («пушанса юлнă»), шăрчăк («ăшăра çеç юрлать»), çерçи («вăл та пулин хăй килĕнче мар»), сехет (ĕмĕр иртнине пĕлтерет - çавăнпа çуралнă кун ячĕпе сехет парнелеме сĕнмеççĕ), кĕрхи çеçке (пĕрремĕш сивĕччен çеç!).*

*Çапла вара урама, хире чупса тухасси, Силпи улăхне çитсе курасси, пуйăс çине ларса аякка-аякка каясси Кĕçтукăн ĕмĕтĕнче çеç юлать...*

*Чăнах та, текста вуласа тухсан эпĕ хама герой вырăнне лартса пăхрăм. Турă ан хуштăрах! Мĕнле шел вĕт-ха çамрăк çынна! Мĕншĕн çапла-ха çут çанталăк саккунĕ? Мĕншĕн çамрăксене вăхăт çитмесĕрех уйăрса каять çут тĕнчерен тискер вилĕм? Нивушлĕ ăна нимĕнле те хирĕçлеме çук?!*

*Çуках пулĕ çав... Кĕркунне çеçке çурнă улмуççи те çимĕçне параймĕ – пĕрремĕш сивĕ çитсенех шăнса пăрланĕ. Кĕçтукăн çамрăк ĕмĕрĕ те çапла сӳнсе ларасса систерет ку...*

*Салху туйăм çуратать текст. Мĕн чухлĕ талантлă çын пурнăçĕ чире пула е тĕрлĕ инкек-синкекпе, вăхăтсăр татнă чечек пек татăлать. Çавăнтах тепĕр шухăш та çуралать: юнашар пурăнакан туссем-юлташсем, кӳршĕ-аршăсем, тăвансем патне тимлĕрех пуласчĕ. Кам та пулин Кĕçтукăнннни пек лару-тăрăва кĕрсе ӳксен вĕсен тунсăхне сирме кăшт та пулин пулăшасчĕ, вĕсене сăмахпа та пулин йăпатма чун-чĕре ăшшине тупасчĕ...*

*Текст илемлĕх мелĕсемпе пуян. Кунта танлаштарусем пур (тĕрме хӳми евĕр, çăва шăтăкĕ пек, тупăк пек), сăпатлантару (пушшех тăвăрлаççĕ, пуйăс сасси ... чĕннĕн туйăнать, шăрчăк юрлать, амак ямасть, ĕмĕр иртсех пынине, хĕл лармасть), эпитет тĕслĕхĕсене усă курнă (ылтăн кравать, вилĕмсĕр çут çанталăк, хура кĕркунне). Çак илемлĕх мелĕсене пула текстра çырни те ĕненterӳллĕ пулса тухнă.*

## «АЧА-ПĂЧА СĂМАХЛĂХĔ»
## (пĕтĕмлетӳ урокĕ)
## Тăван литература (5 класс)

Тĕллевсем: 1) Халăх сăмахлăхĕ урлă ачасенче чăваш халăх йăли-йĕркине тытса пыма вĕрентесси.

2) Ача-пăча сăмахлăхĕ урлă ашшĕ-амăшĕ ачасене воспитани (сапăрлăх) тĕллевне пурнăçланине кăтартасси.

3) Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем урлă ырăпа усала уйăрма вĕрентни, сăнлăхлă-сăнарлă, ытарлă калаçу чĕлхине аталантарни.

Кирлĕ хатĕрсем: учебник; Чи-чи кăсăя» кĕнеке (П. Эйзин пухса хатĕрленĕ); карточкăсем.

### Урок йĕрки:

1.«Сăвă-юрă янăрать юрлама пĕлсен кăна» пайри темăсене вĕреннине тест тăрăх тĕрĕслесси.

А) Мĕнле сăмахлăха ача-пăча сăмахлăхĕ теççĕ?

1) ачасем вĕренекен сăвва;

2) пĕчĕк ачасем валли калакан е юрлакан тата ачасем хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен сăвă-юрă тĕслĕхĕсене;

3) кирек мĕнле сăвва е юрра.

Ă) Ансат вăйăсем тесе ача-пăча сăмахлăхĕнче мĕнле вăйăсене калаççĕ?

1) шут сăвви; 2) футбол вăййи; 3) сĕтел хушшинче выляни.

Б) Йăла уявĕсем шутне мĕнле уявсем кĕреççĕ (уявсен ячĕсене çырса пар):

1) В) Мĕнле çимĕç вăл *йăва?*

1) кайăк йăви пек пĕçернĕ çимĕç;

2) йăвари çăмартаран хатĕрленĕ çимĕç;

3) чустаран салма пек касса кăмакара пĕçернĕ, пылаклатнă çимĕç.

Г) Йăла сăвви-юррине хăçан каланă?

1) календарьти кирек хăш праçникре те;

2) килте ялан уяв ирттерес тесе;

3) ял-йышпа пухăнса ялан пĕр вăхăта пăхăнса ирттерекен уявсенче. Тĕрĕс хуравсем: 2 1 3 3

2. Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе ытларах паллашасси.

Мĕнле тĕслĕхсем пĕлетпĕр-ха эпир?

1) СĂПКА ЮРРИСЕМ.

а) Нянине – тунине,
Ачине – урине
Тăппи-таппи çӳреме,
Тăрăс-тăрăс тутарма...
Амăшне – пуçне,
Ачине - çунатне
Вăштăр-вăштăр вĕçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме...

ă) Пай, пай, паппа ту... / Аннӳ килсен тасатĕ,
Аçу килсен юратĕ, / Аппу килсен ачашлĕ,
Пиччӳ килсен сиктерĕ. / Пай, пай, паппа ту!

б) Нянине – паппине,
Ачине – сăпкине
Лăштăм-лăштăм ярăнма,
Шăппăн-шăппăн çывăрма...

В) Ачине-паппине! / Çывăр, Санюк, çывăрах.
Аçу кайнă пасара – / Кулач илсе килеп тет,
Аннӳ кайнă çырлана- / Çырла татса килеп тет.
Татнă-татнă – ывăннă, / Унтан выртса çывăрнă.
Аслати авăттăр, / Çиçĕмĕ çиçтĕр –
Ман аннене вăраттăр.

2) ЙĂПАТМАЛЛИ СĂВĂСЕМ.

а) Каш-каш, кашухха,
Кашкăртан та вăйлă пул!
Каш-каш, кашухха,
Каштаран та çӳллĕ пул!

ă) Курак, курак!
Курак килет – пăтă çакать

Чĕппи килет – сар çу ярать
Ашшĕ килет – аш ярать,
Амăш килет - çитерет.

б) Хура курак хуран çакать,
Кăвакарчăн кăвайт хурать,
Чĕкеç чĕппи чĕртсе ярать,
Салакайăк салма ярать,
Сарă кайăк сар çу ярать,
Сырăш чĕппи сыпса пăхать,
Пирĕн ачи çисех ярать.

в) Упа ура çухатнă- / Пирĕн ача туяннă.
Кашкăр ура çухатнă –/ Пирĕн ача туяннă.
Кушак ури – нимĕр, / Ача ури – тимĕр.
Утăр-утăр утаман, / Пирĕн ачи утакан.

3) ПЎРНЕ САВВИСЕМ.

а) –Пуç пӳрне, атя ларма.
- Пуç ыратать, пымастăп.
- Шĕвĕр пӳрне, атя ларма,
-Шĕвĕртетĕп, пымастăп.
-Вăта пӳрне, атя ларма.
-Вăтанатăп, пымастăп.
-Ятсăр пӳрне, атя ларма.
- Ятлаçаççĕ, пымастăп.
-Кача пӳрне, атя ларма.
- Качака тĕкет, пымастăп.

ă) –Ăçта кайрăн, пуç пӳрне?
- Çак тăванпа иксĕмĕр
Çăмах çăрма кайрăмăр.
- Ăçта кайрăн, шĕвĕр пӳрне?
- Çак тăванпа иксĕмĕр
Çăл шыв ăсма кайрăмăр.
- Ăçта кайрăн, вăта пӳрне?
- Çак тăванпа иксĕмĕр
Çапă пухма кайрăмăр.
- Ăçта кайрăн, ятсăр пӳрне?
- Çак тăванпа иксĕмĕр
Хуран çакма кайрăмăр.
- Ăçта кайрăн, кача пӳрне?
- Çак тăванпа иксĕмĕр
Çăмах -çиме кайрăмăр.

4) КУН ЯЧĔСЕМ.

а) Тунтикун ту çинчен ӳкрĕм.
Ытларикн - ыратрĕ,

Юнкун - юн юхрĕ,
Кĕçнерникун – кĕçĕтрĕ,
Эрнекун – эмеллерĕм,
Шăматкун – шăтса юхрĕ,
Вырсарникун – вăййа тухрăм.

ПĔТĔМЛЕТӲ: 1) Халăх сăмахлăхĕ урлă ачасенче чăваш халăх йăли-йĕркине тытса пыма вĕрентнĕ.

2) Ача-пăча сăмахлăхĕ урлă ашшĕ-амăшĕ ачасене воспитани (сапăрлăх) тĕллевне пурнăçланă.

3) Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем урлă ырăпа усала уйăрма вĕрентнĕ, сăнлăхлă-сăнарлă, ытарлă калаçу чĕлхине аталантарнă.

4)Пĕчĕк ачасем халиччен пĕлмен япаласемпе паллаштарнă (кайăк ячĕсем, пӳрне ячĕсем, кун ячĕсем çинчен ас туса юлнă).

3. Вăйă вылятпăр. «ЯТ ПĔЛМЕЛЛЕ» (кĕнекере – 9-мĕш стр.)

Малтан пĕр ачи вуласа паратъ, кайран – выляççĕ.

4.Юрă юрлатпăр. «Çăварни», «Сурхури», «Мăнкун» юррисенчен хăшне пĕлетĕр? *(юрласа параççĕ).*

5. Урока вĕçлени. Оценкăсем лартни.

7. Киле ĕç: Пултарулăх ĕçĕ (17 стр.).

## «АЧАСЕНЕ ПĂХСА ӲСТЕРЕССИ» ТЕМĂНА ВĔРЕНТЕССИ.
## 6 класс. Тăван ен культури

### Урок йĕрки.

1. Класа йĕркелесси.
2. Килти ĕçе тĕрĕслесси (Вĕреннине аса илни).

- Иртнĕ уроксенче чăваш кил-йышĕ çинчен мĕн пĕлтĕмĕр?

***1-мĕш вĕренекен.*** Кил-йышра тин чăмăртаннă çемьере ача кĕтнĕ. Ача-пăча çуратса, вĕсене тĕрĕс пăхса ӳстерсе çын хăй хыççăн сывă та йĕркеллĕ йăх хăварма тăрăшнă. Ашшĕ-амăшĕн ватлăхĕ те ача-пăчасăр телейсĕр, нушаллă пулнă.

Тин çуралнă ачана пĕтĕм этемлĕхпе, кил-йышĕпе тата халăхпа паллаштарас тесе авал чăвашсем ***ача чӳкĕ*** ирттернĕ. Пĕчĕк çын ячĕпе пĕтĕм тăван-хурăнташ пуçтараннă. Хăнасене сăйлама тĕрлĕ апат-çимĕç, çав шутра пуçламан çăкăр тата чăкăт пулнă. Çавăнпа ку йăлана хăш чухне ***ача чăкăчĕ*** тесе те каланă.

- Чăвашсемшĕн çемье мĕнле пĕлтерĕшлĕ?

***2-мĕш вĕренекен.*** Çыннăн пĕтĕм пурнăçĕ кил-йышра иртнĕ. Çемьере ялан тенĕ пекех ваттисем пулнă, аслашшĕ-асламăшĕ е

кукашшĕ-кукамăшĕ, ашшĕ-амăшĕ. Ватă пурри киле илем кӳрет тенĕ. Вĕсене лайăх пăхнă, юратнă, хисепленĕ, яланах итленĕ, вĕсен сăмахĕнчен иртмен.

Ашшĕ-амăшне ачасем уйрăмах юратнă. Амăш умĕнчи тивĕçĕ çинчен чăвашсем çапла каланă: «Аннӳне кашни кун хăвăн ывăç тупанĕ çинче пĕçернĕ икерчĕпе хăналасан та хăвна ыра тунине, унăн ĕçне хăвăн ĕçӳпе тӳлесе татаймастăн». Ĕлĕк чăвашсен кил-йышĕнче арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрне хисепленĕ, уйрăласси сайра пулнă, пĕтĕм ĕçе те пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутланă. Нихçан та ашшĕ-амăшĕ пăрахнă ачасем пулман. Тăлăха юлнă ачасене тăванĕсем, кӳршисем хăйсен ачисем пекех пăхса ӳстернĕ. И.Я. Яковлев та Пахомовсем хăйне питĕ юратса пăхса ӳстерни çинчен çырнă.

**3. Çĕнĕ тема.** Мĕнле наука вăл – этнопедагогика?

Этнопедагогика – ачасене пăхса ӳстерессе çинчен вĕрентекен халăх науки. Вăл çĕр çинчи чи авалхи наукăсенчен пĕри. Çакнашкал наука пур халăхăн та пулнă.

1) Ăна пуçласа тĕпчекенĕ кам пулнă?

Этнопедагогикăна пуçласа тĕпчекенĕ – чăваш ученăйĕ, академик Геннадий Никандрович Волков пулнă.

Г.Н. Волков – Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче 1927 çулта çуралнă. Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститутра вĕреннĕ. Диплом илнĕ хыççăн кунтах преподавательте ĕçленĕ, аспирантурăра ăс пухнă. Кайран Мускав хулинче, Германири Эрфуртра, Якутире, Калмыкире студентсем валли лекцисем вуланă. Чăваш Республикин Тава тивĕçлĕ учителĕ, РФ наукин тава тивĕçлĕ деятелĕ. Пурĕ 500 ытла наука ĕçĕ çырнă, Российăри Наукăсен Академийĕн членĕ.

2) Çуралнă ача чăн-чăн çын пулса ӳстĕр тесе вĕрентсе каланине ăçта тĕл пулнă эсир?

- Тăван литература урокĕнче Анатолий Смолинăн «Ан вĕлер, ан суй, ан сут» сăввине вуланă (пĕр вĕренекен сăвва вуласа парать).

А. Смолин. «Ан вĕлер, ан суй, ан сут».

Пирĕн пурнăç - кĕтрет,  
Пурăнмастпăр икĕ хут,  
Аслă туйăм вĕрентет,  
- Ан вĕлер, ан суй, ан сут!

Тем тесен те çын – çынах,  
Уншăн ним те пулмĕ ют,  
Манас марччĕ çав-çавах,  
-Ан вĕлер, ан суй, ан сут!

Вырьăхсен те пур саккун,

Çын ан пултăрччĕ ансух,
Асра тыттăр кашни кун,
-Ан вĕлер, ан суй, ан сут!

Çак сăмахсене мансан
Пире кĕтĕ Аслă Суд,
Çавăнпа та нихăçан,
-Ан вĕлер, ан суй, ан сут!

- Библири 10 сăвап – заповедь çинчен аса илеççĕ.

1. Турра хăвăнтан асла ан хур.
2. Ан вĕлер.
3. Ан суй.
4. Ан сут.
5. Аскăнланса ан çӳре.
6. Çын çинчен ан элекле.
7. Эрнере пĕр кун – вырсарникун турă валли пултăр.
8. Çыннăнне ан хапсăн.
9. Чĕр- чуна, выльăх-чĕрлĕхе ан пуç çап.
10. Аçу-аннӳне хисепле.

3) Мĕнле ăнлав вăл - «7 пил» тени.

Чăвашсен ăс-хакăл культуринче ***çичĕ пил*** ăнлав пур.

Çын çак 7 пилпе килĕшӳллĕн пурăнать пулсан ăна чăн-чăн çын тесе шутланă. Çын телейлĕ пуласси çичĕ сăлтавран килнине палăртнă.

- Улăп çинчен калакан халапсенче вĕсем çаксем: сывлăх, юрату, лайăх мăшăр,сак тулли ача-пăча, хут вĕренни, ал ĕç туни, çуралнă çĕр-шывĕ.

- И.Я. Яковлев «Чăваш халăхне» халалра туслăхпа килĕшĕве, Тăван çĕр-шыва юратнине, çирĕп çемьепе, урă пуçпа пурăннине, ĕçе юратнине, пĕр-пĕринпе сапăр пулнине, тӳрĕлĕхпе сăпайлăха асăнать.

Чăвашсем пĕчĕк ачасене çапла вĕрентсе каланă: «Сахал калаç, нумай итле, юлхав ан пул, çынран ан кул, шӳт сăмахне итле, пуçна пит ан çĕкле».

Çапла вĕрентсе каланисем ытти халăхăн та пур.

***Чăваш этнопедагогикинче ачасене пăхса ӳстерессин 7 тĕсне палăртаççĕ***:

<u>1.Ĕçе хăнăхтарса ӳстересси.</u>

Мĕн пĕчĕкрен ача ĕçлеме, тĕрлĕ ал ăсталăхне вĕренсе тата хăнăхса пынă, кахалланса ларман. Ваттисен сăмахĕ çапла калать:«Йĕке çӳллĕш ӳссен хĕр ача амăшне пулăштăр, пуртă аври çӳллĕш ӳснĕ ар ача ашшĕне пулăштăр».

(Каланă май доска çине пĕрер пайăрка çыпăçтараççĕ – варринче çаврашка – кайран хĕвел пулса тăрать).

<u>2.Ачасене йĕркеллĕ кăмăл-туйăмлă пулма вĕрентесси.</u>

Йĕркеллĕ те чыслă пулма вĕрентни ачасене тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă пулма, ваттисене хисеплеме, çемьене упрама, туслă пулма хистенĕ. Тăван çĕршыва юратма, халăха юратма, тăван халăхăн тата ытти халăхсен йăли-йĕркине, чĕлхине хисеплеме вĕрентнĕ.

3. Ачан ăс-тăнне аталантарасси.

Чăвашсем ачасен ăс-тăнне аталантарассине, асра тытассине тĕрлĕ мелпе (тупмалли юмахсем, каларăшсем, шӳт сăввисем т.ыт. урлă) хăнăхтарнă, шухăшлама вĕрентнĕ, пĕлӳ панă.

4. Илеме туйма, илемлĕхе ăнланма вĕрентесси.

Çак сапăрлăхăн тĕп тĕллевĕ вăл – илемлĕхе курма тата ăна туйма вĕрентесси.

5. Вăй-хала ӳстерме хăнăхтарасси.

Ачасене сывлăха упрама, вăйлă тата хăюллă пулма вĕрентнĕ.

6. Ачасене перекетлĕ пулма хăнăхтарасси.

Ашшĕ-амăшĕ ачисене тумтире, япаласене,çут çанталăка упрама, çын ĕçне хаклама, тиркевсĕртерех пулма вĕрентнĕ.

7. Харпăр хăйне тытма вĕрентесси.

Ача-пăчана çынсемпе хутшăнма, тĕрĕс те илемлĕ калаçма, сăпайлă та йĕркеллĕ пулма тата эрех-сăрапа айкашса ĕçке ернинчен йĕрĕнме вĕрентнĕ.

Ф И З К У Л Ь Т М И Н У Т К А)

Ларать, ларать, Ваçça ларать
Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.
Çиет, çиет, Ваçça çиет
Шĕшкĕн сарă мăйăрне,
Вăхăт çитсен тăрас пулать.
Ятне тĕрĕс калас пулать!

4. Темăна çирĕплетни.

1) Ача-пăчана ăс паракан ваттисен сăмахĕсене мĕнлисене пĕлетĕр, (Кашни ача каласа парать).

2) Ача тавра-курăмне аталантаракан тупмалли юмахсем кам пĕлет?.

- Кăвак хирте пин сурăх, пин сурăха пĕр кĕтӳ (çăлтăрсемпе уйăх)

- Пĕри тăкать, тепри ĕçет, виççĕмĕшĕ ӳсет (çумăр, çĕр, ӳсен-тăран)

- Тулта тухатмăш пур, вĕрет, сурать, алхасать, урăм-сурăм тулашать (çил-тăман)

- Пуçĕ тукмак, хӳри çурла (автан)

- Хĕлле те, çулла та кĕрĕкпе (сурăх)

- Асатте пек сухаллă, шуйттан пек мăйракаллă (качака)

(Пĕтĕмлетӳ: юмах урлă килти выльăх-чĕрлĕхпе паллашаççĕ, ачасем çут çанталăк пулăмĕсене ăнкараççĕ)

3) Карточкăсемпе ĕçлесси.

- СИНОНИМСЕМ ТУП.

Чипер ……….. .(хитре, илемлĕ, хӳхĕм, чечен,черчен)

Калаç………… (пупле, сăмахла, юмахла, юптар, пакăлтат)

Ĕçле …………....(тăрмаш, тăрăш, тимле, аппалан, кăштăртат)

Лаша …… ……(ут, урхамах, юлан ут)

ВЫРĂСЛАРАН чăвашла куçар: Щедрый ——(уçă кăмăллă)

Огорчение ——— (кăмăл хуçăлни, пăсăлни)

Жестокий ——— (хытă кăмăллă, хытă чăреллĕ)

Ласковый ——— (ачаш кăмăллă, ăшă кăмăллă)

Вдохновение —— ( кăмăл çĕкленни)

Скромный ———(сăпайлă)

Добрый ———— (ырă кăмăллă)

5. Урока пĕтĕмлетни.

1) Чăваш этнопедагогикинче ачасене пăхса ӳстерессин миçе тĕсне палăртаççĕ?

2) Сирĕн килте мĕнле йăласем çирĕпленнĕ?

(Килти ĕçсене пĕрле пурнăçлани, выльăх-чĕрлĕх пăхни, утă çулни, уявсем туни, мунча кĕни т. ыт. те).

6.Киле ĕç. «Ача чухнехи пăтăрмахсем» е «Пирĕн çемьен пĕр кунĕ» - темăсенчен пĕрне суйласа илсе сочинени çырма.

7. Оценкăсем лартни. Урока вĕçлени.

## ИВАН ЛИСАЕВ. «ЧИРЕ ПАРĂНМА ÇУРАЛМАН»
## Тăван литература (6 класс)

Тĕллевсем: 1) Сăмах ăсталăхĕ ырăпа усала уйăрма вĕрентни; пурнăçра ырă ĕçсем çеç тума хавхалантарни.

2) Иван Лисаев хăйĕн геройĕ урлă йывăрлăхсене çирĕп кăмăллă,мал ĕмĕтлĕ çын анчах çĕнтернине кăтартнин пĕлтерĕшне туясси.

3) Йĕри – таврари хӳтлĕхсĕр те сусăр çынсене куллен асăрхаса пулăшма хăнăхтарасси; йывăрлăхсем сиксе тухсан пуçа усмасăр малалла ăнтăлма вĕрентесси.

Кирлĕ хатĕрсем: пухнă материалсен альбомĕ;
«Текст тишкерĕвĕ» плакат;
кластер (схема); магнитофон.

<u>Урок эпиграфĕ</u>:**«ЫРĂ ТУМА ВАСКĂР!»** (Н.Федоров, Чăваш Республикин Президенчĕ)

**Урок юхăмĕ:**

I.Урока йĕркелесси. Урок тĕллевĕсемпе паллаштарасси.

**II.Килти ĕçе тĕрĕслесси**. (Тест ыйтăвĕсене хуравласси):

1) Витьăн шкулне çитме йĕркеллĕ çанталăкра миçе утăм ?

1. 2500. 2. 2230. 3. 2000

2) Витя мĕншĕн утаймасть?

1. Вăйĕ çук. 2. Хăрах ури çук. 3. Ури ыратать

3) Витьăна мĕнле чир аптратать?

1 .Шăмă туберкулезĕ. 2. Ӳпке туберкулезĕ. 3. Чĕре чирĕ

4) Витьăна кам ялан йăпатать?1. Лиза. 2. Рита. 3. Роза

5). Пĕрле вĕренекенсем Витьăна мĕнле професси суйласа илтересшĕн? 1. Платник. 2.Художник. 3.Экономист

6).Хăш тухтăр Витьăна чун – чĕререн пулăшма тăрăшать ?

1. Алексей Петрович. 2. Александр Петрович

3. Алексей Николаевич

7).Чире парăнтарнă çĕрте ăна кам хавхалантарса пырать ?

1. Амăшĕ. 2. Асламăшĕ. 3. Кукамăшĕ

8). Журналта хăйĕнни пек шăпаллă çын çинчен вулать Витя. Кам вăл?1.Сергей Шакмаков. 2. Сергей Шатунов. 3. Сергей Щербаков

9). Шкул пĕтерсен ăçта ĕçлесшĕн Витя ?

1. Колхоз ферминче.2. Тимĕрçĕ лаççинче

3. Колхоз правленийĕнче

10).Спортăн хăш енĕпе вăл зонăра 2-мĕш вырăн йышăнать ?

1.Йĕлтĕрпе чупса. 2.Шашкăлла выляса. 3. Кĕрешсе

*ТĔРĔС ОТВЕТСЕН УÇÇИ* - 231 321 1323

**III. ТЕКСТПА ĕçлесси.** *(Текстăн пĕр сыпăкне тишкерӳ тăвасси)*

Пĕрремĕш класа вăл, тантăшĕсем пек, уяври евĕр тумланса, савăнса каясшăнччĕ. Таврара ырăпа асăнакан сада кĕрсе курасшăнччĕ... Йывăр чир ĕмĕте пĕтĕмпех пăтраштарчĕ. Хăйпе тантăшшисене шăнкăрав йыхăрнă чух ăна шур халатлисем пĕр палатăран тепĕрне çĕклесе куçарчĕç, кĕлеткере тĕрĕслемен, темле приборсемпе итлесе пăхман вырăн та хăвармарĕç. Усси çук : ури мĕнле ыратнă, çаплипех асап кӳнĕ. Унăн кашни тымарĕнче ырату текен хум чупнăн е тем çыртса кăшлаканскер ларнăн туйăннă. Çав ыратакан урана самантлăха аякка хума пулнă тăк ... Йывăр лава кӳлчĕ ăна шăпа текенни. Шăмă туберкулезĕ ... «Утакан пулатăп-и е çук-и ?» Ара, этеме ура мĕншĕн туса панă ?

- Утма. Апла пулсан вăл та утать, чупать. Урăхла пулма та пултараймасть. Тухтăрсем тем калаччăр та, Витьăн шкула çӳремелле, юлташĕсемпе ăмăртмалла, вăй виçмелле.

- Текста ят парăр. («Йывăр чир»,
«Шăмă туберкулезĕ»,
«Шăпан йывăр лавĕ»,
«Йывăр чир тыткăнĕнче» ...)

- Текстăн тĕп шухăшĕ. ( Этеме ура утма туса панă, апла пулсан Витьăн та утакан пулмалла ).

- Текст стилĕ. (Илемлĕ литература стилĕ ).

- Текст тĕсĕ. (Калав тата ăслав пĕрлешĕвĕ ).
- Текстри илемлĕх мелĕсем: тантăшĕсем пек

уяври евĕр танлаштару
хум чупнăн
чир пăтраштарчĕ
шăнкăрав йыхăрнă олицетворени
шăпа кӳлчĕ
асап кӳнĕ
лава кӳлчĕ фразеологизм
йывăр чир
шурă халатлисем эпитет
йывăр лав
Утакан пулатăп-и е çук-и? риторикăлла
Ара, этеме ура мĕншĕн туса панă? ыйту

КЛАСТЕР тăвасси ( магнитофонпа Д.Гурцкая юрри илтĕнет).

çирĕп
кăмăллă çирĕп кăмăллă
шанчăклă шанчăклă
ăслă Витя чир Алексей ăслă
çирĕп тĕллевлĕ Петрович çирĕп тĕллевлĕ
хастар ăш пиллĕ
вăйлă шанакан
чăтăмлă ăнланакан

**IV Ыйтусем çине ответлесси**.

1) Витя çирĕп тĕллевлĕ ача пулнине текстри хăш вырăнсем кăтартаççĕ (суйлавлăн вуласа ăнлантарăр)?

2) «Шăпа пӳрнĕ -- иртеймĕн» тенине мĕнле ăнланатăр?

3) «Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх, шанчăкпа ĕненӳ-пурнăçра çынна вăйхăват парса тăракансем» тенине мĕнле ăнлантăр?

*(К А Н У С А М А Н Ч Ĕ )*

**V. Йывăрлăхсене , чир- чĕре, инкек-синкеке парăнман çынсем çинчен çырнă материалсене пухса пĕтĕмлетни** (хаçат-журнал страницисенчен).

1) РАÇÇЕЙ тулашĕнче.

–Ирина Киевра çуралнă. Çулталăкра чухне Тирасполь больницинче ӳпке шыççинчен сипленĕ ăна. Антибиотиксем тӳнтерле витĕм панă: Ирина пач илтми пулса тăнă. Калаçма та вĕренейменскерпе мĕн ӳссе çитиччен унпа врачсемпе педагогсем ятарлă программăпа ĕçленĕ. Тăрăшни сая кайман: шкул пĕтернĕ, аслă пĕлӳ илнĕ. Юлашки курсра хăй пекех япăх илтекен каччăпа çемье çавăрнă. Аслă хĕрĕ çуралсан йывăрлăх сиксе тухнă: унпа мĕнле калаçмалла. Вара ăна юлташ тепĕр хĕр çуратнă. Халĕ икĕ сывă хĕр пĕрчи пĕр-пĕринпе хутшăнса çитĕнеççĕ,музыка шкулне

çӳреççĕ, ют чĕлхе вĕренеççĕ. Ирина хăйĕн телейне тупрĕ: ача чух пăшăрханни кăлăх пулчĕ, йĕри-таврари çынсем тӳнтерле пăхни те, хăш-пĕр чух кӳрентерни те манăçнă ĕнтĕ.

- 3 çулхи Алеша Буштаренко чĕрĕ лнă, 8 уйăхри шăллĕрен кăмрăк муклашки çеç юлнă. Улан-Удэ çывăхĕнчи пĕр ялти çак трагеди пурне те тĕлĕнтернĕ: ачаранах наркотикпа тата эрехпе туслă ашшĕ ачисене çунакан кăмакана чикнĕ. Алешăн ӳпки, пырĕ , çăварĕ,аллисем çуннă. Ăна 6 операци тунă. Тата миçе операци-ха! «АиФ» хаçат операци валли укçа пуçтарма ятарлă счет уçнă.

- Сакинат Магомедова Махачкалара пурăнать. Çуралнă чухнех икĕ аллисĕр çуралнă. Чирлĕ хĕрача çуралсан ашшĕ пăрахса кайнă. Çитменнине 13-ре чухне амăшĕ ракпа чирлесе вилнĕ. Хĕр ӳссе çитсен качча тухнă. Ача пуласса пĕлсен упăшки хăраса ӳкнĕ. Халĕ Сакинат Руслан ятлă ывăлне пĕчченех ӳстерет.

- Ачашăн чи кирли амăшĕн алли-ши? Ăна амăшĕн юратăвĕ,ăшши, упрвĕ кирлĕ. Эпĕ вара ывăлшăн тем тума та хатĕр.

Сакинат урисемпе газ чĕртет, апат хатĕрлет, тирĕк-кашăк та япала çăвать. Руслан та хăйĕн ăслă, хитре, пултаруллă амăшĕпе савăнать.

2) Р А Ç Ç Е Й Р Е.

–Вячеслав Михайлович Невинный актер сахăр диабечĕпе чирлĕ пулнă, сулахай ури çĕрме пуçланă. Урине чĕркуççирен аяларах татма тивнĕ.

- Маншăн тĕнче пĕтнĕ пекех туйăннăччĕ. Çывăрса кайсан вăранас та мар тесе шутлаттăм. Ухмаха тухатăп пуль тенĕччĕ,– тет артист. Халĕ протезпа утма вĕренет. Мускаври художество театрĕнче пĕрле ĕçлекен юлташĕсем çывăх вăхăтрах ура çине тăрса ĕçе тухасса шанаççĕ тата кĕтеççĕ. Артист хăй те часрах сцена çине тухма ĕмĕтленет.

–Настя Парамонова çуралнă чухнех чирлĕ çуралнă: урисем утмаççĕ. Амăшĕн алă çинче йăтса çӳреме тивет. Настя – питĕ ăслă хĕрача. Килте хăй тĕллĕн вĕренет, инвалид коляски çинче ларсах 800 страницăллă энциклопедисем вулать. Амăшĕ Настя валли кирлĕ учебниксем илме укçа çуккишĕн çеç кулянать. Настьăн вара ăслă çын пулас килет.

–Максим Душкин 7 класс пĕтерсен 2002 çулта каникула яла кайсан ăна лаша çапса хăварнă тата тăнлавĕнчен тапса пуç шăммине çурри таран салатнă. Икĕ çул пуç мимин çур енĕ ĕçлемен. Халĕ çеç вăл пӳрнисемпе вылятма, сасă кăларма пуçланă.Килте 5-мĕш класс кĕнекине вулать (Хăйĕн 10-мĕш класа каймаллаччĕ)

Амăшĕн пĕртен – пĕр ыйту: «Манăн ывăла çак пурнăçра çын пулма пулăшăр-ха...»

– Дима Гош Санкт-Петерургра 11 класра вĕреннĕ. Шыва чăмнă чух пуçпа чул çине тăрăннă. Икĕ çул вырăн çинчен тăраймасть. 5 операци тунă. Ун инкекĕ çинчен хаçат урлă нумай çын пĕлет, таçтан та çырусем килеççĕ. Вĕсене Дима чунтан тав тăвать, анчах хирĕç çыраймасть. Çапах та вăл хăçан та пулин алла ручка тытса çырма пултарасса шанать.

– Николай Отровский – вырăс литературинчи легенда. Йывăр чир вырăн çумне пăталанине пăхмасăр, сĕм суккăр пулин те «КАК ЗАКАЛЯЛАСЬ СТАЛЬ», «РОЖДЕННЫЕ БУРЕЙ» кĕнекесем çырнă. Ун геройĕсем темиçе ăрури çамрăксемшĕн тĕслĕх—идеал пулса тăнă.

– Алексей Мересьев Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче летчик пулнă. Пĕр çапăçура ун самолетне персе антарнă, ик уринчен те амантнă. Икĕ эрне вăрманта, юр тăрăх хырăмпа шунă. Урисене иккĕшне те татсан, протезпа утма вĕреннĕ. Утма вĕреннĕ çеç мар, вăрçă пĕтиччен каллех истребительпе вĕçме хăнăхса тăшмана тавăрнă. Ăна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

3).ЧĂВАШ ЕНРЕ.

– Алена Павлова Шупашкарти Олимп резервĕсен шкулĕнче вĕренет. Хăлхи япăх илтнине пăхмасăр бадминтонпа тренировкăсем ирттерет. Халĕ вăл – икĕ хутчен Раççей чемпионĕ. Вăл Раççей Президенчĕн аллинчен медаль илме тивĕç пулнă.

– Оля Чернова (Шупашкартан) Пĕтĕм Раççейри хăлха илтменнисем хушшинче ирттерекен «Мисс – 2005» конкурсра 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

– Григорий Моклаков композитор тата Альпăрт Канаш поэт (вăхăт пулсан каласа пама юрать)

4). РАЙОНТА.

– Геннадий Кириллович Кириллов – 2 ушкăн инваличĕ, Патăрьелĕнче пурăнать. Ачаранах ăс-тăн енчен айванрах пулнă. Арăмĕ чирлесе вилнĕ хыççăн ывăлĕпе иккĕшех пурнаççĕ. Ывăлĕ Женя, пӳрт тăрринчен ӳксе аманнă хыççăн, аран – аран утать. Выльăх тытаймаççĕ. Кӳршисем пулăшнипе çеç пурнăç сыпăнкаласа пырать.

5). Я Л Т А. (Ялти нушаллă çынсем çинчен каласа памалла)

6).КЛАСРА (пур пулсан – ачаллах инвалидсем пулма пултараççĕ)

**VI. Ваттисен сăмахĕсемпе паллаштарасси.**

Ӳкессе пĕлнĕ пулсан тӳшек сарса хурăттăм.

Инкек куçа курăнса килмест

Чăтсан-чăтсан чул та çурăлать.

Чăтăмлăхпа ĕç пурне те çĕнтернĕ.

Чир вăл килнĕ чух купи-капанĕпе килет, кайнă чух йĕп çăрти витĕр тухать.

Чир вăл: харсăртан хăрап, айванпа туслă пулатăп, тесе калать тет. (та.ыт.те)

**VII. Пирĕн калаçăва поэзи чĕлхипе малалла тăсар-ха.**

В. УРТАШ

***Çыру çырмашкăн аллăм çуккă***

Çыру çырмашкăн аллăм çуккă,
Шур хут парсан та шур аппа.
Ĕнер кăна выртаттăм суккăр,
Паян куратăп хам куçпа.
Ĕнер кăна сĕм-тĕттĕм каçчĕ,
Чалма хуплатчĕ куçăма.
Хĕвел курма çуралнă каччă
Çынпа тухаттăм уçăлма.
Курас килетчĕ хура пусă
Çĕнĕ юрпа шуралнине.
Анчах,аппам,курмастчĕ куçăм
Шуралнине, хуралнине.
Паян куратăп акă уççăн
Куратăп çутă тĕнчене.
Ума тухать ем-ешĕл уçăм
Саватăп курнă сăнсене.
Куçа ăна курмашкăн пană
Тăван çĕршывăн илемне.
Çут çăлтăр пекчĕ куçăм манăн,
Пăхаттăм эпĕ инçене.
Çыратчĕ маншăн тусăм-йышăм
Куçăм çукран, аллăм çукран.
Халĕ салам хамран эс йышăн,
Хамах çыратăп– хăв куран.
Çыратăп эп куççулĕ витĕр,
Кăранташа шăлпа çыртса.
Кĕçех шăллу килне те çитĕ,–
Халь çитес теп çыру çырса.
Ан тив, ан пултăр мăшăр алă,
Çавах ĕç тупăп эп, аппа.
Тен, ĕçĕмпе эп пулăп паллă,
Çаплах эп çӳрĕп ыр ятпа.

АФАЛЕК ЭНТЕПЕ

***Чĕлхесĕрсем чĕресĕр мар***

Чĕлхесĕрсем чĕресĕр мар.
Чĕнмест-тĕк -— ыратмасть тесе ан шутлăр.

Ик куçăмри сенкер кăвар
Пурне те витĕр шăтарса
Курасшăн шутсăр.
Япаласен те пулăмсен
Ылмашăвне пăхса тăруçăн
Мĕн çиелте выртни
Курнать тӳрех те уççăн.
Анчах шалтан ыраттарса туртни
Хăш чух пĕр сисĕнмесĕр те юлать.
Чылай чухне çапла пулать!
Кашни этем чĕри вăл— тĕпсĕр уçлăх.
Унти планетăсен çулне уçма,
Сӳнен çăлтăрсене çутма
Чĕнет мана вăраннă пултарулăх.

**VIII. КĔСКЕ СПРАВКА** (цифрăсемпе фактсем -интернетран)

– Пирĕн çĕр-шывра пурĕ миçе сусăр çын?

- Вĕсене патшалăх мĕнле пулăшать?

- Инвалид - ачасене мĕнпе пулăшма пулать (та.ыт.те)?

**IX. Урока пĕтĕмлетни.**

1) Ыйтусем çине ответлесси.

– Повеçе мĕншĕн «Чире парăнма çуралман» тесе ят pană?

– Геройсем тата Витя мĕнле йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ?

– Вĕсене мĕнле çĕнтереççĕ?

– Пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме, сирĕн шутпа, мĕн-мĕн кирлĕ?

– Чире çĕнтернине паттăрлăх теме пулать-и?

– Витя сăнарĕ пурнăçра мĕнле пулма вĕрентет?

– Хамăр йывăр лару–тăрăва лексен тивĕçлĕн тухма пултараятпăр-и?

– Инкеклĕ çынсене алă тăсса паратпăр-и?

2)«ЧИ ПЫСĂК ИНКЕК» (Г. Волков) статьяна вуласа тухасси.

Мĕн-ши этемшĕн чи пысăк инкек? Мĕн уншăн чи япăххи?

Алă çукки. Алăсăр пуртă та тытаяс çук, ача та çĕклеес çук.

Унтан начарри мĕн?

Урасăр пулни. Урасăр çул якине те пĕлеймĕн, сăрт çӳллĕшне те виçеймĕн.

Тата япăхраххи те пур- ши çыншăн?

Хăлхасăр юлни, илтейми пулни. Ĕçре савапа çава пĕр саслă пулнине те асăрхайми пулатăн.

Кунтан та начар пулма пултарать- ши?

Куççăр юлни, курми пулни. Хăпартупа хĕвел пĕр тĕслине те пĕлейми пулса юлатăн, çимĕç симĕсне те манатăн, Уйăх катăкĕпе пĕлĕт авăнчăкĕ те ĕмĕрлĕхех сӳнеççĕ.

Кунран пысăкрах инкек те пур-ши тата?

Ăсран тайăлни – акă мĕн инкек. Çын утать те - çитеймест. Илтет те – ăнланмасть. Курать те – палламасть.

Ăсран тайăлнинчен хăрушши çук-тăр?

Пур çав. Юлхавлăх. Мĕншĕн наяна – алă? Мĕншĕн ӳркенчĕке – ура? Лӳппере куç – мĕн курма? Чумана хăлха – мĕн илтме? Кахала ăс – мĕн тума?

Акă мĕн иккен чи пысăк инкек.

Юлхав ухмахран начар, тăмсайран япăх.

3) ПĔТĔМЛЕТӲ.

– Чир-чĕр, инкек-синкек тата ытти йывăрлăхсем siksе тухсан, пуçа усмалла мар, ВИТЯ КУЛЕШОВ пек пурнăçри тĕллеве пурнăçлама пĕр хăрамасăр ăнтăлмалла, мал ĕмĕтлĕ пулмаллаě

– Пирĕнпе юнашар пурăнакан хӳтлĕхсĕр çынсене – ватăсене, сусăрсене, кăлтăклă çынсене куллен пулăшу кӳме тăрăшмалла. Хамăр Президент чĕнсе каланă пек: «ЫРĂ ТУМА ВАСКĂР!»

– Пирĕн, алăллă-ураллă çынсен, куçлă – пуçлă çынсен, ăслă-тăнлă çынсен вăхăта усăсăр irttермелле мар, хамăрăн пултарулăха аталантармалла, пуласлăх çул-йĕрне хывмалла.

**Х. Киле ĕç: Сочинени (темăсене суйласа илĕр – 209 стр.)**

**Х!. Оценкăсем лартни. Урока вĕçлени.**

## ÇИÇСЕ ТĂРАКАН ХĂВАТЛĂ ТАЛАНТ.

### Чăваш литератури (8 класс).

**Тĕллевсем:** 1) К. Иванов чаплă поэт çеç мар, унăн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулнине, хăватлă талантлă çын çеç вилĕмсĕр «Нарспи» поэма çырма пултарнине палăртса хăварасси.

2) Кашни ачан турă панă талантне аталантарма тăрăшмаллине, поэтран тĕслĕх илсе кашни çын хăй хыççăн ырă ĕçсем хăвармаллине ăнлантарасси.

3) Поэма йĕркисене сасса кирлĕ пек улăштарса вулама хăнăхасси, унти илемлĕх мелĕсене, сăвă чĕлхин уйрăмлăхĕсене асăрхама – тупма вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** - альбом «Силпи асамачĕ»;- кĕнекесен выставки; - диск «Презентаци К.В. Иванов»;

**Эпиграф:** Иванов сассипе янкăрах шуçăмланчĕ
Пирĕн сăвă-тĕнчи терт-хĕнре,
Калчаланчĕ чăвашăн çĕр те пĕр таланчĕ,
Ун сасси халь янрать тĕнчере. *Г. Юмарт.*

**I.** Урока йĕркелесси. Темăпа, тĕллевсемпе паллаштарни.

**II.** Килти ĕçе тĕрĕслесси.

1) Ыйтусем çине ответлесси.

– Кĕнекери аса илĕве кам çырнă? (Репин)

– Кам вăл? (юлташĕ)

– Кама вăл пĕртен-пĕр çыннăмăр тет? (К.Иванова)

–К.Иванов ăçта вĕренни çинчен каланă? (Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче)

– Кам ăна шкула ĕçлеме чĕнсе илнĕ? (И. Яковлев)

– Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче унăн чи çывăх тусĕ кам пулнă? (Н. Шупуççынни)

– Юлашки кунĕсене ăçта ирттернĕ? (Слакпуç)

– Вăл çырнă тата куçарнă хайлавсем? (......)

– «Нарспи» поэма миçемĕш çулта пичетленсе тухнă? (1908ç)

– К. Иванов миçе çул пурăннă? (23)

2) «Нарспи» поэмăри çак йĕркесем кам çинчен:

«Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек...» (Нарспи)

«Вĕри юнлă чĕри пур,
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме
Икĕ вăйлă алли пур...» (Сетнер)

«Ĕçлет ватă пуçĕпе,
Пурттипеле каскалать.
Савнă хĕршĕн тăрăшса,
Пичĕ тăрăх тар юхать.» (Михетер)

«Акăшсем пек утаççĕ,
Чăнкăр-чăнкăр тенкисем
Йăлтăртатса пыраççĕ.» (Силпи хĕрĕсем)

«Ватă чун та хытнă чун,
Хытса кайнă кĕççе çав.» (Михетерпе карчăкĕ)

3) Поэмăра çак сăмахсене кам калать:

«Эй, пиччесем, тăрăр-ха,
Урлă-пирлĕ пăхăр-ха:
Акапуçне тӳрлетес,
Урапуна тирпейлес.» (Автор)

«Мĕн кĕçĕнтен ӳстертĕм
Çак тарана çитерме,
Ĕнтĕ паян юлашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.» (Михетер)

«Çапах вара, Нарспиçĕм,
Çук-шим манăн ăраскал?
Çаплах сана ют çĕре

Илсе кайĕ-шим усал?» (Сетнер)

«Сетнер, Сетнер, тытрĕç-çке,
Тăр, тăр! Тарса хăтăлар!
Ай, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр!
Ăçта тарса пытанар!» (Нарспи)

«Мĕнле вара ку паян
Чĕре чăнах пĕлчĕ-шим?
Суйса парас тенĕччĕ–
Ах тамаша! Тĕрĕс-шим? (Юмăç)

**III.** Çĕнĕ тема.

1) К. Иванов çинчен тĕплĕнрех пĕлер-ха. (Презентации кăтартасси.)

2) Сыпăксен кĕске содержанийĕ.

1. «Силпи ялĕнче» – Силпи чăваш ялĕпе паллаштарать тата чăвашсем пысăк уявсене мĕнле ирттерни çинчен калать.

2. «Сарă хĕр» – Силпи ялĕнчи чи хитре те ĕçчен Нарспипе паллаштарать.

Нарспи – ялти чи пуян çын хĕрĕ.

3. «Вăрманта» пĕрремĕш сыпăксене илемлĕ, кирлĕ интонаципе вуласси.

– Словарь: кутсăр-пуçсăр, турă çырлах, çичĕ ют.

4. Сыпăксен инсценировкине кăтартасси; «Çимĕк каçĕ»(Карзакова М., Емельянов М.);

«Сетнер килĕнче»( Карзакова М., Нестерова С., Захаров С.)

Ф и з к у л ь т м и н у т к а

3). Авторсем хăйсен сăввисене вулаççĕ.

4).Проблемăллă ыйту: «Силпи ялĕнче» сыпăкра - Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.
Çавăнтах : Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

-<u>Мĕн каласшăн пулнă-ши автор?</u>

**IV.** Темăна çирĕплетни.

1. Тест ыйтăвĕсене хуравласси.

- Поэт хăш çĕршывра çуралнă?
 1. Чăваш. 2. Тутар. 3. Пушкăрт
- Вăл çуралнă ял мĕн ятлă?
 1. Арапуç. 2. Слакпуç. 3.Çырмапуç
- К.Иванов мĕнле чăваш поэчĕпе пĕр ялта çуралнă?

1. П. Хусанкай. 2. Я. Ухсай. 3. А.Тимпай

- «Нарспи» поэма пичетленсе тухнăранпа миçе çул çитнĕ?

1. 100. 2. 110. 3. 120

-Çак сăнарсенчен хăшĕ поэмăра çук?

1. Михетер. 2. Сетнер. 3. Сентиер

- Поэма миçе сыпăкран тăрать?

1. 14. 2. 24. 3. 34

- Нарспи хăш касра пурăннă?

1. Анаткас. 2. Турикас. 3. Çӳлтикас

- Михетер хăш ялтан?

1. Силпи. 2. Сиктĕрме. 3. Хушăлка

- К. Иванов ячĕпе хисепленекенни Шупашкарта çаксенчен хăшĕ пур? 1. Театр. 2. Кинозал. 3. Казино

- Литературăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн паракан наградăсенчен хăшĕ К.Иванов ячĕпе хисепленет?

1. Орден. 2. Медаль. 3. Преми.

Хуравсен тупсăмĕ: 322 131 231 3

**V.** Урока пĕтĕмлетни.

1. Литмонтаж. «Сан юррусен нихçан сӳнми кăварĕ»:

1).Туллă-сăртлă та вăрманлă
Çăлкуçсемлĕ Пушкăртра
Куç хаваслă та чун анлă
Вăй çĕклет пек кăкăрта.

2).Шăнкăр-шăнкăр юхать Салак шывĕ
Хăвасем, шыв тĕкĕрĕ çине пăхса,
Кăчкине тураççĕ... Çак шăнкăр - шăнкăр
Шыв пек сан кашни юрру-сăвву кашни чăваш çыннишĕн

3).Чăваш литературинче Иванов ячĕ – шурăмпуç çăлтăрĕ пекех.

4). Çутçанталăк пекех, сăвăçăмăр вилĕмсĕр.

5). Ăнсăртран мар ĕнтĕ чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай ку чухнехи поэзине «Иванов вăрманĕ» тесе хаклать.

6). Поэт! Эс ăслă сăмахпа вăратнă
Тăван ĕç халăхĕн çутă кăмăлне,
Пĕр уншăн ырă юрăсем шăратнă
Çунат эс хушнă унăн вăй-халне.

2. Пирĕн ентеш, Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи те поэт-классик пултарулăхне пысăк хак парса çапла çырнă:

ЭС пирĕнтен те çамрăкрах,
Чăваш поэзин чаплă ашшĕ.
Эс – иртнĕ Кун. Çав вăхăтрах –
Эс халăх кăмăлĕн малашĕ.

Эс пирĕн аслă çĕнтерӳ:
Эс пĕтĕм çут çанталăк панă

Асамлă вăй, тĕлĕнтерӳ,
Çĕр-шыв хăйне санра упранă.
Эс çӳллĕ пăнчă пек, - пĕрре
Çĕршер çĕрте асра тытмалăх
Сан сассупа историре
Ялан калаçĕ пирĕн халăх.
3. Эпиграф тавра шухăшлани. Пĕтĕмлетӳ:
- К. Иванов – чăн-чăн талант, гени.
– «Нарспи» - вилĕмсĕр произведении.
- Поэт – классик ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.
VI. Урока вĕçлени. Оценкăсем лартни.
VII. Киле ĕç: «Хаклă Кĕçтентин пичче!» - çыру çырма.

## «КУН-ÇУЛĔ КĂЛĂХ ПУЛМАСАССĂН ВИЛСЕН ТЕ ПУРĂНАТЬ ЭТЕМ»

### Чăваш литератури (9 кл.)

Тĕллев: 1) Митта Ваçлейĕ – паллă лирик, куçаруçă, публицист пулнине унăн хайлавĕсем çирĕплетнине кăтартасси.

2) Митта лирикин пуянлăхĕ тата вăл усă курнă жанрсем чăваш поэзийĕн пысăк мулĕ пулнине çирĕплетни.

1) Поэт – классикран патриатизмпа гуманизм туйăмне аталантарма вĕрентесси; ун пекех пурнăçа юратма, тус-юлташа хаклама, чăвашлăхшăн çанна тавăрса ĕçлеме хавхалантарасси.

Эпиграф:

**«Митта Ваçлейĕ – чăн-чăн сăвăç, пысăк поэт.**
**Сăвă унăн ĕçĕ мар, унăн сывлăшĕ, унăн пурнăçĕ, унăн чĕре таппи пулнă…»** ***Г. Юмарт.***

Кирлĕ хатĕрсем: портрет, альбом «Сăввисем чăн-чăн ĕнчĕ пек» альбом-раскладушка…, плакат «Лирикăллă хайлавсен тишкерĕвĕ».

Зрелище жизни великого человека есть всегда прекрасное зрелище. Она возвышает душу, мирит с жизнью, возбуждает деятельность. Всякий великий поэт потому велик, что корни его страдания и блаженства глубоко вросли в почву общественности и истории. *В. Т. Белинский*

Митта Ваçлейĕнче истори таппине, çав вăхăтсен хирĕçĕвне, идейисене, кĕрешĕвне куратпăр.Писатель шăпи – халăх кун-çулĕн тĕкĕрĕ, çӳпçи, вучахĕ. *В. Станьял.*

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.

Пин юррӑмран пӗри анчах юлайтӑр.
Ӑна тӑван ыр кӑмӑлпа юрлатӑр,-
Вара ман канлӗ пулӗччӗ тӑпрам. Митта Ваҫлейӗ

**Урок юхӑмӗ.**

I. Класса йӗркелесси. Урок темипе, тӗллевӗсемпе паллаштарасси.

II. Митта Ваҫлейӗ сӑввисенчен йӗркеленӗ литература монтажӗ.

1) Ман пурлӑхӑм чух, пин ылтӑнӑм ҫук,
Нумай кирлӗ мар тӑван пӗрле чух.
Нумай та пӗтет, сахал та ҫитет,
Тату пурнӑҫа элле мӗн ҫитет?

2) Тивлет те сӑвап, мухтав та пехил
Сана ыр ӗҫре хунан таса кил!
Мухтав та пехил ӗмӗр-ӗмӗрне
Тарпа тӑварланнӑ ыраш ҫӑкӑрне!

3) Тӑван чӗлхем! Таса хӗлхем
Парсам пӑлхавлӑ чунӑма,
Пар чӑнлӑх, савӑнӑҫ, илем,
Пар ирӗк - ҫутӑрах ҫунма.

4) Сӗткенӳпе шӑварӑнса
Шаланкӑ евӗр ҫӗкленем.
Ҫӳлте ҫуйхавлӑх ярӑнса
Этемшӗн савӑнӑҫ чӗнем.

5) Шанап, чӗлхемҫӗм, ӗненетӗп
Сан чи тивлетлӗ ӗмӗтне.
Ҫунатлӑ пултӑм –
Вӗҫӗнетӗп
Ӗмӗт сӗткенӗ ҫӗнетме.

6) Сарӑлтӑр-ха, тӑван, сарӑлтӑр-ха,
Хамӑрӑн ырӑ ят тӗнчене!
Ҫакӑ юррӑн сасси ян кайтӑр-ха,
Савӑнтартӑр ӗҫченсен чӗрине!

7) Кам тӳссе ирттерчӗ ҫынпа тан,
Кам ырра усал теме хӑймарӗ,
Усала айваннӑн пуҫ таймарӗ,
Ҫав калатӑр пӗтӗм кӑмӑлтан,
Ҫамрӑк ӗмӗр харама каймарӗ.

8) Пултаруллӑ тусӑм! Тав сана!
Ахаль мар эп тайӑлса каласшӑн:
Чӑвашсен пӗр лайӑх сӑмах пур –
Юлташ пултӑр хӑвӑнтан маттур!

9) Хӗн-хурлӑ пултару саманчӗ,
Ӑна пӗлмен поэт-айван.

Сăмахăн асапне чăтман çын
Нихçан та сăвăç пулайман.
10) Шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ,
Такăрлатнă Атăл хĕррине.
Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ
Чи хакли яш ĕмĕр иккенне.
11) Поэтăм, вилĕме ан асăн,
Çак пурнăç - ĕмĕрхи илем.
Кун-çулĕ кăлăх пулмасассăн,
Вилсен те пурăнать этем.
12) Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр.
Ăна тăван ыр кăмăлпа юрлатăр, -
Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

**III.** «Кам вăл Митта?»

(Тĕплĕнрех паллашма презентаци пăхатпăр).

–Митта çуралнă ял.
–Ун йăх-тымарĕ, ашшĕ-амăшĕ.
–Вĕреннĕ çулсем.
–Ĕçленĕ вырăнсем.
–Поэзи жанрĕсем.

**IV.** Сăвăсене илемлĕ вуласси.

- «Çĕршывăм, çĕршывăм...»
- «Анатри юрă»
- «Тăван чĕлхем»

**V.** Сăвă тишкерĕвĕ. (Плакат тăрăх).

«Çĕршывăм, çĕршывăм...»

| | |
|---|---|
| 1. Хайлава çырнин историйĕ. | 1926-мĕш çулта çырнă. |
| 2. Жанрĕ | Сăвă |
| 3. Лирикăллă произведени тĕсĕ | Гражданла лирика шутне кĕрет |
| 4. Тема, проблема | Поэт çĕршыва пысăк усă пама хатĕр, вăй та, хаваслăх та пур, чĕре хĕрӳлĕхĕ те çителĕклĕ. |
| 5.Композиции уйрăмлăхĕсем | Ыйту-хурав мелĕ. |
| 6.Сăвă чĕлхин уйрăмлăхĕсем | Асамлă хăват (эпитет).<br>Хĕвеллĕ ир, таса çăлкуç.<br>Туятăн-и эсĕ, çĕршывăм (метонимии). |
| 7. Сăвăлла пуплев элеменчĕсем | Сăвă виçи-3 сып., Амфибрахий<br>Рифма-măшăр<br>Çаврара икшер йĕрке-пейĕт |
| 8. Ытти хайлавсемпе танлаштарни | Шухăшĕ тарăн, ритм хитре, илемлĕ янăрать. |
| 9. Пĕтĕмлетӳ | Сăвăра поэт кăмăлĕ уççăн палăрать, вăл çĕкленӳллĕ. |

**VI.** «Митта тата унăн пултарулăхĕ» (тест).

**1.** Митта Ваçлейĕ ăçта çуралнă?
- Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче.
- Вăрмар районĕнчи Арапуçĕнче.
- Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхалĕнче.

**2.** Ăна ăçта пытарнă?
- Шупашкарта, Карачура масарĕнче.
- Мускаврв, Вагоньково масарĕнче.
- Тăван ялĕнчи масарта.

**3.** Çак йĕркесем хăш сăвăран: *Мухтав та пехил / Ĕмĕр-ĕмĕрне*
*Тарпа тăварланнă / Ыраш çăкăрне!*
- «Тайăр» ярăмран
- «Анатри юрă»
- «Авалхи садăмра»

**4.** Митта çинчен çырнă аса илӳ авторĕ кам?
- Г. Айхи
- Я. Ухсай
- П. Хусанкай

**5.** Митта хĕрĕсем мĕн ятлă?
- Нарспи, Силпи, Илемпи
- Силпи, Пинерпи, Илемпи
- Салампи, Илемпи, Пинерпи

**6.** «Поэзии асамлăхĕ» сăвăра виçĕ Хăват çинчен асăнать:
- Пултарулăх
- Çунатлă ăс
- Ыр кăмăллăх

**7.** Хăш сăвви Миттан мар?
- «Уяв юрри»
- «Сиктермерĕн мана»
- «Кĕреке юрри»

**8.** Митта миçемĕш çулсенче пурăннă?
- 1908-1057
- 1918-1963
- 1928-1971

**9.** Çак сăмахсене ăçта çырса хунă: «Ан, тив хисеп ............?
- Вăл çуралнă çурт çине.
- Вăл Шупашкарта пурăннă çурт çине.
- Вилтăпри çинчи палăк çинче.

Уççи: 132312313

**VIII.** «Митта Ваçлейĕ çинчен». (Тус-юлташсем, çыравçăсем, критиксем мĕн каланă)

1) «Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕ-халăх пуянлăхĕ».

Вăл яш ĕмĕре упрама, çамрăк вăхăта сая ярасран сыхланма, ăслă, хăюллă, маттур пулма вĕрентет» А. Талвир.

**2)** Васлей тусăм-хăйне нихăçан та хĕрхенмен, хăйĕн хакне пĕлмен, çыншăн ача пек савăнакан сăпайлă сăвăç. П. Хусанкай.

**3)** Ас илер-ха Митта Васлейне,
Хамăр ял, Арапуç каччине...
Вăл тухатчĕ Пăла хĕррине
Уявра çамрăксен вăййине
Кам мухтамĕ Митта парнине –
Илĕртӳллĕ сăвви юррине.
Хисеплетчĕ поэт çынсене,
Пуç таятчĕ савса ĕçчене.
Ăраскал – халăхпа пулнинче,
Ăраскал – çĕр-шывпа утнинче,–
Ах мĕнле вăл калатчĕ ялан...
Пирĕнпе аслă сăвăç паян. В. Давыдов-Анатри.

**IX.** Пĕтĕмлетӳ: эпиграф тавра шухăшлани.

**X.** Киле ĕç: Пĕр сăввине пăхмасăр вĕренме.

## УХСАЙ ЯККĂВĔН «АТТЕ-АННЕ» ПОЭМА СЫПĂКĔСЕНЕ ВĔРЕНТЕССИ.
### (Хайлав тĕсĕ, ячĕн пĕлтерĕшĕ,теми, проблеми)
### Чăваш литератури ( 9 класс)

Тĕллевсем: 1)Пĕлӳ тĕллевĕ. Ухсай Яккăвĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси; ачасене текстпа ĕçлеме ханахтарасси; чăваш халăх поэчĕн тĕрлĕ енлĕ, пуян еткерне хак парасси.

2) Сапăрлăх тĕллевĕ. Поэма сыпăкĕсене вуласа тишкернĕ май çут çанталăкпа çĕр-шыв пуянлăхне упрассине таса тивĕç вырăнне хума вĕренесси; аслă поэт каласа хăварнисене сăваплă пехил вырăнне ăша хывасси.

3) Илемлĕх тĕллевĕ. Кăмăл-туйăма вăйлатас тĕллевпе поэмăри куçăмлă йĕркесене, илемлĕх мелĕсене тупса палăртасси: верлибрласа çырнă хайлав (прозăлла сăвă) тытăмĕн хăйне евĕрлĕхĕ.

Урок мелĕсемпе меслечĕсем: Учитель сăмахĕ. Ыйту-хурав.

Илемлĕх мелĕсене тупни. Харпăр хăй шухăшне калаттарни

Пĕтĕмлетӳ туни. Кĕнеке тулашĕнчи материалсемпе усă курма вĕрентесси.

Пуплеве аталантарас хăнăхусем:

1) Вуланине кĕскен каласа пама хăнăхасси.

2) Пĕтĕмлетӳ тума вĕренесси.
3) Сăнарсене хак пама вĕрентесси.
4) Илемлĕх мелĕсене тупса ăнлантарасси.

Литература теорийĕ: верлибр, прозăлла сăвă, лирика геройĕ.

Курăмлăх хатĕрĕсем: 1) плакатсем (К. Маркс, В. Берви-Флеровский сăмахĕсем);

2) Н. Павлова, А.А. Изотов, А.Г. Николаев,

А.П. Айдак портречĕсем; схемăсем; тишкерӳ йĕрки.

Словарь ĕçĕ: присяга, кумса çӳренĕ, юп курса, элемент, банкет, сĕреке, пикник, кĕççе пек чунăр хытнă, палкавçă, чĕре çуркамăç.

Урок эпиграфĕ: **...пуç тайăр ĕçре чап илнĕ хамăр халăха**.

**Я. Ухсай**

**Урок юхăмĕ:**

1. «Я. Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхĕ» ТЕСТ.

1) Ухсай Яккăвĕ ăçта, хăçан çуралнă?
 1. Тутар р.,1910 ç. 2. Пушкӑрт р., 1911 ç. 3. Чăваш р., 1912 ç.
2) Вăл çуралнă ял ячĕ?
 1.Çырмапуç. 2.Сиктĕрме. 3.Слакпуç
3) Вырăс поэчĕ А. Твардовский ун çинчен мĕн каланă?
 1.«Тĕлĕнмелле талант!». 2. «Çутă талант!»
 3. «Мĕнешкел талант!»
4) Ухсайăн хăш премийĕ çук?
 1.Чăваш Республикин К. Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕ
 2. Раççей Федерацийĕн М.Горький ячĕллĕ премийĕ
 3. Чăваш р. Ç.тЭлкер ячĕллĕ преми
5) Вăл ăçта вĕренмен?
 1.Хусанта. 2.Ĕпхӳре. 3.Мускавра
6) Я.Ухсай ачасене вĕрентнĕ ял?
 1.Патăрьел. 2.Куславкка. 3.Çĕрпӳел
7) Хăй пурăннă чухне миçе кĕнеке кăларнă?
 1. 32. 2. 52. 3. 42
8) Хăш хайлава Ухсай çырнă?
 1. «Кĕлпук мучи». 2. «Ухтер мучи». 3. «Пăркка мучи»
9) Хăш хайлав Ухсайăн маар?
 1. «Тутимĕр». 2. «Урасмет». 3. «Акăшкӳл»
10) Я.Ухсай миçемĕш çулта вилнĕ, ăна ăçта пытарнă?
 1.1996 ç., Чăнкăту çине. 2. 1976 ç., Пысăкту çине
 3. 1986 ç., Кĕслету çине

Тĕрĕс хуравсем: 2313112123

2. «Атте-анне» поэмăн кĕске содержанийĕ (ачасем сыпăксене вуласа каласа параççĕ).

3. «Камсем вĕсем?» (поэмăра тĕл пулакан сăнарсене учитель ăнлантарни).

- В.Ф.Флеровский – вырӑссен паллӑ экономисчӗ. «Положение рабочего класса в России» (1869) кӗнекере ҫапла ҫырнӑ: «Хусан кӗпӗрнинчи чӑвашсем – чи лайӑх ҫӗр ӑстисем. Чӑваш хушшинче сарӑмсӑр, пӳкле вилӗм сахалли вӗсем ӗҫчен те йӗркеллӗ пулнинчен килет».

- Карл Маркс – вырӑссен паллӑ философӗ, «Капитал» кӗнеке авторӗ.

- Надя Павлова – Шупашкар хӗрачи. 15 ҫултах балет ӑстисен Пӗтӗм Союзри конкурсӗнче Гран-при премине илме пултарнӑ.

- А.А.Изотов – чӑваш, техника наукисен докторӗ, Ҫӗр чӑмӑрӗн пысӑкӑшне пуҫласа тӗрӗс шутласа кӑларнӑ ученӑй.

- А.Г.Николаев – Шуршӑлта ҫуралнӑ летчик-космонавт, икӗ хутчен Совет Союзӗн Геройӗ.

-А.П.Айдак – Етӗрне р. «Ленинская искра» колхоз председателӗ пулса 40 ҫул ӗҫленӗ.

4. Поэмӑн тӗп шухӑшне палӑртма сыпӑксене уҫса паракан сӑмахсен вӑчӑрине тӑвасси.

Паттӑр йӑх------ ҫӗр ӑсти------ атте пилӗ ----- тирпейлӗ ашшӗ-амӑшӗ ----- ырӑ ҫут ҫанталӑк ----- эсир чӑваш-и ------ӗҫре чап илнӗ халӑх: —ЧЫС, СУМ, ЧАП

Пӗтӗмлетӳ: Халӑх авалхи ӗҫӗпе ӗҫлесе, аслӑ ӑру пилӗпе хӑйӗн ачине ҫут ҫанталӑкпа килӗштерсе пурӑнма, чӑваш йӑли-йӗркине тытса пыма вӗрентсе чыс, сум, чап илме тивӗҫлӗ. Ҫавӑн пек халӑхра ҫеҫ паттӑр йӑх упранать.

5. «Лирикӑллӑ хайлавсене тишкермелли йӗрке» тӑрӑх тишкерӳ тӑвасси.

- Хайлава ҫырнин историйӗ. Хайлава 60-80 ҫҫ. ҫырнӑ. Мӗншӗн тесен шӑпах ҫак вӑхӑтра «этемпе ҫут ҫанталӑк шӑпи» ҫинчен ҫырнисем - Раҫҫейӗн публицистикипе поэзийӗн шедеврӗсем тесе хаклаҫҫӗ критиксем. ( учебникра – 237 стр.)

- Жанрӗ: лиро-эпикӑлла поэма.

- Лирикӑллӑ произведении тӗсӗ: гражданла лирика.

- Тема, проблема, туйӑмӗ: тема - ҫут ҫанталӑкпа ҫӗр-шыв пуянлӑхне упрасси; проблема – ҫут ҫанталӑк экологийӗшӗн ҫеҫ мар, чун -чӗре экологийӗшӗн те кашни ҫыннӑн шухӑшламалла;

туйӑмӗ – хурланулӑхпа ҫӗкленӳлӗх.

- Композици уйрӑмлӑхӗсем: поэт халӑхпа – ваттисемпе те, яшшисемпе те – куҫа-куҫӑн уҫҫӑн калаҫнӑ пек йӗркелени; аса илӳ саманчӗсене кӗртни.

- Лирикӑллӑ герой - автор хӑй.

- Сӑвӑллӑ пуплев элеменчӗсем:

-ритм – пур чухне те пӑхӑнмасть, чылай чух верлибр е прозӑллӑ сӑвӑ пек.

строфа – 4 йĕркеллĕ (катрен); 8 йĕркеллĕ ( октава); 9 йĕркеллĕ (нона);14 йĕркеллĕ (сонет)

рифма – хĕреслĕ рифма

сăвă виçи – тан сыпăклă (силлабо-тоника: хорей); верлибр.

6. Поэма илемлĕхĕ.

1) Сыпăксенчи пуплев фигурисене тупса палăртасси (ушкăнсем çине пайланса ĕçлеççĕ).

Эпитетсем: хĕрнĕ тимĕр, паттăр йăх, çап-çамрăк халăх, шур уйăх, хĕрлĕ хĕвел,йывăр тӳсĕм, хĕн пурнăç, хĕрӳ ĕçре,чакăр куçĕпе, хура çĕр

2)Танлаштарусем: присяга панăн, йĕппе çеç пусă алтнă евĕр, ларан пучах пек, кача пӳрне пекех, тытса хĕнес пек, аппамăр пек хăюллă, Андриянла вĕçе-вĕçе, хăва пек çитĕнсен, хăва пек пӳллĕ-силлĕ.

3)Олицетворени: шур уйăх курнă

Метафора:çĕр аннемĕр

Фразеологизмсем: çанă таварса, ăса кĕме, шухăша янă, пуçне тултарнă хывăха силлемесен, вăрра ерсе кайма, халран кайса, харам пырсем, çăвар карса,чун та панă амăшне, ята ярса, çĕртнĕ чăн этем ятне, шухăша кайса, пуç тайăр.

- Тишкернĕ хайлава пĕтĕмĕшле хак пани, пĕтĕмлетӳсем туни. (икĕ енлĕ дневник майлă)

| çут çанталăк экологийĕ | | Чун – чĕре экологийĕ | |
|---|---|---|---|
| йĕркесĕрлĕх<br>ирсĕрлĕх<br>вăрлаççĕ<br>çаратаççĕ<br>аркатаççĕ<br>таптаççĕ<br>вĕлереççĕ<br>янттипе<br>иртĕхеççĕ | Упра<br>Ан варала<br>Пуянлат<br>Йывăç ларт<br>Пурлăха ӳстер<br>Юрат | кĕççе пек чун<br>лӳппер харам пыр<br>анкă-минкĕ<br>ушкăн<br>палкавçă<br>чĕлхе-çăвар<br>ванчăк чан пек<br>пушă пуç | Хăюллă<br>Кервен<br>Хитре<br>Хăва пек пӳ-силлĕ<br>Юман пек патвар<br>Ĕçпе чапа тухнă<br>Çывăх туслаш<br>Тăван çĕре<br>çывăх туй<br>Хисепле<br>Ăс пух<br>Пуç тай |

7. Урока пĕтĕмлетни.

Ĕмĕрсем хушши пынă хаяр çапăçусенче асаттесем пире пурнăç парнеленĕ. Çак пурнăçпа киленсе пурăнас тесен çут çанталăкпа килĕшӳре пурăнмалла. Çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курнипе çеç мар, ун пурлăхне ӳстерес ĕçе те кашни çын хăй тивĕçĕ тесе шутламалла. Апла пулсан, янттине хапсăнса иртĕнсе çеç пурăнсан пурнăç çĕр çинче чечекленеймĕ. Пархатарлă ывăл-хĕр çитĕнтерес тесен ашшĕ-амăшĕн те нумай тăрăшмалла. Вăл ӳстернĕ ачасен чун-чĕри пуян, таса пултăр. Ун пек чыслă-сумлă çынсем пирĕн

нумай. Малашне те пулччăр. Çавсенчен тĕслĕх илме вĕренесчĕ пирĕн.

8. Киле панă ĕç: «Çын ĕçĕпе илемлĕ» темăпа сочинени çырса килмелле.

9. Урока вĕçлени. Оценкăсем лартни.

## «ÇИЧĔ ЕНЛĔ ТАЛАНТ»
## (П.Н. Осипов пурнăçĕпе пултарулăхĕ)
## ТЕЛЕУРОК
## Чăваш литератури (10 класс)

Тĕллевсем: 1).П.Н. Осипов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен журналистсем каласа панă тăрăх тĕплĕнрех пĕлесси.

2) Пултаруллă çынсен биографийĕпе паллашса вĕсенчен тĕслĕх илме вĕренесси.

3) Ачасенче турă панă талантне тупса аталантарма, çав таланта кирлĕ çĕрте усă курма, халăхшăн, обществăшăн усăллă ĕç тума хатĕр пулма вĕрентесси.

Кирлĕ хатĕрсем: хаçат-журналти статьясем; эпипроектор, слайдсем; проигрыватель; ӳкерчĕксем;

**Урок йĕрки.**

I. <u>Учитель сăмахĕ.</u> Паянхи урока йăлана кĕмен меслетпе ирттерĕпĕр. Паян эсир пурте телекуравçăсем, артистсем, юрăçсем, телекорреспондентсем вырăнĕнче пулатăр.

Телевидени корреспонденчĕ пирĕн паян – Елена Семенова. Тархасшăн, Елена, передачăна пуçлама вăхăт!

ЖУРНАЛИСТ. Ырă кун пултăр, хисеплĕ телекуравçăсем! Паянхи передачăра эпир сирĕнпе П.Н. Осипов пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллашăпăр, унăн 7 тĕрлĕ талантне тишкерĕпĕр. Кăна тума пире хамăрăн артистсем, юрăçсем тата ытти пултарулăх çыннисем пулăшĕç.

Мĕншĕн тесен, эпир маларахри уроксенче П.Осипов пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ чăваш литературин ӳсĕмĕпе, уйрăмах драматургипе, театр искусствин аталанăвĕпе тачă çыхăннине, вăл çырнă пьесăсем халăх ăс-тăнĕпе кăмăл пуянлăхне, илем туйăмне аталантарас ĕçе пысăк витĕм кӳнине палăртрăмăр. Тархасшăн, унăн биографийĕпе пире паян Таня Савинова паллаштарать.

**1-мĕш вĕренекен**. Чăвашсен пулас паллă драматургĕ, тухтăрĕ, ученăйĕ 1900 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче Чăваш республикин Куславкка районĕнчи Кутемер ялĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе

тухсан пиччĕшĕ ăна Хусана илсе кайнă, арçын ачасен 3-мĕш гимназине вырнаçтарнă. Унтан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан Хусанти университетăн медицина факультетĕнче пĕлӳ пухнă. 1918-1919 çулсенче Хусанта, унтан Ĕпхӳре, Хĕвелтухăç фронтĕнче 5-мĕш арми штабĕ çумĕнче тухса тăракан «Чухăнсен сасси» хаçатра ĕçленĕ. Çав çулсенчех литература ĕçне тытăннă. Вырăсларан пьесăсем куçарнă, хăй те драмăлла произведенисем çырма пуçланă. 1930-1934 çулсенче П. Осипов Шупашкарти музыка техникумĕнче ĕçленĕ, сĕрме купăс калама вĕрентнĕ. Вăл – Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, чăваш халăх писателĕ, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ, медицина наукисен кандидачĕ, драматург,режиссер, артист, куçаруçă, музыкант, ученăй.

ЖУРНАЛИСТ. Осипов – артист çинчен пире Вера Ухварина каласа парать.

**2-мĕш вĕренекен**. Хусанта вĕреннĕ чухне Петр Осипов хапăлласах «артиста» çырăнать. Рольсене ăста вылянипе куракансене тĕлĕнтерет. Чăваш театрĕ Хусанта çеç тăмасть, Чĕмпĕре, Самара татав ытти вырăнсене çитет.

«Мĕнле-мĕнле манми сăнарсем выляса пачĕ Петр Николаевич», – аса илет чăваш театрĕн аслашшĕ И.С.Максимов-Кошкинский. – Акă унăн ролĕсем: Н.Гоголĕн «Авлану» пьесинчи кахал та айвантарах Подколесин, «Ревизорти» ăслă Уçăп, А.Н.Островскин «Çути пур та, ăшши çук» драминчи чее Дерюгин, Л.Толстойăн «Усал сывлăшĕнчи» аташа пуçланă Мордыкин, Д.Фонвизинăн «Услапĕнчи» çитĕнеймен çамрăк улпут Митрахван, Мольерăн «Мещен-дворянинри» Журден, Ф.Павловăн «Судра» комедийĕнчи Ухтеркке, Шиллерăн «Хаярлăхпа юрату» трагедийĕнчи Мюллер-музыкант тата ытти нумай рольсем.

1927 çулта Петр Николаевич Иоаким Максимов-Кошкинский лартнă «Хура юпа» чăвашла кинокартинăра Тевлет революционер рольне ăнăçлă выляна

ЖУРНАЛИСТ. Пысăк тав сире! Малалла Осипов – куçаруçă (тăлмач) çинчен итлесе пăхар-ха. Сăмах илет Марина Семенова.

**3-мĕш вĕренкен**. П.Н.Осипов театрта вылянă вăхăтра пьесăсем çырма тата урăх чĕлхерен куçарма тытăннă та ĕнтĕ.

Чăваш театрне 1918 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче вырăс классикĕ А. Островский çырнă «Ху пурăнас тенĕ пек ан пурăн» пьесипе уçăççĕ. Ăна артистсем йышпа куçарнă. Тăлмачсенчен уйрăмах Г. Тал-Мăрса, П.Н. Осипов, И. Данилов нумай ĕçленĕ. П. Осипов Шиллерăн «Хаярлăхпа юрату» трагедине, Тамайо-И-Баусăн «Мĕскĕн Иорик» драмине, Л. Толстойăн «Усал сывлăш» комедине чăвашла куçарнă.

ЖУРНАЛИСТ. Тавах, Марина. Малалла сăмах Осипов – драматург пирки пулĕ.

Тархасшăн, Вера Ухварина сăмах илет.

**4-мĕш вĕренкен**. Чăвашла пьесăсем питĕ сахал пулнă-ха ун чухне. Çавăнпа çамрăксем хăйсем пьесăсем çырма пуçланă. Хăшĕ-пĕри чиперех пулса тухнă.

Çапла 1918 çулта «Мыскара» ятлă пĕчĕк комеди, унтан умлăн-хыçлăнах «Икĕ каччăн пĕр шухăш» тата «Кушар» çырать. Каярахпа – «Ĕмĕр сакки сарлака» (1926), «Ылханлă йăх»(1927), «Трахома юрри»(1928), «Хĕрлĕ хунав»(1928) çуралаççĕ.

«Айтар» драмăна уйрăмах палăртмалла. Тăван халăх çак драмăна питĕ хапăлласа йышăнчĕ.

ЖУРНАЛИСТ. Тавах! Халĕ «артистсене» сăмах паратпăр!

(«Айтар» драмăри пĕр сыпăка выляса пара̧ççĕ – 2 пай, 7 курăну).

<u>Учитель сăмахĕ.</u> Айккине пăрăнса кайиччен сире çак ыйтусене хуравлама ыйтатăп. Эпĕ сире пьесăсенчен илнĕ репликăсене вуласа парăп, сирĕн вара çав реплика хăш пьесăран тата кам ролĕ пулнине пĕлмелле.

1) «Шурă пӳрте кĕме пире пӳлĕх хушман... (Сентиер – «Айтар»)

2) «Çак çара çерçи *(Сентиер енне пуçне сулать)* манăн тăшман пулма шут тытнă... (Айтар – «Айтар»)

3) «Ку пĕркенчĕк – манăн пĕтнĕ пуç!» (Пинерпи – «Айтар»)

4) «Пӳлĕхçĕ сыхлатăрах! Мĕн куратăп? Тĕксĕм киремет ачи ман хĕре хапсăнать!» (Ахтупай – «Айтар»)

*(Вĕренекенсене эпипроекторпа «Чăваш театрĕ» темăпа 2,4,12-мĕш слайдсене кăтартмалла).*

**5-мĕш вĕренкен**. П.Н.Осипов пĕр вăхăт Шупашкарти музыка училищинче вăй хунă, ачасене сĕрме купăс калама вĕрентнĕ. педагог ĕçĕпе пĕрлех чăваш музыка искусствине профессилле шая хăпартас тесе те тимленĕ, халăх юрри-кĕввине пухнă.

*(Вĕренкенсен ушкăнĕ чăваш халăх юррине юрласа парать)*

**6-мĕш вĕренкен**. П.Н.Осипов роман жанрне хăюллăн ярса тытрĕ. «Элкей таврашĕ» ятлă вăл – çак 3 томлă автобиографиллĕ роман, саманана анлăн çавăрса илекенскер: «Пиччĕшĕпе шăллĕ», «Элкей Павăлĕ», «Элкейсем» ятлă вăл кĕнекесем. Пичетленсе тухсанах ăна халăх юратса вулама пикеннĕ.

*(Корреспондент вăл кĕнекесемпе паллаштарать)*.

**7-мĕш вĕренекен**. П. Осипов, медицина енĕпе çеç кайнă пулсан, палах, профессор, тен, ку таранччен академик та пулнă пулĕччĕ.

1927 çултах П. Осипов язвăпа чирлисен, гистамин текен эмелпе укол тусан, ыратни чарăннине тĕпчесе пĕлет. Çакна вăл ытти çĕршывсенчи специалистсенчен маларах çирĕплетсе панă.

Вăл пуçарнипе Шупашкарта клиника диагностикин кабинечĕ уçăлать. 1931 çулта П.Осипов республикăра пĕрремĕш хут çынна юн яма пуçлать. 1965 çулта тухтăр пуçласа электроимпульслă токпа усă курса, чĕре сикчевлĕн тапнинчен сыватма тытăнать. Чылай вăхăт Чăваш республикин Сывлăх Министрĕ, аслă терапевт пулса, чĕре чирĕсенчен сиплекен центр пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Вăл - РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ, медицина наукисен кандидачĕ.

<u>Учитель сăмахĕ;</u> Пирĕн вĕренекенсем хушшинче П. Осипов пек талантлă ачасем пур. Акă, сăмахран, Инна Ширтанова П. Осипов портретне, пьесăсенчи сăнарсене ӳкерсе килнĕ. Паллашар-ха вĕсемпе.

*(Ӳкерчĕксен выставкипе паллашаççĕ)*

**Тележурналист** (урока пĕтĕмлетмелли ыйтусем парать):

– П. Осиповăн миçе енлĕ таланчĕпе паллашрăмăр? Мĕнле талантсем вĕсем?

– Эсир унăн мĕнле пьесисене пĕлетĕр? Тен, спектакльне курнă?

– Унăн пурнăç тĕллевĕ мĕнле пулнă-ши? Çав тĕллеве вăл пурнăçланă-и?

– Эсир хăвăр пурнăçăра мĕнле ĕçпе çыхăнтарасшăн?

– Сирте мĕнле-мĕнле талант пур тесе шутлатăр?

II<u>. 1) Учитель сăмахĕ.</u> Мĕншĕн пирĕн паллă драматург геройĕсем паян та хаклă, чуна çывăх?

Драмăллă произведенире сюжет динамикăллă аталанни, çивĕч конфликт, нумай енлĕ тĕрлĕ характер, юрату теми, кулăш хавхи кашни çынна тыткăнлать,эстетика туйăмне пуянлатса аталантарать.

П.Н.Осипов пек çынсем пирĕн çĕр-шывăн чапĕпе мухтавĕ, ун ятне халăх манмасть. Пирĕн те унран тĕслĕх илесчĕ, ун пек пулма тăрăшасчĕ те талпăнасчĕ.

2) ЖУРНАЛИСТ. Çакăнпа пирĕн телепередача вĕçленчĕ! Эфирта тепре тĕл пуличчен! Сывă пулăр!

## СТАТЬЯСЕМПЕ РЕЦЕНЗИСЕМ

### Ырă ĕç - сăваплă

2018 çул – Раççейре доброволец çулталăкĕ. Ĕлĕкхилле каласан, нимелле пысăк ĕç тăвакансен çулĕ темелле пуль ĕнтĕ ăна. Çĕньялта пурăнакансемшĕн ку çул уйрăмах асра юлĕ. Çимĕк уявĕччен çĕньялсем ял масарĕн картине тĕпрен юсама пуçларĕç: укçи-тенкине те килсерен пухрĕç, ĕçлеме те кар! тăрса тухрĕç. Кĕске вăхăтра арçынсен ушкăнĕ картан икĕ енне профнастилпа тытса тухрĕ. Ку ĕç малалла пырать, никам та айккинче юлас темест. Çак пархатарлă ĕç Макаров В.И., Ухварин В.И. депутатсем пуçарнипе, тăрăшнипе тата ертсе пынипе пурнăçланса пырать. Çавăн пекех Елимов Б.В. депутат, Вазюков М.Н., Нестеров В.И. трактористсем, Сергеев А.К. водитель, Захаров П.В., Дмитриев Ю.А. сварщиксем питĕ нумай ĕçлерĕç. Çак вырсарникун масар çинче 85 çын ĕçлерĕ: армак-чармак йывăççене касса тирпейлерĕç, хунав туратсене иртсе тухрĕç, тĕрлĕ çӳп-çаппа кирлĕ мар япаласене тасатрĕç. Шкул ачисем те – волонтерсем аслисемпе танах вăй хучĕç. Халĕ пирĕн çывăх çыннăмăрсем ĕмĕрлĕхе канлĕх тупнă вырăнта таса та тирпейлĕ, хăтлă та хитре.

Тепĕр пысăк пулăм çинчен те асăнма кăмăллă: иртнĕ вырсарникун ял халăхĕ каллех нимене тухнă. 30 çул юхăнса выртнă кивĕ шкул пулнă территорине тасатса – тикĕслесе кунта кану паркĕ тăвас теççĕ çĕньялсем. Кун каçа чăтлăх пулса кайнă лаптăксене тасатрĕç, ватăлса-хăрса кайнă йывăççене касрĕç. Елимов А.И., Илларионов В.В. моторлă пăчăкăсемпе, Ухварин В.И., Тямин С.М. хунавсене касрĕç. Отпуска килнĕ Рудольф Макаровпа каникула килнĕ Василий Дмитриев студент хастар ĕçлерĕç. Хĕрарăмсемпе шкул ачисем çапăсене пĕр çĕре купаларĕç, шкул кӳлли йĕри-таврашĕнчи çӳп-çап куписене тасатрĕç. Пĕр шутласан тĕлĕнмелле те: çут çанталăкпа киленсе çӳремелли вырăнсене хамăрах тĕрлĕ ăпăр-тапăр пăрахатпăр-çке! Никам та курман чухне пăрахма та юрать теççĕ-ши?

Митрофанов П.Н. тата Антонов В.В. «аксакалсем» çамрăксен çак пуçарăвне ырларĕç, тăван тавралăх илемĕ паянхи çынсене çеç мар, килес ăрусемшăн те савăнăç пуласси пирки шанса калаçрĕç. 60 çын кунĕпе ĕçленĕ хыççăн уçланкă самаях хитреленчĕ. Килес çул ял уявне çак вырăнта ирттерес шухăшлă çĕньялсем, апла пулсан кунта тата темиçе ниме кунĕ те пулмалла-ха...

(«Авангард» хаçатран- авăн уйăхĕ, 2018 ç.)

# ТЕАТР ÇУЛТАЛĂКĔ УÇĂЛЧĔ
## (10. 01. 2019)

(Çĕньял клубĕнче çулталăка чаплă лару-тăрура уçни)

Артист вăл – куçаруçă пек.
Пин тĕрлĕ çыннăн кăмăлне
Кĕртет вăл ĕмĕр тăршшĕпех
Хăй сăн-питне, ӳтне, чунне.

Çĕршер сăнар туса парать
Кайран вăл çак асапĕнчен.
Поэма евĕр янăрать
Ун ролĕ сцена тĕнчинчен.

Ун ĕçĕ – аслă куçару:
Ун вăйĕпе, ун таппипе
Кĕрлет - ăсталăх, пултару
Чăваш шăпин хавалĕпе. (Г. Айхи. «Çын тата сцена»)

2019 çула Раççейре Театр çулталăкĕ тесе палăртнă. Чăваш ен вара пирĕн ентешĕн – Чăваш халăх поэчĕн Геннадий Айхин 85 çулхи юбилейне паллă тума хатĕрленет. Кун пирки Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 293-мĕш номерлĕ ятарлă хушу кăларнă тумалли тĕрлĕ ĕçсене палăртнă.

Апла пулсан пирĕншĕн ку çул – Г. Айхи çулталăкĕ пулĕ.

Çавăнпа та Çĕнĕ çул хыççăнхи уяв кунĕсенче Çĕньял халăхĕ Раççейри Театр çулталăкне тата Чăваш енри Г. Айхи çулталăкне халаллануă савăнăçлă уяв каçне пуçтарăнчĕ.

Чи малтанах сцена çине Çĕньялти Геннадий Айхи ячĕллĕ тĕп шкулта вĕренекенсем тухрĕç. Шкулти А.В. Антонова ертсе пыракан театр студине çӳрекен «пĕчĕк артистсем» «Виçĕ сысна çури» юмаха питĕ ăста выляса пачĕç.

Мĕн пĕлетпĕр-ха эпир хамăр ентеш Геннадий Айхи çинчен?

Мĕнле сăввисем чуна тыткăнлаççĕ?

Кун çинчен куракансене шкулти Геннадий Айхи музейĕн ертӳçи М.И. Мадюкова каласа пачĕ, Чăваш халăх поэчĕн темиçе сăввине вуласа пачĕ. «Геннадий Айхи сăввисем ăнланма йывăр тенипе килĕшес килмест. Ун сăввисене ăнланас тесен поэт ăнкарăвĕн шайне çитмелле, ун тĕнче курăмĕпе пурăнмалла. Шкулта çулсерен иртекен «Айхи вулавĕсем» районти сăвă вулакансен конкурсне хутшăнакансен йышĕ ӳссе пыни, аслă классенче çеç мар, кĕçĕн класс вĕренекенĕсем те Айхи сăввисене туйăмпа вулани ентешĕмĕр халăха çывăх пулнине çирĕплетет те. Юбилей çулталăкĕнче палăртнă ĕçсем поэт пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлме пулăшчăр, ун пархатарлă ĕçĕн тăсăмĕ пултăр. Пĕчĕк чăваш ялĕнче çуралса çитĕнсе тĕнче умне тухнă, тĕнчери

Нобель премине пама тăратнă кандидат таран ӳсме пултарнă халăх поэчĕпе мухтанмалли сăлтав çĕньялсен чăнах та пур. Паянхи уяв каçĕ аслă поэтăмăр таланчĕ умĕнче пуç тайни те пултăр!» - палăртрĕ хăй сăмахĕнче Мария Ильинична.

Шупашкарти Виктор Петров ертсе пыракан кулăшпа сатира театрне те пĕлетпĕр эпир. Вĕсене курса хамăрăн кулăш ăстисем те вĕсенчен пĕрре те кая мар, Я.Вазюковпа Н.Квасова кăтартнă «Чемпионат» сценка халăха ăша тытсах култарчĕ. Театр тенĕрен, Çĕньял клубĕнче 1968 çултах драма кружокĕ йĕркеленнĕ. Унăн руководителĕ пулса 30 çул ытла Антонов В.В. ĕçленĕ. Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ çак çулсем пирки нумай каласа пачĕ: «Пурĕ 25 спектакль лартнă, унта ялти 300 ытла çын хутшăннă. «Айтар», «Кушар», «Вутлăункăра», «Кай,кай Ивана», «Куккук çаплах авăтать», «Энĕш хĕрринче»...Чи кăткăсси вара –«Нарспи» поэмăна сцена çине кăларасси пулнă, вылякансем пурĕ 25-ĕн, массăллă сценăсенче тепĕр çавăн чухлĕн! Юлашки спектакле 2015 çулта лартнă, ку вăл В.Дергуновăн «Эх, çак ял пурнăçне!» пьеси».

Темиçе кун каялла çеç Владимир Васильевич хăйĕн 75 çулхи юбилейне паллă турĕ. Çак ятпа Çĕньял ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М.Мадюкова Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕн Р.В.Селивановăн салам çырăвне вуласа пачĕ, ял тăрăхĕн тав хучĕпе чысларĕ. Кăçал Раççейре Театр çулталăкĕ пулнă май, юбиляр çĕнĕ спектакльпе ял халăхне савăнтарасса шанни çинчен пĕлтерчĕ.

Ĕçтешне саламлама Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Степанович Шакин сăмах илчĕ. Культурăпа искусство ăстисем юнашар ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тунă, пĕр-пĕрне сăмахпа та, ĕçпе те пулăшнă.

Уяв ячĕпе саламласа Анат Тăрмăшри культура çурчĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕн солисчĕ Ф. Пузырева Фарида репертуарĕнчи илемлĕ юрра ăста шăрантарчĕ.

Кӳршĕри Турхан ялĕнчи «Çеçпĕл» фольклор ушкăнĕ (ертӳçи – Р.Семенова) илемлĕ чăваш тата вырăс юррисемпе саламлани те пурин кăмăлне те кайрĕ.

Сцена çине Çĕньялти «ИЛЕМ» халăх фольклор ушкăнĕ (ертӳçи – В.Верликов) тухсан пурте тăвăллăн алă çупса ячĕç. Пĕлеççĕ-çке, ку ушкăн хăйĕн пултарулăхĕпе районти куракансене çеç мар, республика тулашĕнче те тĕлĕнтернĕ.

Çапла, юрă хыççăн юрă шăранчĕ, кулăшла сценкăсем улшăнчĕç, сăвă йĕркисем янăрарĕç куракансем валли, ял халăхне кивĕпе Çĕнĕ çул парни пулчĕ. («Авангард» хаçатран – кăрлач, 2019 ç.)

## ЫЛТĂН ТУЙ ТАШШИ
**«Ялти сумлă çын» темăпа çырнă калав тĕслĕхĕ:**
**Чăваш чĕлхи. (9 класс 275 стр. 5-мĕш хăнăхтару)**

Ун чухне хĕллеччĕ, лăпкă юр çăватчĕ. Ял çийĕн туй юрри илтĕнет. Пĕр касран тепĕр касса халăх куçать:Хăрах касри Якур пичче хĕр парать, Шур кассинчи Наçтук аппа, вăрçăра мăшăрне çухатнăскер, кин кĕртет... .

Ăçта машинăсем тетĕр-и? Çапла, ун чухне машинăсемпе качча каясси модăра пулман-ха, лаша та кӳлсе чăрманман. Инçе мар та. Туй халăхĕ те çуранах утнă. Шур юр çийĕн шур кĕпепе шур кăçатă тăхăннă хĕре шур кĕпеллĕ сар каччă çавăтнă та – кăчăрт-кăчăрт ура сасси аякка саланнă...

Унтанпа 50 çул та иртсе кайнă. Кăчăрт-кăчăрт ура сассин ахрăмĕ выранне хăтлă та илемлĕ çуртра шăкăл-шăкăл калаçу çеç илтĕнет... .

Çĕньялта пурăнакан Мария Егоровнăпа Василий Николаевич Сулагаевсем Çĕнĕ çул уявĕ хыççăнах тепĕр уяв кĕрекине çывăх çыннисене пуçтараççĕ, 50 çул каяллахи хĕллехи куна аса илсе киленеççĕ...

Василий Николаевич 1943 çулта çуралнă. Ялти 8 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсанах фермăна ĕçе кĕнĕ, сĕт турттарнă, кĕтӳ те кĕтнĕ. 1961-1962 çулсенче Казахстанра тракториста вĕренсе тухса çĕнĕ çĕрсене уçнă çĕрте ĕçлесе ĕлкĕрнĕ. Пĕр училищĕрен 12-ĕн Кзыл-Орда облаçĕнчи Соло-тюбе станицине тухса кайнă. Вĕсене вĕр-çĕнĕ тракторсем панă, анчах çара кайма вăхăт çитнипе çулталăкран каялла киле таврăннă, 12 кунран повестка илнĕ...

1962-1965 çулсенче Астрахань облаçĕнчи Капустин Яр хулинче ракетăсене тĕрĕслекен çарсен полигонĕнче службăра пулнă. Çарта хăйне пур енчен те çирĕп дисциплинăллă, анлă тавра-курăмлă салтак пулнипе палăрса тăнă. Виçĕ çул хушшинче 26 грамота илме тивĕç пулнă, виçĕ енлĕ ăмăртура (троеборье) спорт мастерĕн 1-мĕш разрядне тултарнă.

Çартан таврăнсан çамрăка уй-хир бригадин бригадирне лартнă. Шăп çав вăхăтра колхозсем кирпĕч хуралтăсем хăпартма тытăннă, анчах строительство енĕпе ĕçлекен маçтăрсем çук. Колхоз правленийĕ сĕннипе Василиă Николаевич Сĕнтĕрвăрринчи училищĕре вĕренсе строительство мастерĕн ятне илсе тăван яла таврăнать. 1971 çулта колхозниксенчен строительсен бригадине йĕркелесе ярать. Колхозри мĕн пур кирпĕч зданисене хăпартаççĕ: сысна вити, ĕне вити, подвалсемпе тыră склачĕсем, гараж, мастерской, общежитипе механизаторсен çурчĕ, шур çăнăх

авăртмалли арман... Бригадăри хастар камнщиксене паян та ырăпа аса илет Василий Николаевич: Езюков М.Ф., Езюков В.Ф., Мурзуков В.С., Нестеров В.П., Марков П.П., Живов Д.С., Живов М.Ф., Петрухин П.Е., Нестеров В.С...

Çулла çăвĕпех стройкăра ĕç вĕренĕ, хĕлле хĕлĕпе вăрман каснă: фермăсенче выльăх апачĕ пĕçермелле, клубсемпе хурал пӳрчĕсене ăшăтмалла, стройкăсем валли хăма та кирлĕ. Шартлама сивве те чăтнă, лапра-çĕпреллĕ çул çинче те нумай асапланнă...

2003 çулта тивĕçлĕ канăва тухичченех юратнă ĕçĕнче тăрăшнă. 1975 çулта- «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» ята тивĕçнĕ. 2 созыв Турхан ял Совечĕн депутачĕ пулма шаннă ăна ял-йыш, суд заседателĕ пулнă. «Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май пархатарлă ĕçшĕн» медале чăннипех те тивĕç вăл, мĕншĕн тесен ялти пĕр обществăллă ĕçрен те пăрăнса юлман, художествăлла пултарулăхра хăйĕн ăсталăхне кăтартнă - 1972 çулта Çĕньял хорĕн йышĕнче Мускаври Кремльти съездсен керменĕнче юрланă.

Çур ĕмĕр каялла Василий Николаевич хăйĕн телейне тĕл пулса çемье çавăрнă. Мăшăрĕ Мария Егоровна та 1949 çулта çак ялтах нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. 3 хĕрпе 3 ывăл çитĕннĕ вĕсем.1964 çулта 8 класс пĕтернĕ Мария Егоровна фермăра фуражирта ĕçлекен ашшĕ Егор Ильич сĕннипе каникул вăхăтĕнче ĕне сума кайнă (дояркăсем çитмен ун чухне - ĕнисем нумай пулнă). Ферма ĕнисене Упамса вăрманне çуллахи лагере леçсе янă. Кĕркунне çитсен Нăрваш Шăхаль вăтам шкулне вĕренме кайса та пăхнă, анчах çу каçиччен хăй сăвакан ĕнесене юратса пăхнă, хăнăхса çитнĕ пирки каялла фермăна кайнă...

Ку тапхăр пирки Мария Егоровна ăшшăн аса илет: «Ферма хĕрĕсемпе питĕ интереслĕ пурнăçпа пурăннă эпир. Ирхине 3-ре ĕне сума пуçлаттăмăр (алăпа сунă та-ха ун чухне). Хĕлле черетпе общежитире дежурствăра çĕр каçаттăмăр - ĕни пăрулать-и, пăрăвĕ чирлет-и...Çывăрса выртман: алса-чăлха çыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ, чĕнтĕр çыхнă (качча кайма хĕр тупри нумай кирлĕ-çке!). концерт-спектакль лартма хаваспах хатĕрленеттĕмĕр».

Вунă çул дояркăра ĕçленĕ хыççăн Мария Егоровнăна шур çăнăх авăртакан арманта ĕçлеме куçарнă. Кунта вăл 8 çул ĕçленĕ. Таçтан та килнĕ ун чух пирĕн яла. Ют ялсенчен килнĕ çынсене темиçе çӳреттерес мар тесе çĕрлене юлса çăнăх авăртса панă. Çавăншăн Мария Егоровнăна нумай çын тав сăмахĕ каланă.

1987 çулта ăна «Росгосстрахăн» Анат Тăрмăш тата Çăл Атăк ялĕсенче ĕçлекен агенчĕ пулма шанаççĕ. 17 çул хушшинче пĕрре те квартал е çулталăк планне тултарманни пулман. Кашни çынпа пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме пĕлнипе, тӳрĕ кăмăллă та дисциплинăллă пулнипе уйрăлса тăнă вăл ытти агентсем хушшинче. Çавăнпа

Мария Егоровна «Росгосстахăн Тĕп Управленийĕн» Патăрьелĕнчи филиалĕн чи лайăх агенчĕ» ята тивĕçет, сăнне Управленин Хисеп хăми çине вырнаçтараççĕ. 2003 çулта «Росгосстрах – Поволжье» обществăн Чăваш Республикинчи Управленийĕн «Тĕп страхлакан агент» хисеплĕ ят çĕнсе илме пултарнă. 2004 çултанпа – «Ĕç ветеранĕ». Пушă вăхăтра алса-чăлха-тапочки çыхать, (хĕл каçиччен çыхнисем 40-50 мăшăра та çитеççĕ - кирек кама та парнелеме шел мар!). Юрра-ташша маçтăр - Çĕньялти «Илем» халăх фольклор ушкăнĕн хастар членĕ.

Мария Егоровнăпа Василий Николаевич Сулагаевсем 3 ывăл пăхса çитĕнтернĕ, вĕрентсе кăларса пурнăç çулĕ çине тăратнă. Халĕ 7 мăнукĕ савăнтарать вĕсене. Ачисем те, мăнукĕсем те аслисенчен ырă тĕслĕх çеç илеççĕ: вĕренӳре маттур, спортпа туслă. Виçĕ ывăлĕ хыççăн халĕ мăнуксем салтак атти тăхăнаççĕ, тин çеç Алеша мăнукĕ çартан таврăнчĕ, Костя мăнукĕ Чулхулара çар училищин курсанчĕ.

Сулагаевсем Çĕньялта чи кăтартуллă мăшăр. «Çемье телейĕ мĕнре-ши? - ыйту çине вĕсем пĕр хăрăссăн çапла хурав параççĕ: пĕр-пĕрне ăнланни, шанни, упрани. Ку чăнах та çапла: Ваççа тетепе Маня аппа пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланаççĕ. Килте килĕшӳлĕх хуçаланать. Пĕр-пĕрин çине сасă хăпартса калани те, ĕçе санни-манни çине пайлани те çук. Йĕппи хыççăн çиппи тенĕ пек, пур ĕçе те пĕрле пурнăçлаççĕ. Çулсем иртнĕ май чир-чĕрĕ те çыпçăнать (Мария Егоровна операцисем витĕр те тухнă). Ахальтен мар Маня аппа çапла калать: «Ваççа çавăн пек ырă чунлă пулман пулсан мана питĕ йывăр килнĕ пулĕччĕ. Эп чирлесен вăл ялан манпа юнашар, эмелпе çеç мар, сăмахпа та сиплет. Ун ăшă алли ман çума перĕнсенех мана вăй кĕнĕ пек туйăнать. (Чăн-чăн юрату хăвачĕ çакă мар-и вара?) Пурнăç пире çирĕп тĕрĕслев витĕр кăларчĕ, 50 çул пĕрле пурăннă хыççăн çапла калатпăр: эпир пĕр-пĕриншĕн çуралнă, пĕр-пĕриншĕн пурăнатпăр, пĕр-пĕриншĕн тĕрев пулса тăтăмăр. Хамăра телейлĕ тесе çирĕппĕнех калама сăлтав пур».

Пурнăçа ахаль пурăнса ирттернĕ тесе те калама çук вĕсем пирки: çурт лартнă (иккĕ те!), ывăл ӳстернĕ (виççĕ те!), йывăç лартнă (пинĕпе!) Ара, миçе çул вăрмана çамрăк хунавсем (посадка тетчĕç) лартма çӳренĕ. Вĕсен тата тепĕр киленĕç пур: ĕмĕр тăршшĕпех вĕллесем тытаççĕ. Ку ĕçре иккĕшĕ те ăстасем! Тутлă пылпа кама кăна хăналаман-ши вĕсем? Пыл сутса укçа тăвас тĕллевлĕ мар хурт-хăмăр ăстисем, сиплĕ пыл кашни çын сывлăхне çирĕплеттĕр тесе ырă сунса сăйлаççĕ тата парнелеççĕ.

«Пурнăç пурăнасси уй урлă каçасси мар», - теççĕ. 50 çул алла-аллăн юнашар утнă мăшăр пĕр-пĕрне ылтăнпа танлаштараççĕ, анчах ылтăнран та хаклине чĕрисемпе туйса тăраççĕ...

## «АЧАРАН ЫР ÇЫН ТĂВАР!»

(В.П. Яковлева çырнă кĕнеке рецензийĕ)

«Ачаран ыр çын тăвар!» кĕнекен юлашки страницине вуласа тухрăм та тарăн шухăша кайрăм. Мĕн тери пысăк та кирлĕ тема хускатнă унта автор – В.П. Яковлева. Кирлĕ тема, çивĕч проблемăсем – уйрăмах паянхи пăтравлă тата çăмăл мар саманара. Çиелтен пăхсан, аван пурăнатпăр темелле: çуртсем хăпараççĕ, çулсем асфальтпа витĕнеççĕ, кашни киле газпа ăшăтмалла тăваççĕ... Анчах та пурте пĕлетпĕр–çке: хваттер хакне ĕç укçипе хăваласа çитме çук, асфальт сарнă ялсем çулсеренех пушанса пыраççĕ, газлă çуртсенче те нумайăшĕнче карчăк-кĕрчĕксем çеç пурăнаççĕ. Ялта та, хулара та ĕçсĕрлĕх хуçаланать. Чĕрĕ ашшĕсем пур çинчех ачасем «тăлăх» çитĕнеççĕ: нуша хăвалать çемье пуçĕсене аякри çĕрсене. Çемьере час-часах ăнланманлăх, пĕр-пĕрне ӳпкелени, мĕншĕн те пулсан айăплани, е, пушшех те хăрушши – хĕрарăма кӳрентерни тĕл пулать.

Ача куçĕ – чи çивĕччи. Вăл пурне те курать, хăй ăс-тăнĕпе виçет, танлаштарать. Чылайăшĕ çак асар-писер пурнăç авăрĕнчен ишсе тухма мехел тупать, анчах вăй-хал çитерейменни те пур. Кăмăлсăрлăх – курайманлăха, ăнланманлăх – тавăраслăха, усаллăх усаллăха çуратать. Çакна вăхăтра асăрхаса ĕлкĕресси – шкулăн паянхи тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Пурнăçри ырă пулăмсене, çемьери татулăхпа ăш-пиллĕхе, обществăри ыр кăмăллăхпа хута кĕреслĕхе çитĕнекен ăру ăс-тăнĕ патне епле çитермелле? Хăш вăхăтра? Мĕнле урокра? Е урок тулашĕнче меллĕрех?

Çак ыйтусене шкул практики çине таянса хуравлакан чăвашла пособисем питех те сахал-ха пирĕн. Çакна шута илсен, В. Яковлеван вĕрентӳ пособийĕ тин çеç ĕçлеме пуçланă педагогсене те, пысăк стажлă учительсемпе воспитательсене те пысăк усă парать тесе шутлатăп. Опытлă вĕрентекен, паллах, хăйĕнне хушса унти уроксене, класс тулашĕнчи ĕçсене пуянлатать, хăйĕн вĕренекенĕсене юрăхлă, вăй çеммиллĕ мероприятисем йĕркелет. Тархасшăн! Халĕ ĕнтĕ пирĕн никĕс пур – ачасене ыр çын пулса çитĕнтерме пулăшакан кĕнеке – пособи. Чăваш чĕлхипе литератури урокĕсен тата класс тулашĕнчи ĕçсен тĕрлĕ варианчĕсем, вĕсенчи шухăша яракан ваттисен сăмахĕсем, вĕренекенсен хайлавĕсенчи туйăмлă

вырăнсем, вăйă урлă воспитани парас мелсем, тата ытти нумай мелсемпе ăслайсем çинчен асăннă ку кĕнекере.

«Ман шутпа, пире, çамрăксене, «чĕрĕ» тĕслĕх çитмест. Сенкер экран çинче тупаймăн ăна, кулленхи пурнăçра сăпайлă, ĕçчен, хăюллă çынсем сахал»,– вулатăп пĕр хаçатра. Тĕрĕс те пулĕ, мĕншĕн тесен кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен пуян та мал ĕмĕтлĕ çынсене тĕл пулас тесен питĕ сисĕмлĕ пулмалла. Çав сисĕм– туйăма ашшĕ-амăшĕн ачине сăпкара-кипкере чух памалла, шкул çулĕсенче – вĕрентекенсен çĕклемĕ пулмалла.

Эпир çуратнă ачасем мухмăр-сухмăрлă пуçпа минресе ан çӳреччĕр, тĕрлĕ тискер ĕçсем ан туччăр, пурнăçра хăйсен тĕрĕс вырăнĕсене тупчăр тесен «çемье – шкул – ача» ăнлавсен сăнчăрĕ çирĕп пулмалла. Килес ăру та кĕрнеклĕ те сăпайлă, сапăр та чипер, тараватлă та пархатарлă çитĕнтĕр, ашшĕ-амăшĕн питне ан хĕреттĕр, тăван халăх ятне ан çĕрттĕр тесен паян уйрăмах çине тăрса ĕçлемелле. Вăхăт çапла ыйтать.

«Ачаран ыр çын тăвар!» кĕнеке çак проблемăсене татса парас ĕçре пысăк пулăшу парать тесе шутлатăп.

2009 ç.

## ПĔРРЕ ТЕЛЕЙ ПУЛМАСАН...

**Чăваш чĕлхи (9 класс)**

(217 стр., 3-мĕш хăнăхтару.
«Авангард» хаçатри публицистика статйин тĕслĕхĕ)

*Турă телей валеçнĕ чух*
*Анне килте пулайман,*
*Çавăнпа та телей патне*
*Анне чупса тухайман...*

Хĕллехи вăрăм та сивĕ, çил-тăманлă каçсенче те, çуллахи шăпчăк сăмси тăршшĕ уяр каçсенче те çак юрра юрлать Валя аппа. Хăш чух çурма сасăпа, хăш чух куççуль витĕр: килте пĕчченех – кăмăла ирĕке яма никам та чăрмантармасть. Иртнине аса илсе куç умне кăларса тăратма та...

Пурĕ çиччĕн пĕр тăван пулнă вĕсем. 1925 çулта çуралнă Хветĕр пиччĕшĕ яппун вăрçинче те пулнă, Аслă Аттелĕх вăрçине те хутшăннă. Киле аманса таврăннă пулсан та вăрăм ĕмĕрлĕ пулнă вăл – 92 çула çитсе вилнĕ. Тури Чакă ялне качча кайнă Маюк аппăшĕ вăрçă вăхăтĕнче те, хыççăн та тракторпа çӳренĕ. Хальхи вăхăтра Нăрваш Шăхалĕнче 86 çулти Анна аппăшĕ, Ростов хулинче Тарье аппăшĕ пурăнаççĕ.

Ашшĕ – Илларионов Андрей Алексеевич Отечественнăй вăрçă пуçланиччен Мускав хули çывăçĕнче салтак службинче пулнă, вăрçă

пуçлансан хими заводĕнче ĕçленĕ. Сывлăхсăр килнĕ те Валя аппа 20-ре чухне çĕре кĕнĕ. Амăшĕ – Вера Николаевна кунĕн-çĕрĕн колхозра вăй хунă.

Çĕньялта пурăнакан Валентина Андреевна Денисова 14 çулта чухнех фермăна ĕçлеме кайнă. «Мана та ĕне сума вĕрентĕр-ха, - тетĕп унта ĕçлекенсене,- унсăрăн эпир çурта та çĕнетейместпĕр». Çапла доярка пулса тăнă. Каярахпа лашапа нумай çӳренĕ. Канаша удобрени тиеме кашни çул кайнă. «Грузовой машинăпах çӳреттĕмĕр. Тутă пулман ĕнтĕ –ВРЗ столовăйне паттун илме каяттăмăр, вăрăм черет тăраттăмăр», - куççульпе аса илет Валя аппа.

Хĕр çулне çитсен ял каччипе Виталий Денисовпа паллашнă.

- Хветĕр тете киличчен мана килĕшнĕччĕ ĕнтĕ – вăл качча парасшăн та марччĕ. Пирĕн туй хыççăн вăл Краснодара ĕçлеме тухса кайрĕ. Анне пĕччен юлчĕ, пирĕн килте хутма вутă та çук. Анне вара хамăр çуртра шкул ачисене вĕренме ирĕк пачĕ – икĕ çул шкул вуттипе ăшăнса пурăнкаларăмăр. 1953 çулта çуралнисем 1961-1963 çулсенче пирĕн патра вĕреннĕ.

– 1961 çулхи ноябрьте туй туса пĕрлешрĕмĕр, - малалла аса илет Валентина Андреевна. – Эпĕ те, мăшăрăм Витали те кунĕн-çĕрĕн ĕçре (фермăра ĕçлекенсене пире ĕнесемпе пĕрле çуллахи лагере 3-4 уйăхлăха вăрмана леçсе янă). Витали, «С -100» тракторпа ĕçлекенскер, Ишлĕ Шетмĕ вăрманне эрнелĕхе каятчĕ. Пĕрне пĕри канмалли кунсенче кăна кураттăмăр.

1962 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче Виталине салтака илсе кайрĕç. (Авланиччен вăл трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухсанах çĕнĕ çĕре - çерем çĕрсене уçма кайнă, унтан Магнитогорск хулине металлурги заводне тунă çĕре янă). Икĕ уйăх çурăри ывăлпа тата вăтă аннепе тăрса юлтăм. Нуши кунпа пĕтмен иккен - çулталăк Барнаулта службăра тăнă хыççăн декабрь уйăхĕнче киле хăрушă хыпар çитрĕ: ман Витали вилнĕ! Эпир ун чух бригадăра кантăр типĕтмелли сарай тăррине тăпра хăпартаттăмăр. Хура хыпара илтсен тĕнче ишĕлсе аннăн туйăнчĕ. Унтан та ытларах – пытарма каймалла теççĕ. Мĕнле каймалла, епле çитмелле – инçе-çке! Ывăлсемпе иксĕмĕр (упăшкан пиччĕшĕ – Николай Александрович Денисовпа) декабрĕн 2-мĕшĕнче тухса кайрăмăр. Юр çуманччĕ-ха ун чух, резина атăпа кайнă. Барнаула çитрĕмĕр – унта сивĕ. Кăçатă тупса тăхăнасчĕ –кама паллатăп - ха унта? Юрать ку хулара хамăр ялсем –Нестеров Иван Сидорович, Макарова Нина Клементьевна, Шакина Еня пурăннă. Иван арăмĕ хăйĕн ботинкине пачĕ вара...

Виталин чаçне аран шыраса тупрăмăр. Мĕн пулнă-ха мăшăрăмпа? «Сĕт çулĕпе кайса çу çулĕпе килмелле пултăр», - тесе чиперех пиллесе ăсатрăмăр - çке! (Ăшра малтанах темле лăпкă марччĕ – ха, мĕншĕн тесен салтакăн килтен тухсан каялла çаврăнса

пăхма юрамасть, никам патне те кĕме юрамасть тенĕ ĕлĕкех ваттисем – Витали вара кӳршĕри тăвансем патне кĕнĕ. Çак хыпара пĕлтерчĕ пуль тетĕп халь.)

Витали мĕнле вилнине командирĕ каласа пачĕ. Вăл кун машинăпа инçе çула рейса кайнă, кайран увольненине тухнă. Каçхине гаража кайнă та машинине ăшăтас тенĕ пуль (сивĕ те-ха – ыран каллех рейса каймалла) - ĕшеннĕскер çывăрса кайнă, сĕрĕмпе чыхăнса вилнĕ терĕç. Декабрĕн 6-мĕшĕнче çавăнти салтаксен масарне пытартăмăр вара. Палăк та, чартак та лартнă çар чаçĕ. Анчах урăх пĕр пулăшу та, ачашăн пособи те илеймерĕм – служба ĕçĕсене пурнăçланă чух вилнĕ тесе çырман та мана панă справка çине....

Пурăнтăмăр вара çапла. Майĕпен çĕнĕ çурт лартрăмăр. Кашни кун колхоза ĕçе утнă, кашни çул преми илме тивĕç пулнă: пусма тĕркисем, пододеяльник, йĕтĕн пир шап-шур простынь панăччĕ те – халличчен сарма шеллесе пурăнатăп. «Ĕç ветеранĕ» ята та тивĕçнĕ.»

Ашшĕсĕрех ӳссе çитĕннĕ Вова ывăлне 1986 çулта авлантарнă. Мăшăрĕ Вера Петровна – учительница. Халĕ вĕсем Чĕмпĕр облаçĕнче пурăнаççĕ. Вова çăкăр заводĕнче слесарь пулса ĕçлет, мăшăрĕ – шкулта. Икĕ ывăл çитĕнтернĕ, пĕри авланнă та ĕнтĕ. Валя аппан Злата тата Владик мăнукĕсем пур.

1992 çултанпа Валентина Андреевна пĕчченех пурăнать. Пĕччене пахчара тăрмашать, хĕлле юр хырать е картишĕнчен юр туртать. Сывлăхĕ чаплах мар, паллах: чĕри те сикет, юн пусăмĕ те вылять, ал-ури те сурать...

«Çулла çăмăлтарах – каçсем кĕске, кăнтăрла кӳршĕсемпе урамра калаçса ларма пулать. Хĕллехи çил уланă каçсене ирттерме питĕ йывăр. Алса-чăлха çыхатăп, мăшăр салтакран янă çырусене вулатăп – вĕсене пăхмасăр пĕлетĕп пулин те. 11 уйăх мăшăрлă пурнăçпа пурăнтăм – мăшăр ăшшине туйса та кураймарăм. Вăл паян та куç умĕнче çап-çамрăк та сып-сывă пек. Манран çынсем ма качча каймастăн тесе нумай ыйтнă. Пĕрре кайса ыр курманнине тепре кайса телейлĕ пулăп – и теттĕм яланах. Витали асран тухмарĕ...»

Вăхăт шăвать - ĕмĕр иртет. Ватлăхра çемье ăшшине туйса пурăнас килет, мăнуксене утьăкка сиктерсе кураймарăм – кĕçĕн мăнуксене чĕрке çине лартса çупăрлас килет... Çак ĕмĕт пурнăçланасса шанатăп...»

## СЦЕНАРИСЕМ, ЛИТЕРАТУРĂПА МУЗЫКА КОМПОЗИЦИЙĔСЕМ, ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ ЛИТЕРАТУРИ ЭРНИСЕН ПЛАНĔСЕМ

### ***«Чунра* ĕмĕрех *янрать «Шкул вальсĕ»***

### (2009 çулхи февралĕн 7-мĕшĕ – тĕл пулу каçĕ).

*Илемлетнĕ залра юрă янăрать: «Школьные годы».*

Сцена çинче – ачасен хорĕ. «Школьная страна»- 11 класра вĕренекенсем юрлаççĕ.

Ертсе пыракансем: 1 -Сывлăх сунатăп, ачасем!

2.- Здравствуйте, ребята!

3 - Аван-и, ачасем!

4 - Здравствуйте, садитесь!

Учитель: Калăр-ха, кам илтмен пулĕ çак сăмахсене?

Тĕрĕс, пурте илтнĕ.

Ахальтен çак сăмахсемпе пуçламарăмăр эпир хамăрăн тĕл пулу каçне. Çак сăмахсемпе пуçланаççĕ шкул сукмакĕсем, пурнăç çулĕ.

Е.п. 1. Ырă каç пултăр сире пурне те!

2. Ырă та савăнăçлă каç сире, хаклă ентешсем – ялтан пухăннисем, инçетрен килнисем – тăван шкулпа, ачалăхри тустантăшсемпе, сире пурнăç çулĕ çине кăларакансемпе тĕл пулма, калаçма, аса илме, савăнма!

У.: Эсир паян пирĕн чи чаплă та чи хаклă хăнасем! Йышăнсамăр пирĕн салама!

*( Ачасен саламĕ).*

1. В детском саде мы растем,
   Скоро в школу мы пойдем.
   Будем мы читать, писать –
   Дисциплину нарушать.
2. Что ты, Дима, говоришь,
   Ты и в садике шалишь.
   В школе надо лишь учиться,
   На уроках не лениться.
3. Нам сегодня рассказали
   Кто собрался в этом зале.
   Здесь рабочие, студенты,
   Даже спецкорреспонденты.
   Санитарка и швея,
   Даже мама здесь моя.
4. Здесь ученый и строитель,
   Врач, шофер и наш учитель.
   Токарь, воин, журналист,
   И заслуженный артист.

5. Инженер и тракторист,
И доярка, и таксист,
Свинарка, экономист,
Повар, даже программист!
6. Почему так много света,
И улыбок, и людей?
Тут, конечно, нет секрета,
В нашей школе торжество!
Разгадали мы секреты:
Это выпуск разных лет!
7. Посмотрите, посмотрите на них зрители.
Все сияют как новые полтинники.
Все такие хорошие, все такие пригожие –
Не зря любуются ими родители,
А также окрестные зрители.
8. Школа полна талантов,
Много поэтов и музыкантов.
Голосистых певцов
И душевных чтецов!
9. Пролетели годы,
Что крылаты птицы.
К встрече с одноклассниками
Сердце так стремится.
10. Приходите, заходите,
В школу поспешите!
Вместе с одноклассниками
Дружно посидите!

Кĕçĕрхи каçăн йĕрки: 1.«Пĕтĕм кăмăлтан» калаçу.
2. Аса илӳ урокĕсем.
3. Асăнмалăх сăн ӳкерттерни.
4. Тĕл пулу вальсĕ.

Е.п. Кунта килнĕ хăнасене саламлама шкул директорĕ Ершов Владимир Михайлович сăмах илет.

*( Шкул директорĕн сăмахĕ).*

Е. п. 1. Юратнă шкул, каймастăн эс
Нихçан асран.
Кунта эпир вĕреннĕ - çке
Мĕн ачаран.
2. Юратнă шкул, ăс панă шкул,
Тавах, тавах,
Паян каллех телейлĕн кул –
Эпир кунтах!
1. Пирĕн шкулпа тĕплĕнрех паллашар-ха.

2. Халĕ вăл 10 çул каяллахи те мар, 20 çул каяллахи те мар. *(Шкул çинчен хатĕрленĕ презентаци экран çине тухать).*

Музыка саламĕ:

Е.п. Çамрăк вăхăт, ăçта эс?
Халь ăçта шур кĕпе?
Кĕркунне кайнă кайăк
Килет çур çитеспе.
Анчах яшлăх килеймĕ–
Шурă çӳç хуралмасть.
Çавах ватлăх илемĕ
Яшлăха манаймасть.

Учитель. 1939 çулта Çĕньял шкулĕнчен 50 ача вĕренсе тухнă. Унтанпа нумай шыв юхса иртнĕ. 60 çул каяллахи яш-кĕрĕм паян асанне-кукамай, асатте-кукаçи. Йывăр шăпа хатĕрленĕ вĕсем валли пурнăç: шкул сакки çинченех вăрçă вутне кĕнĕ вĕсем. Чылайăшĕ вăрçăра пуç хунă.

1944 çулта вĕренсе тухнисене те шăпа ачашламан: çĕр-шывра вăрçă вучĕ алхасать. Ку çул вĕренсе тухнă 24 çамрăк тӳрех хĕрӳ ĕçе кӳлĕнет. Вĕсем класĕпех яла юлнă теме те пулать.

Е.п. Ку кăларăмсен ячĕпе сцена çинче илемлĕ юрă янăрать.

Музыка саламĕ:_____

Учитель. Тĕлĕкĕмре те йыхăраççĕ, сас параççĕ
Çараураллă, çара пуçлă ачасем,-
Ав, лапталла Хиртикасра çаплах, çаплах выляççĕ
Пĕрле ӳссе тахçан ар пулнă тусăмсем.

Ку сăвва 1949 çулта вĕренсе тухнă, каярахпа тĕнчипе чапа тухнă Геннадий Лисин (Геннадий Айхи – Чăваш халăх поэчĕ) çырнă.

Вĕсем пурĕ 13-ĕн вĕренсе тухнă, кашниех ĕçпе чапа тухнă, ялпа шкула та чапа кăларнă – халь пирĕн ята ют çĕршывсенче те пĕлеççĕ.

Е.п. 1954 çулта 26 çамрăк алла аттестат илнĕ, хăшĕ вĕренме, хăшĕ ĕçлеме вырнаçнă.

Акă Беляев Валерий Варсонофиевич ача чухнех çивĕч ăсĕпе тĕлĕнтернĕ, кайран авиаиспытатель пулса ĕçленĕ.

Е тата – Вазюков Николай Васильевич, Кошелев Петр Николаевич - ĕмĕрĕпех колхоз производствинче вăй хунă, тĕрлĕ наградăсене тивĕçнĕ. Мухтанатпăр вĕсемпе, саламлатпăр.

Музыка саламĕ:_____________

Е.п. Хыт хурланмастăп эп иртнишĕн,
Çапах шутлатăп халь час-час:
Ачалăха таврăнассишĕн
Мĕнле турра парне парас?

Учитель: Çапла калаççĕ халь 1964 çулта тухнă 33 хĕрпе каччă, 1969 çулта шкулпа сыв пуллашнă 41 çамрăк.

Вĕренсе тухса кайнисене хăйсене сăмах пама та вăхăт çитрĕ пулĕ:

Музыка саламĕ:_______________

Учитель: 1974 çулта 41 ача вĕренсе тухнă, вĕсенчен 9-шĕ çеç яла юлнă.

Кусем – ман тантăшсем. Такам та пур пирĕн хушăмăрта: врач, учитель, механизатор, инженер, оператор – пурне те каласа та пĕтереймĕн.

Тусăмсем, тавтапуç кунта килнишĕн, сывлăхпа пурăнар, пурнăçпа савăнар. Епле-ха сире кунта килнĕ ятпа юрăпа саламлас мар?

Йышăнсамăр музыка саламне:

Е.п. Малалла кĕске справка: 1979 çул – 41 ача вĕренсе тухнă;
1984 çул – 38 ача;
1989 çул - 37 ача;
1994 çул – 24 ача;
1999 çул - 31 ача;
2004 çул - 10 ача.

Учитель: Тархасшăн, сире сăмах. Ăçта эсир, мĕнле пурăнатăр, мĕн ĕçлетĕр?

Е.п. Шел пулин те, пурнăç çухатусăр пулмасть.

Вăрçăра пуç хунă ентешсене асăнса, пире вĕрентнĕ учительсене сума суса, тĕрлĕ сăлтавсене пула вăхăтсăр пиртен уйрăлса кайнă юлташсене асра тытса 1 минут шăп тăма ыйтатăп. *(...) Тавтапуç!*

Учитель. Кашнин шăпи пĕр евĕрлĕ пулаймĕ.
Ак институт, завод, çĕн стройкăсем...
Анчах нихçан, нихçан та асран каймĕç
Шкулта ирттернĕ ырă вăхăтсем.

Е.п. Мĕнле пурăнаççĕ паянхи студентсем?

(Студентсен ячĕпе сăмах калаканĕ: ________

Музыка саламĕ:_________

(Сцена çине кăçал вĕренсе тухса каякансем тухаççĕ.
Вĕсем пурте шкул формипе, хăнасем валли парнесем йăтнă).

Учитель: Иртеççĕ ырă вăхăтсем,
Çулсем пит хăвăрт - çке шăваççĕ.
Чуна хурлантарать «Шкул вальсĕ»–
Кĕçех тухатпăр вĕренсе...

Е.п. Кăçал шкултан вĕренсе тухакансен ячĕпе сăмах калать.

*Музыка саламĕ: «Тăван шкул вальсĕ»*

(Сăмахĕсене М. Мадюкова, кĕввине Г. Чурбанов çырнă)

*(11 класра вĕренекенсемпе пĕрле залри çынсем пурте юрлаççĕ, вальс ташлаççĕ).*

Тăван шкул вальсĕ

1.Асăмра яланах пурăнать
Чи малтан вулани, шутлани.
Тăван шкул ав, паян йыхăрать-
Миçе çул тĕл пулма шутлани.

Хушса юрламалли:
Тăван шкул! Тăван шкул!
Ялан çамрăк эс пул!
Ĕмĕтсем тĕл пулма чĕнччĕр-и?
Тăван шкул! Тăван шкул!
Саламла та йăл кул!
Ачусем кашни çул килччĕр-и?

2.Пухăнатпăр паян васкаса
Ют ялтан, хуларан, инçетрен.
Шăнкăрав кĕмĕл саслăн юхса
Асилӳ урокне илĕртет.

Хушса юрламалли:

3.Тав тăватпăр, учитель, сана,
Эс вĕрентрĕн ыр пурнăç тума.
Тăван шкулăм, тавах пур чунтан,
Эс тухмастăн нихçан та асран!

Хушса юрламалли:

Учитель: Пирĕн тĕлпулу малалла уйрăм классенче тăсăлать, унта аса илӳ урокĕсем пулаççĕ.

Тавтапуç кунта килнисене! Тепре тĕл пуличчен!

## ЧУНРА ĔМĔРЕХ ЯНРАТЬ «ШКУЛ ВАЛЬСĔ»
## (тĕл пулу каçĕ)
## (2011 çулхи февралĕн 6-мĕшĕ)

1. Иртеççĕ ырă вăхăтсем,
Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ-
Чуна хумхантарать шкул вальсĕ!
Кĕçех тухатпăр вĕренсе...
Иртеççĕ ырă вăхăтсем...

Е.п. Çапла, тин çеç çак юрра юрласа çӳреттĕмĕр, тин çеç малалла хăш çулпа утмаллине те пĕлместĕмĕрччĕ, Акă вĕренсе те тухрăмăр, акă пысăк çынсем те пултăмăр – тăван шкул вара туртать те туртать хăй патне. Тăван шкул йыхравĕпе пухăнтăмăр паян эпир кунта, паянхи тĕл пулăва. Тус-тантăшсемпе курса калаçма, иртнисене ăшшăн аса илме, пуласси çинчен ĕмĕтленме те. Пирĕн пурнăç малалла вĕт-ха!

2. Апла пулсан, ырă каç пултăр пурне те! Ăшă тĕл пулусем, хĕрӳллĕ саламсем, манăçми аса илӳсем кĕтеççĕ Сире паян!

1. Килĕрех, тĕпелелле иртĕрех! Пирĕн хăна пулăрах!

2. Асамлă парăс вăл - хастарлăх,
Асра юлмалăх вĕренӳ.
Хаваслă шкул сĕнет ытарлăн
Телей, хăюлăх, ĕненӳ.

1. Сире, ĕнерхи шкул ачисене, паянхи ĕç çыннисене, студентсене, кăçал шкултан тухса каякансене – пурне те, кам хăйĕн пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утать, кам пурнăç сукмакне суйлать çеç-ха – пурне те халаллатпăр çак тĕлпулу каçне!

2. Эсир кĕске вăхăтлăха та пулин манăçми шкул çулĕсенче пуласса, уроксенче ларасса, хăвăра шкул ачи пек туясса шанатпăр эпир.

(Шăнкăрав янăраса каfive.

*Шкул ачисем ( 9 класс) сцена çине тухаççĕ, салам сăмахĕ калаççĕ.*

1. Халĕ сире шкул ачисем хатĕрленĕ концерта пăхма сĕнетпĕр.
1) «Школьные годы» - 9 класс хорĕ.
2) «Тăван шкул вальсĕ» ----«»---
3) Кристина Мадюкова. «Прощальный вальс».
4) Екатерина Елимова. «Пĕрремĕш вĕрентекене» (сăвă).
5) «Учительская улыбка» - 7 класс хорĕ.
6) Костя Никитин. Юрă «Школьный вальс».
7) Школьный вальс (9 класри ташă ушкăнĕ).

1. Аякри 1935 çул. Вĕсем пурĕ 14-ăн вĕренсе тухнă. Вĕсенчен пĕри Чернова Анисия Ивановна халĕ Мускавра пурăнать.

(Чернова А. аса илĕвне Михеева Ирина вуласа парать.)

2. Хĕвелĕм, эсĕ манпалан
Утатăн 70 çул ытла
Пăхса илсемччĕ каялла -
Хыçра выртса юлан çула.

Пире çав çул ансат пулман,
Эпир унта мĕн-мĕн курман.
Шар турĕ вăрçă халăха-
Çĕршывăм чăтрĕ выçлăха.
Мĕн чул чи çывăх юлташсем
Тăвансемпе тус-тантăшсем
Юлмарĕç сывă çĕр çинче,
Пуç хучĕç вăрçă хирĕнче

1. 1940 ç. вĕренсе тухнисем 41 ача пулнă. Арçын ачисем пурте тенĕ пекех фронтра пулнă, чылайăшĕ таврăнайман.

2. 1945 ç. 21 ача шкултан вĕренсе тухнă. Павлова Нина Николаевна тата Гаврилов Алексей Никифорович учитель ĕçне суйласа илсе нумай çул хушши ачасене вĕрентнĕ. Сергеев Константин Андреевич – колхозри чапа тухнă комбайнер çеç мар, 10 ача ашшĕ те.

1. Малалла кĕске справка. 1950 – 29
1955 – 30
1965 – 33
1970 – 38
1975 – 41
1980 – 43
1985 – 19 ача вĕренсе тухнă.

Халĕ вĕсене хăйсене сăмах парар-ха.

*(Залра ларакан юбиляр-выпускниксене сцена çине чĕнсе калаçтараççĕ)*

2. 1990 çулта тухнисем вăтам пĕлӳ илни çинчен аттестатпа тухнă. Вĕсем пурĕ 28-ăн пулнă.

Ăçта ман ачалăх? Калам-и
Вăл сывă, вăл канăççăр, шух –
Ем-ешĕл Çĕньялăн урамĕ
Ача-пăчапа тулнă чух.

Мĕнле ман ачалăх? Çăп-çăмăл
Чупать вăл каçчен çуркунне.
Шывра вăл çӳрет чăмпăл-чăмпăл
Шип-шип тухиччен урине.

- Сцена çине килсемĕр, тархасшăн!

1. 1995 ç. 33 ача алла аттестат илнĕ. Кунта килнисем, тархасшăн, сцена çине. Паллаштарăр пире, ăçта тĕпленнĕ эсир? Мĕн ĕçлетĕр?

*(1995 ç. вĕренсе тухнисем калаçаççĕ)*

2. 2000 çул. 24 ача вĕренсе тухса тĕрлĕ еннелле саланать. Халĕ вĕсене сăмах:

- ————————————————-

1.5 çул каялла шкулпа сыв пуллашнисем чылайăн залра лараççĕ, пĕр – пĕринпе калаçса пĕтереймеççĕ. Атьăр- ха пĕрле пуплер. *(2005 çулхи выпускниксем калаçаççĕ)*

2. Кунта килнĕ мĕн пур хăнасене саламлама шкул директорĕ Мадюкова М.И. сăмах илет.

3. Шкул ачисен ячĕпе Шихранова Аннăна сăмах паратпăр.

1. Пирĕн тĕл пулăвăн 1-мĕш пайĕ вĕçленсе пырать. Тавтапуç пирĕн пата килме кăмăл тунăшăн! Тепре тĕл пуличчен!

*(Пурте пĕрле «Мы желаем счастья вам» юрра юрлаççĕ).*

## «АЙХИ ВУЛАВĔСЕМ – 2019»

(2019 çулхи февралĕн 21-мĕшĕ – сăвă вулакансен районти конкурсĕ)

КОНКУРС йĕрки:

1. «Айхи ачалăхĕ» - шкулти театр студийĕн инсценировки.
(Ертӳçи – Патăрьелĕнчи искусство шкулĕн директорĕ – Антонова Алина Владимировна)

2. «Çын – мĕскершĕн çуралать?»
(Г.Айхи сăввисем тăрăх йĕркеленĕ литературăпа музыка композицийĕ). *(Мадюкова М.И.)*

1. Çын мĕскершĕн çуралать?
Акă. вăл утма пуçлать.
Улăхра чечек курать,
Çын илем мĕнне туять,
2. Акă çурт тăвать – чултан,
Шыв тĕлне лартать – арман.
Çумăрпа çиле сăнать,
Пушхиртен вăл сад тăвать.
(Кун пирки эпир пĕлетпĕр:
Çын тĕллевĕ - ĕç вăл тетпĕр).
3. Пур пĕрех этем çĕрле
Тинкерет-çке çӳлелле...
Çăлтăр – ахаль мар çиçет,
Хăй патне ăна чĕнет.
(Тахçаннах поэт каланă:
Çын ĕмĕтленме çуралнă).
4. Çын – тĕнче уçлăхĕнче,
Уйĕ ун – мĕн пур тĕнче.
Çăлтăрсем патне çитет вăл,
Килти пек унта ĕçлет вăл.
5. Çĕр çине анать этем,
Акă унăн тусĕсем,
Ак савнийĕ - юнашар,
Ашшĕ, амăш... Ку çеç мар,
Савăнмалăх, юратмалăх
Ĕмĕр пур ун – савнă халăх.
6. Çын çуралнă юратма,-
Çавă аслă туйăма,
Ĕçлесе те кĕрешсе,
Халăхпа пĕрле ӳссе,
Хăй çĕр-шывĕнче тупма
7. Каç. Таçта - Çĕньялăм,

Çул çинчи ман паллăм,-
Кăшт хура, кăшт шурă...
Çил те эп – пĕр юрă.
Ял – чĕремĕр пирĕн,
Манăн, юрăн, хирĕн!
Ун тавра кĕрлетпĕр,
Илттĕрччĕ теетпĕр.

8. Тен, кăшт çакна асра тытар
(Ыр шухăш вăл – тем чул):
Юратасса кĕтекен мар,
Юратакан эс пул.
Тата – ăсра такăрлатар
Кăшт - çакăн евĕр «çул»,
Ӳпкелешмешкĕн – йывăр мар,
Каçаракан эс пул.

9. Çамрăклăх - çук. Ватлăха - курас çук.
Эп юлас пек ялан – хальхи евĕр:
Сăвăç вăл – чӳк парни пек.
Манăн - çавă парне пулмалла...

10. Вунсаккăра ярса пусатпăр,-
Кун-çул шăвать хăй юххипе,
Çитет, - чĕре пĕр харăс таптăр
Васкавлă пурнăç таппипе,
Кашни таппи – мала васкаттăр,
Мала – кун-çулăн тăршшипе.

11. «Ăслăрах» тесе хама
Шутăм çук танлаштарма
Çак çеç пур халь каламалăх:
Хам - вĕреннĕ эп камран?
Ял-йышран. Анчах унра
Пулнă – манăн пĕтĕм халăх.

12. Кунта пурте сана тăван.
Тăван çĕр-шыв. Юратнă халăх.
Тăван чĕлхепеле çыран
Тăван çынсем асра тытмалăх.

13. Тĕллевсĕре тĕллев эс патăн,
Ят патăн – ятсăр чух мана.
Тăванлăх, - уншăн эп пурнатăп,
Тăванăм, йышăн тăванна!

14. Сăвăç, эс кашнийĕнпе:
Эс ача – ачасемпе.
Ватă пул – ваттисемпе,
Санăн ăсунта пуплеччĕр

Вилнисем – чĕррисемпе.

15. Вĕçĕм хăть епле пулсан та,
Пĕр çакна анчах сунасчĕ:
«Мĕн тумаллине йăлт турăм,» -
Теейсе çеç уйрăласчĕ.
Пурнăç умĕнчи ман парăм
Пултăрах –и хĕтĕртӳçĕ:
Парăм чактăр, юлтăр ĕçĕм –
Вилĕмре вилми чĕртӳçĕ.
16. Çын пулмалла вăл ирĕклĕ, телейлĕ.
Çак ирĕк пуçланать вăл çĕр çинче.
Ачалăх пултăр лăпкă та хĕвеллĕ,
Çын ӳстĕр ыр çанталăк çутинче.
17. Çын – хăй ăсне пурăннăçем ăнкартăр,-
Кашнин ăсне хисеплĕ вăл кайран.
Вăйне сиссе, вăл тӳпене хăпартăр,
Ырра ӳстертĕр – вăйĕпе пĕр тан.
18. Вăл - çĕр çинчи ăс-хăвата илемлĕн
Чи çӳллĕ вырăна çитерекен
Çак хăвата унран туртса илеймĕн,-
Ирĕкленсе ӳсет вăл кунсерен.

*(Пурте пĕрле калаççĕ):* Тав сире! – Йышăрта
Ман элчел, юрату пек пуçланчĕ,
Сиплĕ, ыр кăмăлта
Тав сăмахĕ пек, вăл ылтăнланчĕ.
Çавăнпа, тусăмсем,
çак уяв маншăн – килĕм уявĕ.
Кашни кил ăшшинче
çутине ман салам та упратăр!

**Вĕç-вĕç, куккук** (пурте юрлаççĕ)

Вĕç-вĕç, куккук, вĕç, куккук
Вăрман хĕрне çитиччен
Вăрман хĕрне çитсессĕн
Чăрăш тăрне ларса кан.

Чăт-чăт, хăта, чăт,хăта
Эпир тухса кайиччен.
Эпир тухса кайсассăн
Кĕрекене ларса кан.

Вĕç-вĕç, шăпчăк, вĕç, шăпчăк
Вăрман хĕрне çитиччен
Вăрман хĕрне çитсессĕн
Çăка çине ларса кан.

Чăт-чăт-чăт, тăхлач, чăт тăхлач
Эпир тухса кайиччен.
Эпир тухса кайсассăн
Тӳшек çине выртса кан.

**3. Ертсе пыракан:** Ырă кун пултăр пурне те!

Кăçалхипе 13-мĕш хут эпир Çĕньял шкулне пухăнтăмăр. Чăваш халăх поэчĕ, куçаруçи, ют çĕршывсен элчи – чăн-чăн хамăр ял ачи Геннадий Айхи пултарулăхне хак пама, пуç тайма, асăнма та!..

Мĕншĕн тесен, Н. Теветкел поэт калашле:

**Çаплах сывлать-ха (ăс-халу сып-сывă!)**
**Кĕнекӳре пурăнакан тĕнче.**
**Хĕвелленет чăваш тӳпи, çĕр-шывĕ –**
**Сас пачĕ çуркунне ял хыçĕнче.**
**Хăш чух çак вăхăт пусăмĕ пит йывăр.**
**Тем чухлĕ ĕç, инкеклĕ тĕрлĕ кун.**
**Хура çĕр сăвăça чăтма çук йывăр –**
**Пĕрех çак шухăш пуç тавра ан кум!**

«Айхи вулавĕсем» çулсерен çĕр ытла ачана пуçтарать. Апла пулсан поэт пирĕнпе, юнашар, пирĕнпе савăнать, малашлăха шанать. Мĕншĕн тесен:

**Пĕр çул пурăнатпăр - Айхисĕр...**
**Ик çул пурăнатпăр - Айхисĕр...**
**Çĕр çур пурăнсан та Айхисĕр –**
**Поэзи вучахĕ Айхисĕр –**
**Чăнах та калатпăр – хĕмсĕр!**

Çав хĕмне вăйлăрах ялкăштаракансем вара – эсир, кунта килнĕ хăнасем, пирĕн туссем! Апла пулсан эпир сире кĕтсе хапăл тăватпăр!

Сăмах илет Г.Айхи ячĕпе хисепленекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул директорĕ Иванова Кристина Владимировна.

4. Конкурс йĕркипе районти вĕрентӳ пайĕн методисчĕ Перепелкина Елена Софроновна паллаштарать.

(Номинацисемпе пайланă кабинетсем тăрăх саланаççĕ)

## «ÇĔНТЕРĔ ТЕ ЯЛКĂШĔ МИР ТĔНЧИПЕХ...»
## (Патăрьел районĕнчи шкул ачисем хушшинчи «Айхи вулавĕсем» конкурс валли – Г.Айхи сăввисенчен йĕркеленĕ литература композицийĕ)
## 20.02.2020

1. Ертсе пыракан. Айхи сăвви... Айхи тĕнчи... Айхи шыравĕ...

«Унăн малтанхи сăввисенчех тăван литературăна çĕнĕ, хăйне евĕр талант килни палăрчĕ,... паянхи пурнăç темисене кăмăллани, çывăх тăни, патриотизм, никам каламаннине хăй евĕрлĕ, кĕскен те витĕмлĕн калама тăрăшни тӳрех сисĕнет»,- тет ун пирки Чăваш халăх поэчĕ Александр Артемьев.

2. Е.П. Геннадий Айхин пĕрремĕш кĕнеки 1958 çулта тухнă. Çак кĕнекере унăн малашнехи ĕç-хĕлĕшĕн кăтартуллă тема палăрчĕ. Ку вăл – иртнĕ вăрçăра пуç хунисене хурланса асăннипе пĕрле миршĕн кĕрешме тунă тупа.

Çавăнпа та кăçал конкурса «Çĕнтерĕве – 75 çул» девизпа ирттерес терĕмĕр.

1. Е.П. Çак тема «Тупа» сăвăран пуçланнă. Ашшĕ вилни çинчен хут илнĕ кун авторшăн нихçан сипленми суран хăварнă.

Ашшĕ, Лисин Николай Андреевич, 1943 çулта Смоленск хулине ирĕке кăларнă чух пуçне хунă.

1).Анчах пĕр куна, пĕр синкерлĕ куна,  
Манма пултараймăп нихçан, ĕмĕрне.  
Çав кун вут хыптарчĕ ман лăпкă чуна,  
Телейĕме вăрчĕ куççулĕ ăшне.

2.Е.П. Ун чухнехи çамрăксен ачалăхĕ йывăр пулнă, Вăрçа пула вĕсем чи çывăх çыннисене çухатнă, çителĕклĕх мĕнне пĕлмен.

1.Е.П. Темле йывăр пулсан та хуçăк кăмăллă пулса ӳсмен вăрçă инкекне тӳссе ирттернисем, вĕсем пĕр-пĕрне тăвансем пек юратнă.

2.Е.П. Ахальтен мар поэтăмăр хăйĕн пĕр кĕнекине «Аттесен ячĕпе» тесе ят панă.

Геннадий Николаевич кунта паянхи пурнăçа çывăх тăрса атриотла талпăннă хастар та паттăр ĕçченсене мухтать. Çав вăхăтрах Аслă вăрçă кӳнĕ инкеке хăй чунĕпе туйса хак парать, çĕнтерĕве çывхартма хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă салтаксем умĕнче пуç таять.

2) Çил урнăн улатчĕ ула урамра,  
Йĕрсе тулашмашкăн сăлтав пулнă ун.  
Чăтма йывăр хурлăх нумай кăкăра,  
Нумай чĕрене тăрмаланă çав кун.

3) Чуна çитсе çапрĕ куççульлĕ хыпар:  
Йĕтре касса татнă атте пурнăçне....

Виç тăлăх эпир... Виç кăтра пуç çине
Хаяр, шелсĕр вилĕм пăрахрĕ кăвар.
4) Тин çеç тĕвĕленнĕ çемçе папкасем –
Ларатпăр анне çумĕнче тĕршĕнсе.
Тăвατă чунра халь тапать пĕр чĕре:
Инкек уйрăлми пĕрлештерчĕ пире.
5) Эп пăхрăм чĕнмесĕр анне куçĕнчен, -
Ялан вĕсем ырăччĕ - çĕмĕрт куçсем!
Халь хурлăхăн сĕмĕ чĕтрет вĕсенче,
Нихçан çак сĕмрен тасалаймĕç вĕсем...
6) Çӳретĕп çĕрĕпе Смоленск таврашĕнче.
Сив çил юрпа перет, ура айне чăмать,
Çапах утатăп эп хир варринче пĕччен.
Таçта çак çĕрсенче аттеçĕм çывăрать.
Çӳретĕп çавăнпа, юра ашатăп эп.
Йĕри-тавра сĕм каç, çил-тăвăл ахăрать.
7) Ăнланнă пулăттăн, атте, пĕр эс анчах:
Эп, сулăмлă сăмах тупма пикенекен,
Тен, çепĕç сăмахсем пĕлетĕп ытларах...
Санпа чухне кăна, санпа кăна иккен
Туятăп чĕрене: чĕрем пĕлет канма,
Вĕчĕрхенмесĕр те тапма пĕлет пуль, тен.
8) Ман аттерен мана – ун ячĕ юлнă.
Эп хам ӳтре туятăп ун юнне.
Çак тивĕçпе эп питлемешкĕн пулнă
Этем юнне тăкан хурахсене.
9) Çĕнтерӳпе пĕрле хĕвел те килчĕ,
Анчах асрах-ха вăрçă çулĕсем.
Миçе аннен-ши пĕркеленчĕ пичĕ,
Миçе аннен-ши шурчĕç çӳçĕсем?
10) Ĕшеннипе эс сулăнса каятăн,
Анчах та мăшăрна аса илсе
Шăлна çыртса каллех хире утатăн...
Çапла вăрçа çĕнтертĕр, аннесем!
11) «Мир пултăр!» - тееççĕ ав халь тĕнчипех...
Шăв-шавсăр сунатăп çавнах кил-йышпа.
Çĕршывшăн пуç хунă салтак тăприпе
Çакна ас тумашкăн тăватăп тупа!
*(Илемлĕ кĕвĕ янăрать)*

## «МУХТАВ, АСЛĂ ÇĔНТЕРӲ!»

(Палăк умĕнчи митинг - 2018 çулхи майăн 9-мĕшĕ)

1. Левитан сасси. *«Священная война» юрă янăрать.*

2. Ертсе пыракан. Этот День Победы порохом пропах,
Этот День Победы с сединою на висках,
Этот праздник со слезами на глазах
День Победы! День Победы!

Сар хĕвел çине пăхса савăнăр!
Çĕнтерӳ юрри шăранать ян-ян!
Ĕмĕрне сӳнми чап-мухтавăмăр
Çутатса тăрать тĕнчене паян!

Е.П. Аслă Çĕнтерӳ кунне 73-мĕш хут уявлама, çак сăваплă куна çывхартма фронтра та, тылра та ырми-канми тăрăшнă ентешсене пуç тайса саламлама, вăрçăра пуç хунă паттăрсене асăнма пуçтарăннă савăнăçлă митинга уçăлнă тесе шутлама ирĕк парăр!

*(Раççей ГИМНĔ янăрать)*

3. Салам сăмахĕ калама Çĕньял ял тăрăхĕн пуçлăхне Ю.В.Самарина чĕнетпĕр!

4. Салам сăмахĕсем калаççĕ:.......

5. Е.П. Çĕнтерӳçĕ Салтак!
Пуç таятпăр паян.
Мирлĕ пурнăçшăн халь
Тав тăватпăр чунтан!

Шел пулин те, вăрçă терт-нушисене, суранĕсене пула фронтовиксем пиртен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕç. Анчах вĕсен сăнарне эпир нихăçан та манмастпăр. Кашни килтех сăн ӳкерчĕксем, аса илӳсем, фронтран килнĕ çырусем упранаççĕ.

Акă Лукьянов Федор Ильич мĕн çырать фронтран 1941 çулта хамăр ялти хĕр тантăшĕ патне.

*(Пĕр вĕренекен салтак çырăвне вуласа парать)*

6. Е.П. Салтак арăмĕ!
Сухине те турăн, акрăн, выртăн-
Пĕтĕмпех ăсатрăн фронт валли.
Кĕркунне алсиш-чăлха та çыхрăн
Шăнасран салтак алли-ури.
Йывăр пулчĕ. Мĕн кăна тӳсмерĕн –
Пур пĕрех çĕнтертĕн асапа!

*(Тыл паттăрĕсен ячĕпе сăмах калаканĕ .....................................)*

7.Е.П. «Хаяр вăрçă ачи...» Çакăн пек сирĕн ят-
Ӳссе çитĕнтĕн тăлăх-тăрат.
Халь аçусăр пулсан та сирĕн тĕпел –

Вĕсем панă пилпе çуталать сар хĕвел!

*(Сăмах илет ашшĕне вăрçăран кĕтсе илеймен «вăрçă ачи»)........)*

8. Е.П. Скольким детям подарили детство,
Подарили радость и весну
Рядовые Армии советской,
Люди, победившие войну!

Пирĕн ялтан хаяр вăрçă хирне пурĕ 209 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 73-шĕ çеç киле таврăнайнă.

*(Çĕнтерӳпе таврăннă ентешсен хушамачĕсене вуласа параççĕ)*

9. Е.П. Шăп ларать ав, йăмра...
Хускалмаççĕ çынсем...
Кашни паттăр асра,
Асран тухмĕç вĕсем.
Пит кĕтетчĕç килте
Мăшăрсем, ачисем –
Таврăнаймĕç халь тек –
Умра çеç сăнĕсем...

*(Хĕр ачапа арçын ача вăрçăра пуç хунă ентешсен хушамачĕсене вулаççĕ)*

10. Е.П. Помните! Через века, через года –
Помните!
О тех, кто уже не придет никогда, -
Помните!
Не плачьте! В горле сдержите стоны!
Памяти павших будьте остойны!
Вечно достойны!
Сегодня головы склоним...
Но лишних слов и слез не нужно.
Мы вспомним всех погибших, дружно
У обелиска постоим...

Минута молчания! Минута молчания! Минута молчания!

*(Салтак тумлă ачасем палăк умне гирлянда хураççĕ.*
*«Журавли» юрă янăрать. Метроном сасси)*

11. Е.П. Тăван çĕр-шыв паттăрсене манман,
Вĕсен ĕçне сума сăвать ялан...
Ан тив, эп вăрçă хирĕнче пулман –
Çĕр-шыв чĕнсен алсем чĕтремĕç ман! – тесе калать çамрă ăру – пулас салтаксем – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисем.

*Уяв саламĕ - Çĕньялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕренекен ачасенчен. (ЛИТМОНТАЖ)*

1) Война – жесточе нету слова!
Война – печальней нету слова!
Война – святее нету слова!

В тоске и славе этих лет
И на устах у нас иного
Еще не может быть и нет!

2) Все кончилось разом – прошла непогода
По нашему краю родному.
Враги налетели – людей положили
И руки, и ноги скрутили.

3) Озера и реки они помутили
И небо они закоптили.
Отцовскую хату сравняли с землей,
Село превратили в кладбище...

4) Каждый день войны на фронте и в тылу врага-
Это подвиг беспредельного мужества и стойкости советских людей, верности Родине!

5) Тысячи юных жизней оборвала вражеская пуля, но не поколебала веру в Победу над фашистской гадиной!

И он пришел этот день – 9 мая 1945 года – День Победы!

6) Победа! Победа!
Во имя Отчизны – Победа!
Во имя живущих – Победа!
Во имя грядущих – Победа!

7) Пойте, трубы, песню победную!
Май, шуми на всю страну!
Слава выстрелу последнему,
Завершившему войну!

8) Çуркунне çут тĕнче çунат сартăр тесен,
Кайăксем савăнса юр юрлаччăр тесен,
Чĕрере юрату çунса тăтăр тесен, -
Мире сыхлăр пурте, тĕнчери тусăмсем!

9) Алăри ачасем хавас ӳсчĕр тесен
Амăшсем татăлса ан кулянччăр тесен,
Кашни çын килĕнче пурнăç пултăр тесен –
Мире сыхлăр пурте – тĕнчери тусăмсем!

10) Çĕн ялсем, хуласем чечекленчĕр тесен,

Çĕр çинчи халăхсем ырă курччăр тесен,
Сар хĕвел ялкăшса хĕлхем саптăр тесен –
Мире сыхлăр пурте – тĕнчери тусăмсем!

11) Ырлăх çеç курма çуралнă
Эпир аслă çĕр çине.
Савăк пурнăç çунат панă
Халь кашнин чун – чĕрине!

Пурте: Хĕвеллĕ кунсене çеç кĕтетпĕр эпир –
Кĕрешĕр, çынсем, пире кирлĕ МИР!

*(Ачасем «День Победы» юрра юрлаççĕ)*

12. Е.П. Мы поздравляем всех с победным маем!
Здоровья всем желает вся страна!
Мы уберечь Отчизну обещаем,
Недаром носим ваши имена!
Çĕнтерӳ Салючĕ – сирĕншĕн!
Чи хитре чечексем – сире валли!
Сар хĕвел çиçтĕр –сирĕншĕн!
Чун-чĕре ăшши – сире валли!

*(Ачасем килнĕ хăнасене чечек çыххисем параççĕ. «Катюша» юрă янăрать)*

13. Е.П. Çакăнпа савăнăçлă митинг вĕçленчĕ. Малалла - Çĕнтерӳ парачĕ!

*(Марш кĕвви янăрать)*

**ТОРЖЕСТВЕННАЯ ЛИНЕЙКА, ПОСВЯЩЕННАЯ ДНЮ ЗНАНИЙ**
**«Здравствуй, школа!»**
**(1 сентября 2010 г.)**

Ведущий. Школьные двери вновь распахнутся,
Завтра учебные будни начнутся.
Ну а сегодня - праздничный час!
С праздником мы поздравляем всех вас!

Ертсе пыракан. Ырӑ кун пултӑр, хаклӑ учительсемпе вӗренекенсем, ашшӗ-амӑшӗсем тата хӑнасем!

Каллех кӗр кунӗ таврӑнать,
Хыҫа ҫу кунӗ юлчӗ,
Сентябрь пӗтӗм таврана
Сапать сап-сарӑ ҫулҫӑ.
Ирех шавлать ача-пӑча,
Хӑнусене, шкул, йышӑн!
Эс тунсахланӑ ҫу каҫа
Хӑв тусусем ҫуккишӗн!

Пӗлӳ кунӗ ячӗпе ирттерекен савӑнӑҫлӑ линейкӑна уҫӑлнӑ тесе шутлатпӑр!

Россия Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин патшалӑх ялавӗсене ҫӗклеме шкулти чи лайӑх вӗренекенсене ирӗк паратпӑр!

---

Внимание, школа! Под гимны Российской Федерации и Чувашской Республики СМИРНО!

***(Звучит гимн, поднимается флаг).***

1. Ведущий. Слово для приветствия и награждения предоставляется директору школы Ершову В.М.

(Выступление директора школы)

2. Выступления гостей: _______________________________

1-мӗш вӗренекен. Салам, чунтан юратнӑ шкулӑм,
Ӑшшушӑн тайма пуҫ сана,
Ачасене кӗтсе илетӗн
Манми тӑван килпе пӗр тан.

Чанах та, паян пирӗн шкул ҫӗне ачасене хавассӑн кӗтсе илчӗ, вӗсем- 1-мӗш хут парта хушшине ларакансем.
Тархасшан, иртӗр тӗпелелле!
Паллашар-ха сирӗнпе!

***(9-мӗш класра вӗренекенсем пӗрремӗш класа килнӗ ачасемпе паллаштараҫҫӗ)***

1. Акӑ Дима Езюков-

Вал сăпай, чипер, маттур,
Тăрăшса вăл вĕренесшĕн-
Инженер пулас шут пур.

2. Кам ку тетĕр пуль каллех?
Ку – Васильева Юля,
Вулама пĕлет халех –
Пысак çын пулать апла.

3. Ку Шайманов Вована
Халь пуçлатпăр паллама,
Тен, маттур спортсмен пулать?
Вăл халех хытă чупать!

4*. Дима:* Вĕренни вăл ĕмĕре-
Эп çакна пĕлетĕп.
Савăнпа кашни кунах
Шкулалла чупатăп.

5. Юля: Кăмăллатăп вулама,
Ӳкерме те юрлама,
Веç пĕлесшĕн тăрăшатăп,
Çавăнпа шкула каятăп.

6.Вова: Ăслă çын пулма шутлатăп,
Кашни кун шкула çӳретĕп,
«Пиллĕкпе» çеç вĕренме,
Туссемпе те киленме.

***Вĕсене 11 класра вĕренекенсем саламлаççĕ.***

**(Маркизова Лена «Первоклассники» сăвă вулать)**

Ведущий. Звенит звонок и весел, и горласт,
И радостью душа переполняется.
И каждый раз для каждого из нас
Чудесные уроки начинаются!

Ведущая. Звенит звонок вам много лет подряд,
Его услышав, люди улыбаются!
И расцветают лица у ребят-
Пришла пора, уроки начинаются!

(Прозвучит первый звонок этого учебного года ___________ )

Ведущий. Учительсем! Сире телей сунатпăр-
Телей çак çутă тĕнчере,
Вăл ирсерен, хĕвел шевли пек
Кашни кун килтĕр сирĕн киле!

Йышăнсамăр ачăрсен саламне***! (Ачасем чечек çыххисем параççĕ)***

Ведущая. На этом торжественная линейка, посвященная Дню знаний, завершается!

В добрый путь в страну знаний!

(Будущие выпускники вместе с первоклассниками идут в класс первыми, потом – остальные классы).

## ВАТТИСЕН КУНĔ
### «Ватлăх пăхнăшăн куçран питĕ хытă ан кулян...»
( 2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ)

1. Сывлăх сунатпăр сире, хаклă аннесемпе асаннесем, инкесемпе аппасем, аттесемпе асаттесем, пиччесемпе тетесем!

2. Паян – октябрĕн 1-мĕшĕ. Çак куна Пĕтĕм тĕнчери ваттисен кунĕ тесе йышăннă. Кашни çулах пирĕн патшалăх ватăсене сума суса, вĕсене хисеплесе çак куна вĕсен асĕнче яланлăхах асра юлмалăх ирттерме тăрăшать.

3. Çак ырă йăла кăçал та манăçа тухмарĕ. Шăпах та ватăсен кунне паллă тума пуçтарăнтăмăр ĕнтĕ паян.

4. Палах, уяв кун сирĕн те, пирĕн те илемлĕ юрăсем итлесе чунчĕрери кăмăл-туйăма татах та çĕклес килет.

ХАЛĔ ЯНĂРАКАН ИЛЕМЛĔ ЮРĂ СИРЕ ВАЛЛИ ПАРНЕ ПУЛТĂР.

5. Тăван кил. Тăван анне. Тăван атте. Пирĕн пурнăçри чи хаклă та çывăх сăмахсем вĕсем. Атте-анне килĕ, тăван кил, çуралнă вырăн... Çавсенчен хакли çĕр çинче мĕн пур-ши тата?

Чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр сире.

Çирĕп сывлăх та хастарлăх
Ĕмĕр иксĕлми вăй-хал,
Çут телей те савнăç, ырлăх
Кăмăлтан сунатпăр халь.

Сирĕн ятпа янăрать халь юрă.

5. Нишлĕхлĕ, чухăнлăха лекнисем Раççейре 30 миллион ытла теççĕ. Уйрăмах ватăсемпе сусăрсем, инвалид ачасем обществăран пулăшу кĕтеççĕ. Ватлăх савнăç мар, укçа-тенкĕ çитмест, сывлăх хавшать. Çулсем иртнĕçемĕн пурнăçĕ пушшех те йывăрланать.

6. Çавах та эпир сире канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх сунатпăр.

Шăпа пилленĕ пурнăç сукмакĕ вăрăм пултăр сирĕн.

«АН КУЛЯН, ЭС, АН КУЛЯН» - юрă сире валли парне.

7.Самани çăмăлах мар пулин те, пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, хăй еккипех пырать. Çав-çавах çамрăксем пĕр-пĕрне саваççĕ, юратаççĕ, çемье çавăраççĕ. Кĕр мăнтăрĕпе туйсем кĕрлеççĕ, ача-пăча çуралать.

- Паян залра ларакан аппасемпе пиччесем те çамрăк пулнăçке. Апла пулсан, аса илер-ха çамрăклăхăн пĕр самантне: шурă пĕркенчĕк, туй халăхĕ, юратнă мăшăр, мăн кĕрÿ..

Юрă:...........................................................................................

8. Çамрăк чухнехи хастарлăх
Ан хавшатăр нихăçан.
Çиçсе тăтăр пархатарлăх
Сирĕн чĕрĕрте тасан.

- Ĕмĕр сакки сарлака теççĕ. Çав сак çинче сире малашне те саркаланса ларма, ачăрсемпе мăнукăрсен чĕвĕлти сассине итлесе киленме, çывăх çыннăрсемпе тăванăрсен телейĕ-ырлăхĕпе ĕмĕр тăршшĕпех савăнма ырлăх-сывлăх, телей, такăр çул пултăр.

9.Паянхи кун пирĕн залра тăнлавĕсене вут-вăрçă кăвакартнă, кăкăр умне орден - медальсем çакнă, кĕлрен хула çĕкленĕ салтак-ветерансем те пур... Вăрçă ыратăвĕ паян кун та вĕсен чĕринче. Тен, çавăнпа пуль вĕсен сăн-пичĕ паян та салху.

10. Вăрçă çулĕсем... Ытла та йывăр, кукăр-макăр, тумхахлă пулчĕç вĕсем. Мĕн кăна курмарăр - тўсмерĕр-ши эсир,ĕнерхи салтаксем?

Илемлĕ ташлатчĕ этем
Ылханлă вăрçă пулмасан,
Ватăлмĕччĕç инкесем
Мăшăрсем çумра пулсан...
Тав сире, аттесем, тав сире, аннесем,
Çухатмарĕç чысне хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Выçлăха çĕнтерсе, шанчăка ўстерсе
Ăмăрт кайăк пекех çунатланчĕç вĕсем!

Сире, вăрçă паттăрĕсене, çирĕп сывлăх та иксĕлми вăй-хал сунса юрра сцена çине кăларатпăр.

11. «Ватлăху телейлĕ, сывлăху çирĕп пултăр»,- тетпĕр эпир ĕç ветеранĕсене тивĕçлĕ канăва ăсатнă май.

Патшалăх, общество кашни ватă çынна хисеплесен, уншăн тăрăшсан кăна вĕсем чунĕпе те илемлĕ те лăпкă.

Çакна ял администраци пуçлăхĕсем, хуçалăх ертўçисем лайăх ăнланаççĕ. Ĕçпе вăрçă ветеранĕсене май килнĕ таран пулăшма тăрăшаççĕ: кама вутă-шанкă кирлĕ, кама утă-улăм е тĕш-тырă.

Сăмах илет Çĕньял ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ———————————-

12. Хисеплĕ ентешĕмĕрсем! Уяв ячĕпе тр хут саламланă май çапла калатпăр:

Сывлăхăр – яланах пултăр!
Сар хĕвел те сирĕншĕн култăр.
Вăрăм кун-çул сире сунатпăр,
Унран хакли мĕнех-ши пултăр?

—————————————————————————————-

Çакăнпа пирĕн тĕлпулу вĕçленчĕ. Сывă пулăр! Тепре тĕл пуличчен!

## ВИЗИТКА ШАЙМУРЗИНСКОЙ ООШ ИМ. Г. АЙГИ (16.05.2012)

**Районная военно-спортивная игра «Зарница»**

*1. Песня на мотив «Пусть бегут неуклюже»*

**Всем вокруг это ясно**
**Настроенье прекрасно**
**Мы хотим о себе рассказать.**
**Нас на слете представить**
**И хотим вам оставить**
**Впечатленье конечно на «пять»!**

**Выступаем здесь на слете**
**Веселимся и поем**
**Ну а завтра рано утром**
**Снова в школу пойдем!**

1) Это прекрасно – жить на земле,
Встречать рассветы, провожать закаты.
Любоваться звездным небом,
И учиться в любимой школе!

2) - Кто шагает дружно в ряд?
- Это Шаймурзинский отряд!
- Кто учиться в школе рад?
- Это Шаймурзинский отряд!
- Не боимся мы преград!
- Это Шаймурзинский отряд!

2. *Песня на мотив «Маленькая страна»*

**Есть на земле такая школа**
**Где улыбаются все**
**Где все девчонки и мальчишки**
**Ходят рука в руке.**
**Дружбу хранить они умеют**
**Учатся все на «пять».**
**И не умеют лицемерить**
**Друга предавать.**

**Школа – моя судьба!**
**Школа – моя судьба!**
**Это страна добра и света,**
**Знаем и ты, и я!**

3). Успехов много у нас в школе,
Трудились мы не для наград.
Бывают и у нас рекорды,

Им каждый школьник будет рад!

4). Мы сегодня на концерте,
Завтра нас «Зарница» ждет!
Послезавтра на турслете
Наш отряд рекорды бьет!

5). Или наши волонтеры
Акцию подхватят вновь:
Ждут их все пенсионеры-
Вот взаимная любовь!

6). Этапы смело покоряя
Непросто первыми прослыть,
Взрослеет смена молодая,
И им решать, как в жизни быть!

7). – Будем юными экологами!
- Будем дерзкими геологами!
- Будем хорошими педагогами!
- Будем просто мы фантазерами!

*3.Песня на мотив «Вместе весело шагать»*

**Вместе весело шагать по просторам,**
**По просторам, по просторам**
**И конечно припевать лучше хором,**
**Лучше хором, лучше хором!**

**«ÇĔНĔ ÇУЛ»**
**Сценари**
(31.12. 2017 çул)

1. Шур чӗнтӗрпе пӗркеннӗ вӑрмансем,
   Пӗр пӗчӗк чӑрӑш сивӗпе хутланнӑ.
   Çӗн çул çитет! Туссем те тӑвансем
   Кив çул пирӗнпе сыв пуллашма пуçланӑ.

Ертсе пыракан. Ырӑ каç пултӑр, хисеплӗ ял-йыш!

Хаклӑ тӑвансем – пӗчӗккисем те аслисем!

Хӗрӗсем те каччисем- кунта килсе çитнисем, пирӗн кӗтнӗ хӑнасем!

Автан çулӗ иртсе пырать. Камшӑн мӗнле пулчӗ-ха ку çул?

Тепӗр çул пысӑклантӑмӑр-и?

Тепӗр çул ватӑлтӑмӑр-и? Çук! Ватӑлмарӑмӑр –тепӗр çул ӑслӑлантӑмӑр çеç.

Çӗнӗ юлташсем тупрӑмӑр-и?

Килте, çемьере улшӑнусем пулчӗç-и?

Çемьере йыш хушӑнчӗ-и? Питӗ аван!

Килес çул –ЙЫТӐ ÇУЛӖ. Мӗн сунать-ха вӑл пире?

Апла пулсан – сире валли Çӗнӗ çул саламӗ- юрӑ парни!

(Кашни класс музыка саламӗпе елка умне тухать).

2. Кӗçех çитет Çӗнӗ çул!
   Киввине ӑсат, ал сул!
   Атьӑр -ха пуçтарӑнса,
   Капӑр тумсем тӑхӑнса
   Чӑрӑш тавра пухӑнар
   Юрлар, кулар, савӑнар!

3. Ак татах иртрӗ тепӗр çулталӑк,
   Килчӗ, çитрӗ каллех Çӗнӗ çул.
   Юлтӑн эс ырӑпа асӑнмалӑх,
   Манӑçми кивӗ çул, сывӑ пул!

Çӗнӗ çул! Çӗнӗ савӑнӑç пирӗн!
Малаллах ӑнтӑлать чун-чӗре.
Ялтраса килекен янкӑс ирӗн
Илӗртет çут хӗвелӗ пире!

4. Çӗнӗ çул! Сана чунтан кӗтетпӗр
   Пуç таятпӑр, кил эс çулсерен.
   Кӑмӑлӑрсем паян нихçанхинчен хаваслӑ.
   Иксӗлми вӑй-хал, телей пире пилле!

5. Пилĕк юплĕ çăлтăр хĕм сапать,
Çутатать çĕн çул килес çула.
Хĕл Мучи çитсе пырать,
Кĕскетмеваскать инçе çулне.

Хĕл Мучипе Юрпике
Килсе çитрĕç халь кунта
Инçетри пăр çĕрĕнчен
Кĕтсе илер ал çупса

Килех эс, вунсаккăрмĕш çул!
Кил, шанчăк, кил, ĕмĕт, çунатлăн,
Кил çирĕп вăй-халлă, хăватлă,
Хăни те, хуçи те эс пул!

Е.П. Хĕл Мучи саламĕпе пĕрле тепĕр ăшă салам итлесе пăхар-ха.

Пирĕн паянхи хаклă хăна - Çĕньял ял поселенийĕн пуçлăхĕ Самарин Юрий Васильевич. Тархасшăн, сирĕн сăмах!

6. Хĕрлĕ кĕрĕк, шур сухал –
Хĕл мучи пек çын сахал.
Юрпике епле илемлĕ,
Куç илеймĕн ун çинчен.
Хăварман хутаççине,
Тем чухлех унта парне.
Çавăнпа юрлар, ташлар,
Çĕнĕ çулта савăнар!

Килĕр, килĕр, хăнасем,
Алла-аллăн тытăнар,
Янратар-ха юрăсем,
Тĕрлĕ ташăсем ташлар!

Е.п. Халĕ пурте Хĕл Мучипе Юр пикене ăсатар!
Тепĕр çулччен ырлăх-сывлăхлă пулар! Телейлĕ çул пултăр!

7. Чыс, салам, Çĕн çул! Малашшăн
Вут маяк эс çутса яр!
Пур ĕççынне ыр курмашкăн
Лăпкă, мирлĕ пурнăç пар!
Çĕн çулти ĕçсем татах та
Пулччăр тухăçлă, паха!
Тунă ĕçĕ лайăхраххăн
Усă кӳтĕр халăха!

## НОВОГОДНИЙ БАЛ - МАСКАРАД
**(для учащихся 9-11 классов).**

Ведущий. Здравствуйте, дорогие ребята и уважаемые гости!
Поздравляю вас с праздником!
С праздником елки новогодней,
На который пришли вы сегодня!
Ведущий. Вот зал затих. И прежде чем начать
Позвольте нам в простых словах
Вместе: Привет Вам новогодний передать!
Здравствуй, светлый праздник новогодний
О тебе гудят, поют ветра
И тебе приветствуя сегодня
Молодежь у елки собралась.
Приходите, заходите!
Одиночкой не ходите!
Наш совет парнишки, вам-
Приглашайте милых дам!
Итак, друзья, начнем программу.
Затей у нас большой запас. А для кого они?
Зал: Для нас!
Ведущий. У нас сегодня на празднике-гость,
И не простой, а дорогой!
На празднике – волшебник,
Наш добрый-добрый сказочник!

**(Появляется СКАЗОЧНИК)**

Сказочник. Настроение на «пять»!
Будем праздник начинать…
Говорят, под Новый год,
Что ни пожелается,
Все всегда произойдет,
Все всегда сбывается.
Ведущие. Могут даже у ребят
Сбыться все желания,
Нужно только, говорят,
Приложить старания.
Не ленитесь, не зевать,
И иметь терпение,
И ученье не считать
За свое мучение!
Сказочник. Говорят, под Новый год,
Что ни пожелается,
Все всегда произойдет,

Все всегда сбывается!
Ведущие. Всем! Всем! Всем!
И тем, кто родходит,
И тем, кто уж здесь!
Обьявляем важную весть!
Сегодня на балу отсутствуют нытики
Те, кто ищет предлог- лишь для критики!
Сказочник. Для тех, кто веселью и обществу рад,
Приготовлено много сюрпризов, наград.
Каждый себе развлеченье отыщет-
Перечислили бы все- да их более тыщи!

Ведущий. ***А теперь, дорогие друзья, приглашаем вас на хоровод вокруг елки.***

Сказочник. Ребята! Я сегодня был бы рад
Возле елки новогодней
С вами вместе спеть, сплясать
И конечно, поиграть!
Ведущие. Мы знаем, вы любите игры,
Песни. Загадки и пляски.
Но нет ничего интереснее
Чем плясок вокруг елки.

Ведущий. ***Приглашаем всех на «Переходную польку».***

Ведущий. Внимание! Внимание!
Сегодня на балу
Состоится полет на Луну.
На Луне специально для вас
Музыканты играют «Лунный вальс»
Ну, а если и это не радует вас-
Тогда полетим мы прямо на Марс!
А попутно лишь с орбиты свернем
В гости к Венере на чай попадем!

Сказочник. Внимание! У нас сегодня работает Лунная комната.
Пожалуйста, можете посещать эту комнату, но обязательно с парой
И узнать, что ожидает вас в новом году! Венера ждет Вас!

Ведущий. Торопитесь, заходите, гости бала-
Такого зрелища давно тут не бывало!
Такова наша роль зазывал-
Где правду сказал, где приврал.
Как же иначе – без шутки нельзя.
А шутить ведь приятно-
Не правда ль друзья?

Сказочник. ***А теперь поиграем в игру «Найди пару». Всем раздают открытки, которые разрезаны пополам по разным линиям.***

***Надо найти половину, кто быстрее найдет- тот победитель.***

***Включается музыка и пары танцуют вальс.***

Ведущий. Дорогие друзья! Не расходитесь, пожалуйста! Приглашаем всех на танец «Пальчик о пальчик».

Ведущий. И сразу – хоровод вокруг елки: « Маленькой елочке».

Сказочник. Устали? Значит, пора отдохнуть. Отгадайте загадки:

-Из какого мультфильма слова? Расскажи, Снегурочка, где была?
Расскажи, Снегурочка, как дела? («Ну,погоди!»)

- Зимой и летом одним цветом. ( Елка). И т.д.

Ведущий. А теперь-самое приятное – РОЗЫГРЫШ ЛОТЕРЕИ.

Ведущий. Все получили новогодние призы. А теперь хоровод вокруг елки.

Обьявляется песня « Хамăр хатĕр пултăмăр»).

Сказочник. А как же праздник без Деда Мороза и Снегурочки?

Давайте все хором позовем их сюда! (А-у! Дед Мороз! Снегурочка!).

**(В зале появляются Дед Мороз со Снегурочкой, а рядом-Новый год).**

Дед Мороз. С Новым годом поздравляю,
Всем здоровья вам желаю.
Будем песни петь, плясать.
Встанем дружно в хоровод.
Славно встретим Новый год.

Новый год. А вот и я! Поздравляю с Новым годом- годом Быка!
Сколько снежинок
Кружится в воздухе,
Столько же маленьких радостей
Пусть принесет
Наступающий Новый год!

Снегурочка. Я вас тоже поздравляю!
Счастья, радости желаю.
И сегодня с вами вместе
Я, конечно, поиграю.
Ребята, повторите за мной:
« Потому что Новый год,
Потому что елка!»

**(Дети повторяют слова Снегурочки).**

Снегурочка. Я сейчас вам буду задавать вопросы, а вы мне будете отвечать этими словами. Договорились?

Дети. Да!

Снегурочка. Почему метель метет
Землю, как метелкой?

Дети. Потому что Новый год.
Потому что елка.

Снегурочка. Почему баян играет
Весело и звонко?
Дети.
Снегурочка. Почему здесь хоровод
Песни без умолка?
Дети.
Снегурочка. А зачем же к вам пришел
Дед Мороз на елку?
Дети.
Снегурочка. Спасибо, ребята! Молодцы! Слово передаю Деду Морозу.
***(Дед Мороз раздает подарки лучшим ученикам).***
Снегурочка. Я вижу, что у вас тут много разных персонажей в карнавальных костюмах. Подведем итоги: 1 место- / 2 место-
3 место - / 4 место
Снегурочка. А теперь мы спляшем вместе
И споем все дружно песню.
***(Хоровод ведет Снегурочка).***
Дед Мороз. Наши мальчишки и наши девчонки!
В Новом году мы хотим пожелать
Школьникам только отличной учебы,
Двоек и троек с собою не брать.
Снегурочка. Новые встречи уже на пороге,
Новые вас развлечения ждут.
Радости, песен, веселья, здоровья,
Счастья. Ребята, вам в новом году!
Новый год. Счастливого Нового года!
Дед Мороз. Славно повеселились мы у вас! / Но пора нам в путь!
Оставляю внука моего- / Чтоб вас дальше развлекал.
Ну а в будущем году / Я опять же к вам приду!
***(Дед Мороз и Снегурочка уходят).***
Ведущие. Если даму к танцу пригласили-
Это и обычно, и прилично!
Почему обратную картину
Многие считают неприличной?
***( Обьявляется белый танец).***
Ведущие. Праздничный вечер продолжается.
(Н О В О Г О Д Н Я Я Д И С К О Т Е К А ).
Ведущие. Во всех календарях страны
Один листок остался.
Огни под вечер зажжены,
В дорогу год собрался.
В этот час душевного прощанья

Всем дорогим и милым друзьям
Мы говорим: « До нового свиданья,
До новых встреч! Желаем счастья вам!»
(А сейчас – прощальный вальс)

## ÇĔНЬЯЛ УЯВĔ
## (21.08.2019 ç.)

*Хапха умĕнче:* -Хаклă ял-йыш! Хисеплĕ Рудольф Васильевич!

Хаклă чĕннĕ хăнасем!

Паян пирĕн ялшăн чăннипех те паллă кун – тинех кĕтнĕ самант çитрĕ. Тахçанах ĕмĕтленнĕ эпир çак тĕлте кану вырăнĕ пуласса. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ, юлташсем, хамăр тăрăшнипе, ялти нумай хастарсем пулăшнипе 30 çул ытла вĕлтрен-măян кашласа ларнă вырăнта халь хăтлă та илемлĕ. Ку вырăн – эпир пĕлӳ пухнă шкул лаптăкĕ. Ялта çуралнă кашни çыннăн кун-çул сукмакĕ çак сăваплă вырăнтан пуçланнă. Пирĕншĕн вăл икĕ хут та хаклă: çак шкулта пирĕн паллă поэт, куçаруçă, Чăваш халăх поэчĕ ятне тивĕçнĕ Геннадий Айхи вĕренсе тĕнче умне тухнă. Унăн пултарулăхĕ асамлă çăлкуç пек тапса тĕрлĕ çĕршывсене саланчĕ. Эпир паян Айхи утса çӳренĕ сукмака такăрлататпăр, вăл лартса ӳстернĕ хурăнсене пăхса киленетпĕр.

Паян Г. Айхин 85 çулхи юбилейĕ. Чăваш Республикин Министрсен кабинечĕн ятарлă хушăвĕпе килĕшӳллĕн çулталăк тăршшĕпех шкулсемпе клубсем, тĕрлĕ учрежденисем ун ячĕпе уявсем йĕркелĕç, пур çĕрте те ун сăввисем янăрĕç.

Эпир паян пуçтарăнса шăкăл-шăкăл калаçни, кунта сăвă-юрă янăрани юратнă поэтăмăр умĕнче пуç тайни пултăр, ун ятне асра тытнине çирĕплеттĕр.

Çак вырăн ял çыннисемшĕн те, тĕрлĕ çĕрте тĕпленнĕ ентешсемшĕн те юратнă вырăн пуласса, кунта килсен кашнин кăмăлĕ çĕнĕ туйăмсемпе туласса, тăван çĕр сĕткенĕ вăй-хал хушасса шанатпăр эпир.

Апла пулсан, Çĕньялта «Хавал» ятлă кану паркĕ уçăлнă тесе шутлатпăр, хăрлĕ хăйăва касма ирĕк парăр!

*(Килнĕ хăнасем пĕрле хĕрлĕ лентăна касаççĕ – кану паркĕ уçăлнине пĕлтереççĕ),*

СЦЕНА ÇИНЧЕ.

1) Çĕньялти «Илем» фольклор ушкăнĕ «Вĕç, вĕç, куккук» юрра шăрантарать.

Е.П. – Тин кăна янăрандă çак юрă – Геннадий Айхин юратнă юррисенчен пĕри.

Ăна сирĕн умра Çĕньялти «Илем» халăх фольклор ушкăнĕ юрларĕ.

Уява ахальтен çак юрăпа пуçламарăмăр эпир. Пирĕнпе пĕрле Г.Айхи çуралнăранпа 85 çул çитнине паллă тума Патăрьел район пуçлăхĕ Р.В.Селиванов,ытти хăнасем:

Чĕмпĕр облаçĕнчи тата кӳршĕ ялсенчи пултарулăх ушкăнĕсем килсе çитрĕç.

*(Килнĕ хăнасене тата пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçисене сцена çине хăпарма ыйтатпăр)*

**1. Сăваплă ялăм – савнă ял!**
**Кун-çул парса нумай çынна**
**Çӳле çĕклерĕн хăв ятна.**
**Паян хăнасене ыр сун!**

**2. Ыр ятлă çыннусем нумай-**
**Вĕсем çинчен илтен пĕрмай.**
**Пĕр шелсĕр панăшăн вăйна**
**Çĕр хут, пин хут мухтав сана!**

Е.П. – Уява чаплă лару-тăрура пуçлама Çĕньял ял тăрăхĕн пуçлăхне Мария Ильинична Мадюкована сăмах паратпăр.

– Хаклă тăвансем, юлташсем, чĕннĕ хăнасем! Тепĕр хут паянхи уяв ячĕпе хĕрӳ салам калатăп. Тĕнчипе паллă ентешĕмĕрĕн 85 çулхи юбилейне паллă туни тата пирĕн ялта кану паркĕ уçăлни Çĕньял историне кĕрсе юлĕ. Кану паркне «Хавал» ят парас терĕмĕр. Ял хавалĕ пулсан – ял пурăнать. Пурăннă чух вара кашни çын хăйшĕн, хăйĕн çемйишĕн. ялшăн, çĕршывшăн ырă ĕçсем тумаваскать. Тата йăх-тымар çыхăнăвне çирĕп тытса пырать. Шăпах çак хавалпа эпир сирĕнпе çакăн чухлĕ ĕç турăмăр. Тумаллисем вара пĕтмен-ха. Апла пулсан, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçланччăр, ял сăн-сăпачĕ илемлентĕр тесе малашне те пĕрле шухăшлар, пĕрле тăрăшар, Паянхи уява вара уçăлнă тесе шутлама ирĕк парăр!

*(Чăваш Республикин ГИМНĔ янăрать)*

2) Сăмах илет Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ Рудольф Васильевич Селиванов.

3) Сăмах илет Патăрьел район пухăвĕн депутачĕсен депутачĕ Николай Дмитриевич Еремеев.

Е.П. Малалла - УЯВ КОНЦЕРЧĔ.

# Г. АЙХИ ЯЧĔЛЛĔ ÇĔНЬЯЛТИ ПĔТĔМĔШЛЕ ПĔЛЎ ПАРАКАН ШКУЛТИ 2017 ÇУЛТА ЧĂВАШ ЕНРИ АТТЕПЕ АННЕ ÇУЛТАЛĂКНЕ ХАЛАЛЛАНĂ МЕРОПРИЯТИСЕН ПĔТĔМĔШЛЕ ĔÇ ПЛАНĔ

| № № | Палăртнă ĕçсем | Хăçан пулать | Кам явапплă |
|---|---|---|---|
| 1 | Чăваш енри Аттепе анне çулталăкне чаплă лару-тăрура уçни. | 25.01. | Сымов А.Н. Юрмина С.В. |
| 2 | Фотогалерея йĕркелесси: «Атте, анне тата эпĕ». | февраль | Юрмина С.В. |
| 3 | Утренник (уяв): «Саламлатпăр аннене...» | 08.03. | Класс рук. |
| 4 | Фотохаçат кăларасси: «Ман пурнăçри кулăшла самант». | 01.04. | Юрмина С.В. |
| 5 | Пултарулăх ĕçĕсен конкурсĕ: «Атте-анне сукмакĕпе». | 15.05. | Чĕлхе вĕрентекенсем |
| 6 | Çемье кунĕ ячĕпе – хаваслă стартсем: «Атте, анне, эпĕ – спортпа туслă çемье». | май | Класс рук. Ершов В.М. |
| 7 | Шкул музейĕнче экскурсисем йĕркелесси: «Вĕсем ĕçпе чапа тухнă». | май | Мадюкова М.И. Юрмина С.В. |
| 8 | Кашни класра класс сехечĕсем, тĕлпулусем, çавра сĕтел йĕркелесси : «Тавах сире, атте-анне!» | çулталăк тăршшĕпе | Класс рук., Юрмина С.В. |
| 9 | «Кĕркунне тĕлĕнтермĕшĕ» - пахча-çимĕçрен çемьепе тунă экспонатсен выставки. | сентябрь | Юрмина С.В. Ершова Т.И. |
| 10 | Ваттисен кунне уявлани. | октябрь | Юрмина С.В. Класс рук. |
| 11 | «Аннен ылтăн аллисем» - Аннесен кунĕ тĕлне йĕркеленĕ алă ĕçĕсен выставки. | ноябрь | Юрмина С.В. Класс рук. |
| 12 | Республикăра тата районта палăртнă ĕçсен графикĕ тăрăх унти конкурссемпе викторинăсене, конференцисене хутшăнасси. | çулталăк тăршшĕпе | Класс рук., Юрмина С.В., Учительсем. |

## 2018 – ЧĂВАШ ЕНРЕ И.Я. ЯКОВЛЕВ ÇУЛТАЛĂКĔ

Г. Айхи ячĕллĕ Çĕньялти тĕп шкулти
И.Я. Яковлев çулталăкне халалланă ĕçсен ПЛАНĔ

| № | Пурнăçламалли ĕçсем | Вăхăт | Кам явапллă |
|---|---|---|---|
| 1 | И.Я.Яковлев çулталăкне чаплă лару-тăрура уçни. | Кăрлач | Вазюкова И.М.<br>Мадюкова М.И. |
| 2 | Чăваш Республикин планĕнче пăхнă мероприятисене хутшăннасси. | Çулталăк тăршшĕпе | Вазюкова И.М.<br>Мадюкова М.И. |
| 3 | «Аслă вĕрентекенĕмĕр» стенда çĕнетесси. | Нарăс уйăхĕ | Вазюкова М.И.<br>Мадюкова М.И. |
| 4 | «Пирĕн пултарулăх» творчествăлла конкурс:<br>Яковлев калавĕсем тăрăх ӳкерчĕк тăвасси.<br>«Пирĕн Улăп» сочиненисен конкурсĕ.<br>«Калав çыратпăр хамăрах» (авторсен конкурсĕ). | Пуш-ака уйăхĕсем. | Вазюкова И.М.<br>Учитель-чĕлхеçĕсем |
| 5 | И.Я.Яковлев çуралнăранпа 170 çул çитнине халалласа чăваш чĕлхипе литератури эрни ирттересси. | 23.04. – 29.04. | Мадюкова М.И. |
| 6 | Районта тата республикăра иртекен конкурссемпе фестивальсене хутшăнасси. | Çулталăк тăршшĕпе | Вазюкова И.М.<br>Учительсем |
| 7 | «Ламран лама куçать ăсталăх» (алă ĕçĕсен выставкине йĕркелесси) | Çу уйăхĕ | Ершова Т.И. |
| 8 | «Чăваш халăхне» халал тăрăх вулакансен конференцине йĕркелесси. | Ака уйăхĕ | Ершова Т.И. |
| 9 | «Чăваш енĕн паллă çыннисем» презентаци пăхасси тата çавра сĕтел йĕркелесси. | Юпа уйăхĕ | Езюков О.А. |
| 10 | И.Я.Яковлева халалланă уçă уроксем ирттересси. | Çулталăк тăршшĕпе | Сымов А.Н. |
| 11 | «Манăн çемье – манăн тĕрек» фотоконкурс йĕркелесси. | Чӳк уйăхĕ | Вазюкова И.М. |
| 12 | «Яковлев тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ» рефератсен тата презентацисен конкурсĕ. | Чӳк уйăхĕ | Езюков О.А. |
| 13 | И.Я.Яковлев пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен пичетленнĕ кĕнекесен выставкине йĕркелесси. | Чӳк уйăхĕ | Ершова Т.И.<br>Мадюкова М.И. |
| 13 | И.Я.Яковлев çулне чаплă лару-тăрура вĕçлени. | Раштав уйăхĕ | Вазюкова И.М. |

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ТАТА ИЛЕМЛӖ ЛИТЕРАТУРӐРИ КӐМӐЛ-СИПЕТ ЫЙТӐВӖСЕМ

**(Вопросы нравственности в произведениях чувашской литературы)**

## Элективлӑ КУРС

## КУРС ТЫТӐМӖ

1. Ӑнлантарни.
2. Вӗрентӳпе тематика планӗ.
3. Элективлӑ курс содержанийӗ.
4. Курс ирттермелли материал (тӗслӗх).
5. Усӑ курнӑ литература.

«Чӑваш литературинчи кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсем» темӑпа ирттермелли элективлӑ курс пирки ӑнлантарни.

Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкул хальхи вӑхӑтра ҫӗнӗлӗхсемпе пуян. Ҫав ҫӗнӗлӗхсене ӗҫе кӗртнӗ май ачасемпе ӗҫлемелли мелсемпе меслетсен тӗсӗсем те чылай урӑхрах. Ҫӗнетнӗ тытӑмлӑ шкулӑн чи малтанхи ҫул-йӗрӗ вӑл – ачасемпе уйрӑммӑн тата вӗсен ҫулӗсемпе пултарулӑхне шута илсе ӗҫлесси. Ҫавна май шкул ҫулӗсенчех вӗренекенсене хӑйсен пулас профессине суйласа илме вӗрентесси ҫине те пысӑк тимлӗх уйӑрмалла. Анчах професси суйласа илнипех ҫырлахма та ҫук. Мӗншӗн тесен ачан чи малтан ҫын пулса ҫитӗнмелле. Паянхи кӑткӑс саманапа пӑтравлӑ лару-тӑрура ҫынлӑха упраса хӑварасси, кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен ҫирӗп пуласси, лартнӑ тӗллеве пурнӑҫлас тесе ӑнтӑласси, обществӑра харпӑр хӑй вырӑнне тупасси кашни ачан пурнӑҫ тӗллевӗ пулмалла. Ҫак ыйтусене пирӗн общество кӑларса тӑратать, апла пулсан вӗренсе тухакан кашни ачан вӑл ыйтусене татса парас тесе тӑрӑшмалла.

*Курсӑн тӗп ҫул-йӗрӗсем.*

- Тӑван литература урокӗсенчи вӗренекенпе вӗрентекенӗн пӗр шухӑшлӑхӗ ачана мал ӗмӗтлӗ пулма вӗрентни.
- Хайлавсенчи «ырӑпа усал», «наянпа ӗҫчен», «тӗрӗспе суя», «юратупа курайманлӑх» ӑнлавсем тата ача психологийӗ.
- Литература предметне вӗрентессине системӑлани ачаран чӑн-чӑн ҫын пулма вӗрентни.

*Курсӑн тӗп тӗллевӗсем.*

- Литературӑри кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсене ҫутатакан хайлавсемпе паллаштарасси.
- Литература геройӗсенчен тӗслӗх илме вӗрентесси.

*Курсӑн задачисем.*

• Вĕренекенсенче илемлĕ литература хайлавĕсене вулас туртăма хăнăхтарасси.

• Вуланă произведенисене сӳтсе явма, тĕрĕслĕхшĕн тавлашма, харпăр хăй тĕллĕн шухăшласа тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума ĕрентесси.

Курс шучĕпе пăхса тухма шкул прпограммине кĕмен произведенисене илнĕ. Чăваш çыравçисен юлашки вăхăтра тухнă кĕнекисем шкул ачисемпе çамрăксене хумхантаракан чылай проблемăсене хускатаççĕ. Çав проблемăсемпе эпир кашни кун тенĕ пекех тĕл пулатпăр. Проблемăсене татса пама пулăшакан ĕçсем шутне калаçу, ыйтăм, тест майĕпе хуравлани, анкетировани туни, сценка-сценари çырни, сăвă-тĕрленчĕк хайлани тата ытти ĕçсем кĕреççĕ. Урок ирттернĕ чух ачасем хăйсен шухăшне йĕркипе каласа пама пĕлнине, тавлашса чăнлăх патне çитме пултарнине, произведени тăрăх пĕтĕмлетӳллĕ шухăшлав тунине шута илмелле. Кашни урок хыççăн пухăннă материалсене йĕркелесе типтерлесси те кирлĕ ĕç. Ачасен ĕçĕ, вĕсен шухăшĕ-ĕмĕчĕ, ыйтăва хак пани ыттисене те пурнан пурнăçра кирлĕ пулĕ. –акă ачасене те хăйсен вăйне шанма, пурнăçри ырăнне тупма, харпăр хăйне юлташĕсен куçĕпе, е тиркевлĕ куçпа пăхма вĕрентĕ.

Çак курс витĕр тухнă ачасем кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен çирĕп, мал ĕмĕтлĕ те пысăк тавракурăмлă пулассине, пурнăçра этемлĕхшĕн усăллă çынсем пулса ӳсессе шанас килет.

Курсăн вĕрентӳпе тематика планĕ.

| | Тема | Мĕнле ĕçсем пурнăçламал ла | Миçе сехет | Хăнăхусем |
|---|---|---|---|---|
| 1. | «Эпир – сывă пурнăç йĕркишĕн». (Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров йышăннă ятарлă Указ ) | калаçу сӳтсе явни | 1 | Таврвкурăма аталанта-расси. |
| 2. | «Ӳркев ӳкерет - ĕçченлĕх çĕклет». ( Çемье династийĕсен историйĕ ) | анкетировани калаçу | 1 | Калаçу чĕл-хине аталан-тарасси. |
| 3. | «Ырри усала çĕнтеретех». Улька Элмен. «Кая юлнă ӳкĕнӳ». | 1) калаçу 2) дискусси | 1 | Кирлĕ чух критика пама пĕлесси. |
| 4. | «Чыс, тивĕç, сипет этеме кӳрет тивлет». - Л. Сачкова. «Чĕкеçĕм,Чĕкеç...». | диспут сценка сценари çыр. | 1 | Хăв шухăшна çирĕплетесси |
| 5. | «Ватта сума сăвакан – хăй те сумлă пулакан». - К.Петров. «Кукамай». | калав çырни пĕтĕмлетӳ | 1 | Çыру чĕлхи-не илемле-тесси. |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | - «Пыл тутиллĕ шурă çăкăр». | | | |
| 6. | «Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ĕçĕпе».<br>- Г.Н.Волков академик «Этнопедагогика»<br>- Л.П.Кураков академик «Пурнăç иккĕ килмест». | текстпа ĕç-лесси<br>2) конспект | 1 | Кирлĕ вырăн-сене çырса илме вĕре-несси. |
| 7. | «Тăван Çĕр-шыв сывă пулсан тăван йăву та пулĕ сан».<br>- И.Пахомов. «Ман пурнăç çак килтен пуçланнă».<br>- Н. Адер. «Ман тĕнче çак килтен пуçланать». | тĕрленчĕк ( е сăвă ) çырасси ӳкерчĕк альбом тă-васси | 1 | Пултарулăха малалла туптасси. |
| 8. | «Юлташсăр çын – тымарсăр йывăç».<br>- И.Лисаев. «Тивĕç».<br>- Н.Симунов. «Малтанхи çăлтăрсем». | тест<br>вăйă<br>сценари çы-расси | 1 | |
| 9. | «Укçапала эрехех çынна ăсран кăларать».<br>(Хаçат-журнал страницисем тăрăх). | ӳкерчĕк (карикатура) хаçат-журнал материалĕ папка брошюра бюллетень | 1 | |
| 10. | «Пурнăçри тĕп кĕнеке» (Библи ). | 1) конспект | 1 | |

Элективлă курс содержанийĕ.

